К С(Чув)
К 42
ч-36096

# Кибеч



# хĕç тумалли хурçă

Национальная библиотека ЧР
4-036096

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

К С(Чув)
К 42

**Анатолий КИБЕЧ**

# ХЁҪ ТУМАЛЛИ ХУРҪӐ

*Юрӑсемпе прозӑлла сӑвӑсем*

Шупашкар – 1997

Кибеч юрӑ тӗнчине ҫӗнӗ юхӑм илсе килчӗ. Халӑха пурнӑҫ философине лайӑх уҫса паракан тарӑн шухӑшлӑ юрӑсем чылай парнелерӗ. Тавах ӑна. Ӑсталӑх вучахӗ ун ан сӳнтӗр, паянхи пекех йӑлкӑшса тӑтӑр, пире ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ юрӑсемпе савӑнтартӑр.

Редактор

Ч-36096
ПРОВЕРЕНО 2010
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ



# *ТЕЛЕЙ АЛĂ ÇУПСА ТĂНĂ ЧУХ ЮРЛАМА, ТАШЛАМА ПИТ АВАН*

# ШУРӐ ШУПАШКАР

(Мухтав юрри)

Кĕвви *Г. Максимовăн*

1. Несĕлсем савса ят панă,
Шупашкарăмăр, сана.
Пурнăçра ялан упранă
Сан ятна та сан чысна.

Шурă, шурă Шупашкарăм
Шурă шупăр тăхăнсан,
Эх, илемлĕ эс, хуламăр,
Хамăр ырă пулнăран.

2. Акăш евĕр курăнатăн
Анлă Атăл хĕрринче,
Çирĕп шанчăк çурататăн
Ĕçлĕ халăх чĕринче.

Шурă, шурă Шупашкарăм
Шурă шупăр тăхăнсан,
Эх, сăпайлă эс, хуламăр,
Хамăр сапăр пулнăран.

3. Тăвалла пулсан та харсăр
Утмалла сан малалла.
Ут, хуламăр, ывăнмасăр –
Улăп йăхĕ санпала.

Шурă, шурă Шупашкарăм
Шурă шупăр тăхăнсан,
Эх, мăнаçлă эс, хуламăр,
Хамăр сумлă пулнăран.
Шупашкар! Шупашкар!

## ЁМĔР САККИ САРЛАКА

Кĕвви *Ю. Григорьевăн*

Ёмĕр сакки сарлака, тетпĕр эпĕр хăш чухне,
Сакки чăн та сарлака, анчах ĕмĕрĕ кĕске.
Сакки чăн та сарлака, анчах ĕмĕрĕ кĕске.
Мĕнле пурăнмаллине, пурнăç тути-масине
Хĕрĕх урлă каççан тин ав пуçлатпăр чухлама.
А-а-а . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .
Сакки чăн та сарлака, анчах ĕмĕрĕ кĕске. *2 хут*

Малалла пăхса илетпĕр, çулсем нумай та юлман.
Çавăн чухне вара тин çамрăклăха тепĕр хут
Кăшт тишкерсе тухатпăр. Çамрăклăха тепĕр хут,
Мĕнле пурăнмаллине, пурнăç тути-масине
Çавăн чухне вара тин кăшт тишкерсе тухатпăр.
А-а-а . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .
Сакки чăн та сарлака, анчах ĕмĕрĕ кĕске. *2 хут*

Çеçпĕлĕмĕр çулĕнче хамăр ача шутĕнче
Сиккелесе çӳренишĕн ӳпкелешсе илетпĕр.
Çеçпĕлĕмĕр çулĕнче хамăр ача шутĕнче.
Куçа уçмаллаччĕ ман, пурнăç тути-масине,
Пурнăç тути-масине, мĕнле пурăнмаллине... *2 хут*

Ёмĕр сакки сарлака, тетпĕр эпĕр хăш чухне,
Сакки чăн та сарлака, анчах ĕмĕрĕ кĕске.
А-а-а . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .
Сакки чăн та сарлака, анчах ĕмĕрĕ кĕске.
Ёмĕр сакки сарлака, тетпĕр эпĕр хăш чухне,
Сакки чăн та сарлака, анчах ĕмĕрĕ кĕске. *2 хут*

# ТЕЛЕЙ, ТЕЛЕЙ

Кĕвви *А. Никитинăн*

1. Телей, телей, теесçĕ,
Телей, телей, теесçĕ.
Телей мĕнле пулать-ши,
Кам каласа парать-ши.

*Хушса юрламалли:*
Ытарайми ыр çынсем,
Куçăм тулли тăвансем,
Эсир телейлĕ пулсан
Эп те пулăп телейлĕ.
Телей, Телей! Мĕн вăл?
Телей тени мĕн вăл?

2. Ыйтрăм эпĕ аннерен,
Куççуль витĕр каларĕ –
Телей пайланă чухне
Кая юлтăм çав, терĕ.

3. Ыйтрăм эпĕ аттерен,
Пăшăрханса каларĕ –
Телей пайланă чухне
Килте пулман çав, терĕ.

*Хушса юрламалли.*

4. Тен, ахăртнех, телее
Хамăр тупма пĕлмелле.
Пĕрне-пĕри пулăшса,
Йывăр чухне ал парса.

*Хушса юрламалли.*

# ПУРНĂÇ ÇУЛĔ ТАКĂР МАР

Кĕвви *Ю. Жуковăн*

1. Кашни çынах çĕр çинче
Телей курма çуралать.
Анчах пурнăç аллинче
Шăпи урăхла вылять.
Хам телейĕме курсан,
Выртса макăрас килет.
Сирĕн çине, ай, пăхсан.
Каллех шанчăк илĕртет.

*Хушса юрламалли:*

Аттe-анне пиллесе панă телейпе
Пĕлеймерĕм, тен, утма пурнăç çулĕпе.

2. Пĕччен пурнăç çăмăл мар,
Тунсăх каймасть ман çумран.
Сивĕтмешкĕн кирлĕ мар
Çывăх çынна хамăртан.
Атте ăс-тăн панă чух,
Итлемерĕм сăмахне,
Аннепе калаçнă чух,
Мĕн-ма хуçрăм кăмăлне?

*Хушса юрламалли.*

3. Пурнăç çулĕ такăр мар –
Нумай тӳсрĕм нушине.
Пирĕн ĕмĕр иккĕ мар –
Упраймастпăр пĕр-пĕрне.
Çула тухăттăм тепре,
Утăттăм халь урăхла.
Сукмакăма тӳрлетме
Манăн вăй-хал тупмаллах.

*Хушса юрламалли.*

# ТӐВАН ЯЛӐМ

Кӗвви *П. Федоровӑн*

1. Куҫ умне тухса тӑраҫҫӗ
Пуҫне уснӑ йӑмрасем.
Яланах чуна туртаҫҫӗ
Вӑй вылянӑ вырӑнсем.

*Хушса юрламалли:*
Тӑван ялӑм,
Савнӑ тӑван ялӑм,
Эсӗ мана каҫарсам,
Эсӗ мана каҫарсам.

2. Мӗншӗн-ши ытла васкатпӑр
Санпала сывпуллашма.
Мӗншӗн-ши часах манатпӑр
Сана тивӗҫ хак пама?

*Хушса юрламалли.*

3. Хӑш чухне хыт мухтанатпӑр
Ялтан тухса кайнипе.
Каярах тин асӑрхатпӑр
Савнӑ ял пит хаклине.

*Хушса юрламалли.*

4. Эх, ҫуралнӑ савнӑ ялӑм,
Мана эсӗ вӑй парсам:
Сан умра ман пысӑк парӑм,–
Каҫарсамччӗ, каҫарсам.

*Хушса юрламалли.*

# КĂВАК КĂВАКАРЧĂН

Кĕвви *А. Никитинăн*

1. Кăвак кăвакарчăн та эп пулам-и,
Крыльца умне ларса та юрлам-и,
Крыльца умне ларса та юрлам-и.

*Хушса юрламалли:*
Ай-хай, пырса кур,
Ай-хай, çитсе кур.
Çамрăк ĕмĕр пурпĕр иртет,
Выляса-кулса юл.

2. Сирĕн савнă тăван та эп пулам-и,
Кĕреке умне тăрса та юрлам-и,
Кĕреке умне тăрса та юрлам-и.

*Хушса юрламалли.*

3. Кăмăлăма уçса та, ай, парам-и,
Калас тенĕ сăмаха калам-и,
Калас тенĕ сăмаха калам-и.

*Хушса юрламалли.*

4. Инçе çула кĕске те, ай, тусамăр,
Пирĕн пата çитсе те курсамăр,
Пирĕн пата çитсе те курсамăр.

*Хушса юрламалли.*

Асăрхаттару: Сăввине халăх юррине тĕпе хурса çырнă.

# ПИРЁН МЁНШЁН КУЛЯНАС?

Кёвви *Ю. Жуковăн*

1. Кăнтăрла сив çил вёрсессĕн,
Каçĕ сулхăнрах пулать.
Чĕрене сив тăм тивсессĕн,
Кăмăл тунсăха путать.

Пурри пуршăн кулянать,
Çукки çукшăн кулянать.
Пирĕн мĕншĕн кулянас, –
Хамăр пуршăн савăнас.

2. Темчул тăрăшса утсан та,
Пурнăç пурпĕр тикĕс мар.
Юратма тупа тусан та,
Чашăк-тирĕк сассăр мар.

Пурри пуршăн кулянать,
Çукки çукшăн кулянать,
Пирĕн мĕншĕн кулянас, –
Сывлăх пуршăн савăнас.

3. Йывăр пурнăç пусарсан та,
Усас марччĕ пуçсене,
Шăкăр-макăрĕ пулсан та,
Каçарасчĕ пĕр-пĕрне.

Пурри пуршăн кулянать,
Çукки çукшăн кулянать.
Пирĕн мĕншĕн кулянас, –
Шанчăк пуршăн савăнас.

# ЧЕЧНЯРИ ЧĂВАШ КАЧЧИ

Кĕвви *Ю. Кудаковăн*

Ырлăхпа ÿссе вăй илнĕ
Сăн-питрен те пит япшар.
Çамрăк чух кашни илемлĕ,
Юрату та юнашар.
Чечняри чăваш каччи,
Мĕн çухатнă эс унта?
Мĕн шырарăн,
Мĕскер турăн
Тăхлан çунă вырăнта?

Кам чысне эс хÿтĕлерĕн,
Çамрăклах вăрçа кĕрсе.
Камшăн çапăçса çÿрерĕн,
Чечняна сиен кÿрсе.
Чечняри чăваш каччи,
Мĕн çухатнă эс унта?
Мĕн шырарăн,
Мĕскер турăн
Çулăм хыпнă вырăнта?

Сумсăр вăрçă юнлă пулчĕ,
Ылханни те çитрĕ пуль.
Тупăк хыççăн тупăк килчĕ, –
Пит тăварлă-çке куççуль.
Чечняри чăваш каччи,
Мĕн çухатнă эс унта?
Мĕн шырарăн,
Мĕскер турăн
Пурнăç çуннă вырăнта?

# УЯР, УЯР

Кĕвви *Ю. Григорьевăн*

Сар хĕвел тĕнчене хĕм сапсан
Йăлкăшса çуралать çĕнĕ кун.
Çĕр çинчи илеме тĕл пулсан
Ырлăхпа савăнать кашни кун.

*Хушса юрламалли:*
Уяр, уяр уялла,
Çумăр пулсан каялла.
Уярпала туслашса,
Уяр çула тухмалла.
Уяр, уяр уялла,
Çумăр пулсан ялалла.
Уярпала туслашса
Тулăх пурнăç тумалла.

Телей алă çупса тăнă чух
Юрлама, ташлама пит аван.
Пурнăç çулĕ чăнах такăр чух
Туссене тав тума эс ан ман.
Сар хĕвел ăшшине сапнă чух
Йăлкăшса çуралать çĕнĕ кун.
Çĕр çинчи илеме тĕл пулсан
Ырлăхпа савăнать кашни чун.
*Хушса юрламалли.*

# ÇУМРА ТĂВАН ПУЛМАРĔ

Кĕвви *Ю. Жуковăн*

1. Инçе çула, ай, кĕскетсе,
Атте ялне эп çитрĕм.
Тăвансене курас тесе
Пичче килне эп кĕтĕм.
Ача чухне аппа мана
Чĕрçи çине лартатчĕ.
Кичем чухне пичче мана
Пуçран шăлса лăпкатчĕ.

2. Качча кайсан манчĕç пулас,
Аппа çыру çырмарĕ.
Тăлăх турат пултăм пулас,
Пичче хыпар ямарĕ.
Ăру ятне, ай, çĕклеме
Турри телей памарĕ.
Йывăр чухне хута кĕме
Çумра тăван пулмарĕ.

3. Йăмăк начар, ай, теейсе
Пуçа усса ан ларăр.
Чĕнмесĕрех килчĕ тесе
Мана ытла ан ятлăр.
Ăш çуннине чарас тесе
Юр пуçласа юрларăм.
Мана тăван, ай, теейсе
Хăвăр çумма лартсамăр.

# АМАЗОНКА

Кĕвви *О. Семеновăн*

Çил çунатлă юланутçă
Сиксе тухрĕ ман ума,
Ухăпа персе амантрĕ,
Суранлатрĕ чунăма,
Чĕртсе ячĕ туйăма.

*Хушса юрламалли:*
Капăр тумлă амазонка,
Мĕншĕн сана тĕл пултăм.
Ама çыннăм – амазонка,
Канлĕ канăçа çухатрăм.

Тĕл пулнишĕн шикленетĕп,
Тыткăнри пекех туяп.
Анчах пурпĕр хĕпĕртетĕп,
Хăрасан та чуптăватăп,
Аманнишĕн савăнатăп.

*Хушса юрламалли.*

Хăварсамччĕ, хăварсамччĕ,
Мана эсĕ хăв çумра.
Юрату тарçи пуласчĕ,
Киленесчĕ ытамра.

*Хушса юрламалли.*

# ЧИ ХАКЛИ

Кĕвви *И. Аршиновăн*
*А. Никитин* та юрра хывнă

1. Сывă чух чĕремĕре тăрăшмастпăр упрама,
Сывлăх чи хакли çинчен пĕлейместпĕр шутлама.
Куçа уçнă-уçманах тытăнатпăр васкама:
Малалла та малалла – вăхăт çук пек тăхтама.
М ... м ... м ...
Чĕрем, тархаслап сана – ан пăрах мана.

2. Кĕвĕç чунсен çăхавне, сив сăмахпа хăртнине
Йăлт илет вăл хăй çине, сыхласа чун хавалне.
Ырлăхра та хурлăхра шеллемест хăй ăшшине,
Канăçа манса тапать – пĕлме çук ун мехелне.
А ... а ... а ...
Чĕрем, тархаслап сана – ан пăрах мана.

3. Лавне йывăр тиесен, çулĕ тумхахли лексен
Такăнма пуçлать чĕре, итлеми пулать пире,
Ытларах та ытларах хуçине пăхăнтарать,
Хуçине пăхăнтарать, хăй тарçи туса хурать,
Хуçине пăхăнтарать – хăй тарçи туса хурать.
Чĕрем, тархаслап сана – ан пăрах мана.

# АЧА ÇУРТĔНЧЕ

Кĕвви *Ю. Кудаковăн*

1. Ача çуртĕнче,
Тĕттĕм кĕтесре,
Çурта умĕнче
Ик пĕчĕк мĕлке –
Йĕкĕреш чунсем,
Пĕртăван çынсем.
Амăш сăн-питне
Шыраканскерсем.

2. Мĕнлерех-ши эс,
Кам пекрех-ши эс –
Пĕлекен те çук,
Калакан та çук.
Амăш кĕлетки
Куç умне тухмасть,
Куççуль ўкнипе
Çурта çунаймасть.

3. Эх, анне, анне,
Ăçталла çулу,
Мĕншĕн кунталла
Сан утмасть уру.
Эс вĕçсе килсем
Çывăрма выртсан,
Ырă тĕлĕкре
Хăвна кăтартсам.

4. Ача çуртĕнче,
Тĕттĕм кĕтесре,
Çурта умĕнче
Пĕртăван чунсем...
Амăш кĕлетки
Куç умне тухмасть,
Куççуль ўкнипе
Çурта çунаймасть.

# ТĂВАН ХУЛАМĂР

Кĕвви *Г. Максимовăн*

Капмар курнать тăван хуламăр
Хăватлă Атăл хĕрринче.
Ăна эпир çĕкленĕ хамăр
Тивлетлĕ пурнăç ниминче.
Сенкерленсе килсессĕн шуçăм
Сăну вылять хумсем çинче.
Илсе те илĕнмест ик куçăм
Ирхи илем ытамĕнчен.
Илсе те илĕнмест ик куçăм
Çĕн Шупашкарăм, сан çинчен.

Сума суса туссем çитсессĕн
Чăваш ал пачĕ вĕсене.
Сар кун çĕршывĕнчи кĕслеçĕн
Юрлар тăванлăх юррине.
Сенкерленсе килсессĕн шуçăм
Сăну вылять хумсем çинче.
Илсе те илĕнмест ик куçăм
Хаваслă кун ытамĕнчен.
Илсе те илĕнмест ик куçăм
Çĕн Шупашкарăм, сан çинчен.

Юратăвне кунта тĕл пулнă
Вĕри чĕреллĕ çамрăксем.
Çĕн хулара çĕн пурнăç тунă
Мухтавлă халăх ачисем.
Сенкерленсе килсессĕн шуçăм
Сăну вылять хумсем çинче.
Илсе те илĕнмест ик куçăм
Тăван хула илемĕнчен.
Илсе те илĕнмест ик куçăм
Çĕн Шупашкарăм, сан çинчен.

Ч-36096
Национальная библиотека
Чувашской
Республики

2. Заказ № 1117.

# ЭПĔ – РОЗА ЧЕЧЕКĔ

Кĕвви *А. Никитинăн*

1. Эсĕ хăв патна чĕнсен,
Сăмах патăм тĕл пулма.
Анчах шухăшна пĕлсен,
Сивĕ çапрĕ чунăма.

*Хушса юрламалли:*

Туйăмсăрах чуп тумашкăн,
Шыв ĕçмелли курка мар эп.
Ална ирĕке ямашкăн,
Çул хĕрринчи чечек мар эп.
А-а-а ...

2. Мĕншĕн шухă тытрăн-ши
Манпала эсĕ хăвна?!
Мĕншĕн пит хĕрхентĕн-ши
Маншăн ырă кăмăлна?!

*Хушса юрламалли.*

3. Асра тыт эс ĕмĕрех:
Йĕпсĕр роза чечек çук.
Юратусăр пурпĕрех
Эпĕ санăн пулас çук.

*Хушса юрламалли.*

4. Эпĕ – роза чечекĕ,
Эпĕ – йĕплĕ чечек.
Чăн-чăн юратусăр
Эпĕ сан пулас çук.

# КЁСМЕНСЁР КИМЁ

Кёвви *О. Семеновăн*

1. Эп хамшăн хăрамастăп,
Эп курнă пурăнса.
Ачам çинчен шутлатăп
Шăпишĕн хăраса.

*Хушса юрламалли:*
Кёсменсёр кимĕ евĕр
Ишетĕп пурнăçра.
Ăçта илсе çитерĕ
Çак ахăр самана.

2. Пире хĕссе çитерчĕ
Еткерлĕх чухăнни.
Мĕскер ăна пĕтерчĕ,
Ăçта эп вăй хуни?

*Хушса юрламалли.*

3. Ытла вылять-çке шанăç,
Таканари шыв пек.
Ăçта эс, чунри канăç,
Ăçта ăшри тӳлек?

*Хушса юрламалли.*

4. Шăвать халь пурнăç тирĕс,
Ун пур-ши тилхепи?
Мĕн-ма-ши кăштах тикĕс
Кусмасть ун урапи?

*Хушса юрламалли.*

# ЮРАТУ ВАЛЬСĔ

Кĕвви *А. Асламасăн*

1. Юрă пуçлар-и,
Ташша тухар-и,
Çывăх туссем, тантăшсем.
Çамрăклăх харсăр,
Çамрăклăх паттăр,
Çутă ун халь ĕмĕтсем.

Пирĕн тавра халь
Пурте çаврăнаççĕ,
Иккĕн – тĕнче варринче.
Çамрăксен вальсĕ,
Юрату вальсĕ,
Пирĕн чуна çĕкле.

2. Куçран пăхсамччĕ,
Кăшт калаçсамччĕ –
Сан туйăмна эп сисеп.
Вăхăт час иртĕ –
Ташă вĕçленĕ,
Сан сăмахна эп кĕтеп.

Пирĕн тавра халь
Пурте çаврăнаççĕ,
Иккĕн – тĕнче варринче.
Çамрăксен вальсĕ,
Юрату вальсĕ,
Пирĕн чуна çĕкле.

# АФГАН ЮРРИ

Кĕвви *Ю. Григорьевăн*

1. Нимĕн шарламарĕç ăçта вĕçнине,
Пĕлĕтрен пăрахрĕç ют çĕршыв çине.
Юлташпа çӳрерĕм вут-хĕм сирпĕтсе,
Ирĕк парас терĕм Афган халăхне.

*Хушса юрламалли:*
Юлчĕ юнлă Афганистан,
Тен, ылханса, тен, макăрса.
Афганистан – суя тăшман,
Унта кайма анне хушман.
Афганистан – чĕре çунни,
Яш-кĕрĕме суранлатни.

2. Çамрăклах эп куртăм вăрçă мĕнлине,
Сахал мар çухатрăм çывăх туссене.
Ют çĕрте çӳрерĕм паттăр шутĕнче,
Темшĕн пĕлеймерĕм мĕншĕн вăрçнине.

*Хушса юрламалли.*

3. Тархасшăн ан васкăр мана сивлеме:
Кайман унта эпĕ хам ирĕкпеле.
Тархасшăн ан калăр эп яман тесе,
Тархасшăн, тархасшăн, тархасшăн.

*Хушса юрламалли.*

# ЮРАТУСĂР ТЕЛЕЙ ÇУК

Кĕвви *Ю. Кудаковăн*

1. Чăн юрату мĕнлине
Пур-ши лайăх пĕлекен,
Халсăр чĕрем кăварне
Кăшт та пулин чĕртекен.
Çумра çывăх çын çукки
Кашни кунах сисĕнет.
Юратусăр пĕрлешни
Савăнăç çулне пӳлет.

2. Хама пĕччен туйнипе
Йăш пуçларĕ вăркама.
Юратнă çын çуккипе
Сулхăн çапрĕ чунăма.
Юратупа çăвăнса
Çуралтăрччĕ кашни çын.
Юратупа ăшăнса
Пурăнтăрччĕ кашни кун.

3. Юратусăр пĕрлешсе
Улталар мар пĕр-пĕрне,
Юратусăр пурăнса
Кĕскетер мар ĕмĕре.
Юратусăр телей çук,
Унсăр тунсăх пурăнма.
Турă çырни çумра чух
Ан пăрахăр юратма.

# ÇИТМĔЛ ИКĔ СЕХЕТ

Кĕвви *А. Никитинăн*

1. Хура пĕлĕт карса илчĕ тухăçа,
Шиклĕ шухăш пăчăртарĕ пуçăма,
Йывăр сывлăш пӳлсе лартрĕ кăкăра,
Мĕлкесем чупа пуçларĕç ман умра.

*Хушса юрламалли:*
Çитмĕл икĕ сехет, çитмĕл икĕ сехет,
Пăрлă çумăр килет аякран.
Çитмĕл икĕ сехет, çитмĕл икĕ сехет,
Кар тăмашкăн чĕнет вăл паян.
Çитмĕл икĕ сехет, çитмĕл икĕ сехет,
Сивĕ çил вĕçтерет тӳпере.
Çитмĕл икĕ сехет, çитмĕл икĕ сехет,
Сыхлăха вĕрентет вăл пире.

2. Пуç çĕклерĕç ав, кăтартрĕç хăйсене,
Уçса пачĕç умри ирсĕр тĕллевне.
Ура хучĕç ирĕк пурнăç юхăмне,
Чарас терĕç ман Çĕршывăн утăмне.

*Хушса юрламалли.*

3. Шăпи тулчĕ икĕ питлĕ пуçлăхсен,
Ĕç тухмарĕ хура юнлă хурахсен.
Çук, пĕтмен-ха вĕри чунлă паттăрсем,
Шанчăк пур-ха, пурнăçланĕç ĕмĕтсем.

*Хушса юрламалли.*

Асăрхаттару: çак юрра 1991 çулхи çурла уйăхĕн 22-мĕш кунĕнче çырнă.

# ВАТЛĂХРА ПĔРЛЕ ПУЛАСЧĔ

Кĕвви *Ю. Григорьевăн*

1. Ман пата салам яраççĕ
Хам ӳстернĕ ачамсем,
Çепĕç кĕвĕ шăратаççĕ
Шупашкарти юрăççем.
Кантăкран çил шаккасан та
Чĕрем хускалса илет.
Эсир киле килмесен те
Чупса тухассăм килет.

*Хушса юрламалли:*
Тунсăх шухăш, тунсăх шухăш,
Хăй ытамĕнчен ямасть.
Тунсăх тĕлĕк, тунсăх тĕлĕк,
Канлĕ çывăрма памасть.

2. Хĕвелпех танлаштараççĕ
Юрăсенче амăшне.
Анчах темшĕн васкамаççĕ
Çул тытмашкăн кил енне.
Хапхаран çил шаккасан та
Чĕрем хускалса илет.
Эсир киле килмесен те
Чупса тухассăм килет.

*Хушса юрламалли.*

Пурăнса кăштах курасчĕ
Сирĕнпе пĕр çемьере.
Ватлăхра пĕрле пуласчĕ,
Кăшт тăсасчĕ ĕмĕре.
Урамри çынна курсан та
Чĕрем хускалса илет.
Эсир киле килмесен те
Чупса тухассăм килет.

*Хушса юрламалли.*

# МАН ÇĂЛТĂРĂМ

Кĕвви *А. Никитинăн*

1. Манăн çăлтăр тӳпере,
Çути унăн чĕрере,
Çиçет кунĕн-çĕрĕпе
Сирсе тĕксĕм тĕтрене.
Çăлтăрăм, эс ан сӳнсем!
Çут тĕнчери илемпе
Тăраниччен килленме
Мана эсĕ пулăшсам.

2. Пĕччен маршăн савăнап –
Эсĕ çиçнĕ вăхăтра
Хама вăйлăрах туяп,
Санпа пĕрлех эп çунап.
Çăлтăрăм, эс ан сӳнсем!
Умри çула çутатса
Телей патне çывхарма
Мана эсĕ пулăшсам.

3. Турри çырнă çăлтăра
Кашни васкар тĕл пулма.
Пĕрле ялкăшса çунар,
Тăвансене ăшăтар.
Çăлтăрăм, эс ан сӳнсем!
Хам чысăма упраса
Атте ятне çĕклеме
Мана эсĕ пулăшсам.

# ӲКĔНӲ

Кĕвви *Ю. Григорьевăн*

1. Пурнăç çулĕ çине эп, ай, пăхрăм,
Хам йĕре палласа илеймерĕм.
Тăвас тенĕ ĕçе тăваймарăм,
Çитес тенĕ çĕре çитеймерĕм.

2. Çĕр-анне сĕткенне сыхлаймарăм,
Атăла пӳлнĕ чух чараймарăм,
Таса сывлăш вăйне упраймарăм,
Тулăх пурнăç тума пĕлеймерĕм.

3. Çут пуласлăх пирки кăшкăрашрăм,
Тăван халăх чапне çĕклеймерĕм.
Ачампа кар тăрса юрлаймарăм,
Чĕлхеме те ăна пиллеймерĕм.
Тăвас тенĕ ĕçе тăваймарăм,
Çитес тенĕ çĕре çитеймерĕм.

4. Айăплăн туятăп сирĕн умăрта,
Каçару ыйтатăп çамрăк тусăмран.
Айăпăм ман пысăк сирĕн умăрта,
Каçару ыйтатăп çамрăк ăруран.
Айăплăн туятăп сирĕн умăрта,
Каçару ыйтатăп çамрăк ăруран.

# САВӐНСА ПУРНАС КИЛЕТ

Кĕвви *И. Андреевӑн*

Маншӑн халь кашни кун ҫуркунне
Ма тесен, эп тупрӑм савнине.
Манас ҫук ун ҫепĕҫ сассине,
Сансӑр пурнӑҫ ҫуккӑ тенине.

*Хушса юрламалли:*

Юратас та килет,
Юратни пулас килет.
Юратупа ҫӑвӑнса,
Савӑнса пурнас килет.

Маншӑн халь кашни кун ҫуркунне
Ма тесен, кĕтетĕп савнине.
Чун сисет телейĕм пуррине,
Ик чĕре пĕрле пулмаллине.

*Хушса юрламалли.*

Маншӑн халь кашни кун ҫуркунне,
Ма тесен, шанатӑп савнине.
Эп туятӑп вӑл ҫывхарнине,
Венчете чĕнме васканине.

*Хушса юрламалли.*

# САР ХЁВЕЛ ШЕВЛИ

Кĕвви *В. Александровăн*

Сар хĕвел шевли
Вылять-çке вăййине,
Кашни çын валли
Çутатать-çке çутине.

Пĕрле ӳснĕ чух
Выляр-ха вăййине,
Савни çумра чух
Хĕлле те çуркунне.

Сар хĕвел шевли
Тĕрлет-çке тĕррине,
Кашни çын валли
Сапать-çке илемне.

Пĕрле ӳснĕ чух
Тĕрлер-ха тĕррине,
Савни çумра чух
Хĕлле те çуркунне.

Сар хĕвел шевли
Ташлать-çке ташшине,
Кашни çын валли
Уçать-çке кăмăлне.

Пĕрле ӳснĕ чух
Ташлар-ха ташшине,
Савни çумра чух
Хĕлле те çуркунне.

Сар хĕвел шевли
Юрлать-çке юррине,

Кашни çын валли
Сарать-çке çеммине.

Пёрле ўсне чух
Юрлар-ха юррине,
Савни çумра чух
Хёлле те çуркунне.

# КУРИЧЧЕН КУРАС КИЛЕТ

Кĕвви *А. Никитинăн*

1. Санăн сăну чĕртсе ячĕ туйăма,
Лекрĕ ĕнтĕ манăн чĕрем тыткăна.
Ăсăм хушать çак туйăмран пăрăнма,
Куçăмваскать каллех сана шырама.

*Хушса юрламалли:*
Кай, кай, кай, ман умран эс кай,
Ан çунтар тек ман чуна.
Кай, кай, кай, пит инçе ан кай,
Курас килет ман сана.

2. Курсан темшĕн хам туйăмран вăтанап,
Эсĕ ытла çамрăккишĕн кулянап.
Мĕнле çулпа çывхарам-ши сан патна,
Мĕн каласа çавăрам-ши кăмăлна.

*Хушса юрламалли.*

3. Мĕншĕн-ши эс кая юлтăн çуралма,
Мĕншĕн эп те пит васкарăм кун курма.
Мĕншĕн çук-ши хам çулсене чакарма,
Санпа пĕрле пĕр ÿсĕмри çын пулма.

*Хушса юрламалли.*

4. Çапла пулать тепĕр чухне пурнăçра,
Кĕтмен çĕртен сиксе тухать куляну.
Ăшăм-чунăм асапланать тыткăнра,
Хыпса илсен кая юлнă юрату.

*Хушса юрламалли.*

# ТУНСĂХ ЮРĂ

Кĕвви *А. Никитинăн*

1. Çамрăк чух пурнаттăм ĕмĕтпе,
Тĕл пулма шутлаттăм телейпе.
Çук, пĕлмен çав пурнăç мĕнлине,
Ун тути пĕр пек пулманнине.

*Хушса юрламалли:*
Темшĕн сивĕ, темшĕн пушă
Халĕ ăшăмра,
Тăлăх чунăм, тăлăх чунăм,
Вырăн эс шыра.

2. Камшăн пулчĕ пурнăç пыл тути,
Маншăн пулчĕ йӳçĕ армути.
Çук, пулмарĕ маншăн юрату –
Мĕн тери çак пысăк çухату.

*Хушса юрламалли.*

3. Кайăк çук халь шаннă йăвара,
Çăлтăр çулĕ халь выртмасть умра.
Çук, çумарĕ ырлăх пуç çине,
Хурлăх пӳлчĕ ман телей çулне.

*Хушса юрламалли.*

4. Çамрăк чух пурнаттăм ĕмĕтпе,
Тĕл пулма шутлаттăм телейпе.
Пурăнса ирттертĕм ĕмĕтпе,
Темшĕн тĕл пулмарăм телейпе.

*Хушса юрламалли.*

# ТУРТСА ИЛНЁ ЮРАТУ

(Халăх юрри)

Сăввине *А. Кибеч* йěркеленě

Тăхăнтăм, тумлантăм, тухрăм урама,
Чун юратнă савнипе курса калаçма.
Ман аппа та тухрě, темшěн васкаса,
Кайса килер терě Атăл хěррине.
Çитсе кăна тăтăм Атăл хěррине,
Аппа тěксе ячě Атăл варрине.

– Ах, аппам, аппамçăм, кăларсам мана,
Атте пехилленě тур лаши сана.
– Ах, йăмăкçăм, йăмăк, кăлараймăп çав,
Атте пехиллени кирлě мар мана.

– Ах, аппам, аппамçăм, пулăшсам мана,
Анне пехилленě шур тутри сана.
– Ах, йăмăкçăм, йăмăк, пулăшаймăп çав,
Анне пехиллени кирлě мар мана.

– Ах, аппам, аппамçăм, эс çăлсам мана,
Сар çурта пек сар савнине пехиллеп сана.
– Ах, йăмăкçăм, йăмăк, ма халь тин калан,
Сар çурта пек яштак пěвӳ Атăла путсан?..

Çапла тěксе ячě аппăш(ě) йăмăкне,
Çапла туртса илчě ун юратăвне.
Сар çурта пек каччă – аппăш(ě) çумěнче.

# ТУЙ ЮРРИ

И вунӑ пус, вунӑ пус та,
И вунӑ пус, вунӑ пус.
Вунӑ пуса хӗр илетпӗр,
Вунӑ пуслӑх хӗр пур-ши?
Айа-йук, майа-йук,
Вунӑ пуслӑх хӗр пур-ши?

И ҫирӗм пус, ҫирӗм пус та,
И ҫирӗм пус, ҫирӗм пус.
Ҫирӗм пуса хӗр илетпӗр,
Ҫийӗ-тавраш епле-ши?
Айа-йук, майа-йук,
Ҫийӗ-пуҫӗ епле-ши?

И вӑтӑр пус, вӑтӑр пус та,
И вӑтӑр пус, вӑтӑр пус.
Вӑтӑр пуса хӗр илетпӗр,
Вырӑн-тавраш епле-ши?
Каҫран выртса ир тӑриччен
Вӗче шӑтмалла мар-ши?
Айа-йук, майа-йук,
Вӗче шӑтмалла мар-ши?

И хӗрӗх пус, хӗрӗх пус та,
И хӗрӗх пус, хӗрӗх пус.
Хӗрӗх пуса хӗр илетпӗр
Хӗр тавраше епле-ши?
Каҫран выртса ир тӑрсассӑн
Каччӑ савӑнмалла-ши?
Айа-йук, майа-йук,
Каччӑ савӑнмалла-ши?

И аллӑ пус, аллӑ пус та,
И аллӑ пус, аллӑ пус.

Аллӑ пуса хӗр илетпӗр,
Алли-ури епле-ши?
К(ӑ)мака умӗнче ӗҫленӗ чух
Хуняма савӑнмалла-ши?
Айа-йук, майа-йук,
Хуняма савӑнмалла-ши?

И утмӑл пус, утмӑл пус та,
И утмӑл пус, утмӑл пус.
Утмӑл пуса хӗр илетпӗр,
Утти-тӑрри епле-ши?
Урампала пынӑ чухне
Тӑван савӑнмалла-ши?
Айа-йук, майа-йук,
Тӑван савӑнмалла-ши?

И ҫитмӗл пус, ҫитмӗл пус та,
И ҫитмӗл пус, ҫитмӗл пус.
Ҫитмӗл пуса хӗр илетпӗр,
Ҫичӗ юта юрӗ-ши?
Айа-йук, майа-йук,
Ҫичӗ юта юрӗ-ши?

И сакӑрвун пус, сакӑрвун пус та,
И сакӑрвун пус, сакӑрвун пус.
Сакӑрвун пуса хӗр илетпӗр,
Ҫӗрне саккӑр чуп тума.
Айа-йук, майа-йук,
Ҫӗрне саккӑр чуп тума.

Асӑрхаттару: Ҫак юрра К. В. Иванов ҫуралса ӳснӗ Слакпуҫӗнче 1996 ҫулта ҫырса илнӗ.

# АН ШĂТ, КУРĂК, ÇУЛ ÇИНЕ

(Халăх юрри)

Сăввине *А. Кибеч* йěркеленě

1. Ан шăт, курăк, çул çине, *(2 хут)*
Пурпěр çаран пулас çук. *(2 хут)*
Ан шухăшла çамрăк пуç,
Пурпěр ырлăх курас çук.

2. Çут těнчене çуралтăм *(2 хут)*
Телей пětсе çитнě чух. *(2 хут)*
Аттеçěме çухатрăм
Ача ваййи выляс чух.

3. Пуян ачи ÿснě чух *(2 хут)*
Çěр çурăлса мул тухать. *(2 хут)*
Тăлăх ача ÿснě чух
Çěр çурăлса йěп тухать.

4. Урам вăрăм, кěрт тарăн, *(2 хут)*
Měнле ишсе тухас-ши? *(2 хут)*
Ёмěр вăрăм, пуç çамрăк,
Měнле пурнса ирттерес?

# МАН ЮРАТУ

Кěвви *И. Андреевăн*

Тусăмçăм, савни, эс ил чĕре патне,
Маншăн юрату асамлăх тенине.
Юрату пирки пит шухă шутлакан
Çакă туйăма
Пĕлмест те хаклама.

*Хушса юрламалли:*
Ман юрату çути,
Ман юрату çути
Çутаттăр сан çулна.
Ман юрату ăшши,
Ман юрату ăшши
Пултăр саншăн кăна.

Тусăмçăм, савни, эс ил чĕре патне,
Маншăн юрату асамлăх тенине.
Юрату çине пит çăмăл пăхакан
Çакă туйăма
Пĕлмест те упрама.

*Хушса юрламалли.*

Тусăмçăм, савни, эс ил чĕре патне,
Маншăн юрату сăпайлăх тенине.
Юрату пирки вылявлă пуплекен
Çакă туйăма
Пĕлмест те хаклама.

*Хушса юрламалли.*

Тусăмçăм, савни, эс ил чĕре патне,
Маншăн юрату тасалăх тенине.
Савнă çынпала чарусăр тытакан
Чăн-чăн туйăмпа
Пĕлмест те юратма.

*Хушса юрламалли.*

# ТĔРĔК ÇАМРĂКĔСЕН ЮРРИ

Кĕвви *Ю. Григорьевăн*

Тухăçран çĕнĕ кун çывхарсан,
Саламлатпăр ăна пуç тайса.
Тĕрĕксем, пĕр-пĕрне тĕл пулсан,
Ыталатпăр чунтан савăнса.

Несĕлсен тымарне пĕлнĕçем,
Чĕресем туртăнаççĕ савса.
Тĕрĕксем, пĕр тăван çамрăксем,
Халь юрлатпăр пĕрле кар тăрса.

*Хушса юрламалли:*

Харăс утар,
Маттур каччăсем,
Паттăр пулар.
Харăс утар,
Кашкăр ачисем,
Паттăр пулар,
Яшсем – хĕрсем.
Харăс утар,
Маттур каччăсем,
Паттăр пулар,
Яшсем – хĕрсем.

Çапла хушнă пире аттесем,
Ырлăх-сывлăх сунса, пил парса.
Тĕрĕксем, вĕри юнлă туссем,
Халь ташлатпăр пĕрле ăмăртса.

*Хушса юрламалли.*

# УЛĂП ЕВĔР ÇĔКЛЕНЕР

(Чăваш наци конгресне халалласа)

Кĕвви *Г. Максимовăн*

1. Авалтан савать тăван çĕршывăм
Пархатарлă Атăл аттене.
Сахал мар вăл курнă вутпа çулăм,
Çичĕ ют килсе алхаснине, –
Чăвашсем ятне яманнине.
Улăп евĕр харсăр çĕкленсе
Малалла утар-и пĕрлешсе.
Çĕрпе Хĕвел, пире вăй пар,
Çĕнĕ куна Нар* пек сăн пар. *2 хут*

2. Тăхăр тăвăл витĕр тухнă халăх
Ирĕке юратнă яланах.
Чăваш мулĕ – туслăхпа тăванлăх,
Ылтăн-кĕмĕлрен те хаклăрах –
Пурнăç пилĕ пирĕн çапларах.
Улăп евĕр харсăр çĕкленсе
Чыслăха упрар-и пĕрлешсе.
Çĕрпе Хĕвел, пире вăй пар,
Çĕнĕ куна Нар пек сăн пар. *2 хут*

3. Чан çапса вăратрĕ çĕнĕ юхăм,
Шанчăк пур-ха, паттăрлăх пĕтмен.
Çирĕп пултăр утăм хыççăн утăм,
Тĕреклен, сăваплă Чăваш ен,
Ыр ĕçпе тĕнче шайне çĕклен.
Улăп евĕр харсăр çĕкленсе
Телее туптар-и пĕрлешсе.
Çĕрпе Хĕвел, пире вăй пар,
Çĕнĕ куна Нар пек сăн пар. *2 хут*

Асăрхаттару: Нар - чăвашсен илемлĕх турри.

# *КĔВĔЛЕМЕН ЮРĂСЕМ*

# ВИÇĔ ВĂЙПА ВИÇ ХĂВАТ

## 1. *Хĕвел*

Шурăмпуç чĕннипе çут Хĕвел хăпарсан
Канма выртнă тĕнче вăранать.
Çĕнĕ кун çĕкленсе килнине курмасан
Пурнăçран юлнă пек туйăнать.

Эпир пурте паян сар Хĕвел аллинче,
Ун ăшши кашнинех çитмелле.
Пурнăçа çĕнетсе чĕртекен айĕнче
Чыслăха упрама пĕлмелле.

Тухăçран шăранса тухакан Хĕвеле
Кĕтсе илĕр чунтан савăнса.
Вăл пире ыр сунса сапса пана шевле
Ялан тăтăр умра выляса.

## 2. *Уйăх*

Тулли питлĕ Уйăха
Тĕл пулсассăн ăнсăртран,
Хăвăрт чарăнса тăрсах
Киленетпĕр кăмăлтан.
Тимлĕнрех пăхса илсен
Асăрхатпăр хĕр сăнне,
Кĕвентеллĕ сарпике
Ик витрепе тăнине.
Уйăх, санăн ырлăхна
Манма çуккă нихăçан, –

Хурлăх тӳснĕ тăлăха
Алă патăн аякран.

Тепӗр чух тата ҫӗрле
Пӗчченех ҫула тухсан,
Ҫулҫӳревҫӗпе пӗрле
Эс те шанчӑклӑн утан.

Тунсӑхланӑ кантӑкран
Эс кӗрсессӗн тӗпеле,
Вӗҫ-хӗррисӗр уҫлӑхран
Тусӑм килчӗ темелле.

Чакса пынӑ вӑхӑтра
Манар мар ун ырлӑхне,
Ытла ҫутӑ пулманран
Хуҫар мар ун кӑмӑлне.
Уйӑх пурпӗр пирӗнпе.

### 3. *Ҫӗр-анне*

Тем те пулӗ тӗнчере,
Унта тӗрлӗ кӗнчеле.
Тем ҫунсан та тӳпере,
Чи пахи вӑл ҫӗр-анне.

Туслӑ вӑл Хӗвелпеле,
Пӗр тӑванлӑ Уйӑхпа.
Шӑп та виҫҫӗшӗ пӗрле
Вӑй пилленӗ Улӑпа.

Пирӗн Улӑп чи вӑйли,
Пирӗн Улӑп чи хитри,
Пирӗн Улӑп чи ӑсли,
Пархатарлӑ ун чӗри.

Ҫӗр-анне – этем сӑпки,
Унтан ҫуккӑ та хакли.
Хӑй ҫуратнӑ ачине
Парнелет вӑл пурлӑхне.

Çĕртен илнĕ сĕткенпе
Йывăç-курăк çĕкленет.
Çĕр тĕрленĕ илемпе
Çĕнĕ пурнăç сăн илет.

Вĕçĕ: Виçĕ тĕрлĕ виç хăват
Виç енчен килсех тăрсан,
Аслă пиллĕхлĕ çунат
Халсăр пулмĕ нихăçан.

Виççĕшне те тав туса
Ĕмĕр-ĕмĕр пуç таяр.
Виççĕшне те мухтаса
Сăвă-юрă шăратар.

Асăрхаттару: Хорпа юрламалли ода еверлĕ хайлав валли.

# МУХТАВ ЮРРИ

Чăваш тĕнчи, эс сарлака,
Анчах та пĕтнĕ пайланса.
Апла пулин те халăха
Шанатпăр пĕрлĕх тупасса.

*Хушса юрламалли:*
Алран кайми аки-сухи,
Хăвартăн эс пире çăлса.
Юрлатпăр халь мухтав юрри,
Çуралнă Çĕр, сана савса.
Мухтав юрри чĕнет пире
Пулмашкăн яланах пĕрле.

Тахçан авал çула тухса
Усал ĕçпе ята яман,
Хальхи куна çити утса
Таса чыса ӳкме паман.

*Хушса юрламалли.*

Атте-анне пехилĕпе,
Çĕрпе Хĕвел хăвачĕпе
Çунат сарса вăй илер-и,
Тĕнче шайне çĕкленер-и.

*Хушса юрламалли.*

# УМРА ПУРНĂÇ ÇИÇЕТ

Чечекленнĕ улăх
Илемпе çиçет.
Çӳлтен панă ырлăх
Кашнинех çитет.
Умра пурнăç кĕтет,
Пире те чĕнет,
Пире те чĕнет,
Тулли телей пиллет.

Юр юрлакан кайăк
Юрату кĕтет.
Юрласассăн лайăх,
Тен, кĕтсе илет.
Умра пурнăç кĕрлет,
Пире те чĕнет,
Пире те чĕнет,
Тулли телей пиллет.

Икĕ кăвакарчăн
Кĕлете кĕрет.
Иккĕн пулнă хыççăн
Виççĕн пулас тет.
Умра пурнăç вĕрет,
Пире те чĕнет,
Пире те чĕнет,
Тулли телей пиллет.

Çӳлтен панă ырлăх
Пурне те çитет.
Хамăр тунă пурлăх
Хамăра тивет.
Умра пурнăç çиçет,
Пире те чĕнет,
Пире те чĕнет,
Тулли телей пиллет.

# НАРКĂМĂШЛĂ МĂКĂНЬ

Ача чух ача пек пулнă,
Мăкăнь мĕнлине пĕлмен.
Чечек çеç тесе шутланă,
Мала хунă илемне,
Ун ултавлăхне сисмен.

*Хушса юрламалли:*
Йăл çиçекен мăкăнь,
Наркăмăшлă мăкăнь,
Ăнсăртран лексе алла
Çисе ятăн вăй-хала,
Тĕксĕмлетрĕн сăнăма.

Тин çеç çурăлнă чечекĕ
Маншăн халĕ кăлăхах.
Сĕт пек шурă йӳç шĕвекĕ
Темшĕн пулчĕ хаклăрах,
Пуçа çавăрчĕ часах.

*Хушса юрламалли.*

Ăçтан тупăнчĕ çак чир-чĕр,
Мĕншĕн пăхрăм тутанса.
Çамрăксем, тархасшăн итлĕр
Ман асаплă сăмаха, –
Упрăр çирĕп сывлăха!

*Хушса юрламалли.*

# ĂМĂРТКАЙĂК ПУЛСА ЭП ÇĔКЛЕНТĔМ

Ăмăрткайăк пулса эп çĕклентĕм çӳле,
Киленеп халь тăван кĕтеспе.
Эх, илемлĕ иккен пучах тулнă хирсем,
Тинĕс пек хумханса выртнипе.

Ăмăрткайăк пулса эп çĕклентĕм çӳле,
Киленеп халь чăваш енĕпе.
Эх, илемлĕ иккен эпир лартнă çуртсем,
Кермен пек курăнса тăнипе.

Ăмăрткайăк пулса эп çĕклентĕм çӳле,
Киленеп халь чăваш тĕнчипе.
Эх, илемлĕ иккен ирĕк чунлă çынсем,
Вăй-халне халăха панипе.

# АЛЛĂМРИ ÇЫРУ

Кĕтсе илтĕм тинех инçетри çырăва –
Шанчăк пур-ха кăштах ăшăма пусарма.
Анчах темшĕн тăрап ним тума аптраса,
Аллăмри çырăва вулама тăхтаса,
Темшĕн чун шикленет, васкамасть вулама.

Вăл сисет пулмалла уйрăлу сăлтавне –
Пĕлеймерĕм курнать тусăма юратма,
Чĕреме яр уçса туйăма кăтартма,
Çавăнпа тен хăрап аллăмри çыруран,
Пур-ши кĕтнĕ сăмах инçетри тусăмран,
Килчĕ-ши килĕшӳ хам юратнă çынран.

Ак уçап çырăва, тытăнап вулама,
Чуп туса эп илеп чи паха сăмаха –
Çунат патăн мана вĕçтерме хăв патна,
Кĕçех пулăп санпа, лекĕн ман ытама.
Юлăн ман ытамрах, тек вĕçертмĕп сана.

3 Заказ № 1117.

# ВЁÇСЕ КИЛЧӖ ШӐНКӐРЧ ÇУРКУННЕ

Вёçсе килчӗ шӑнкӑрч çуркунне,
Савӑнса пуçларӗ юррине.
Инçетре вӑл курнӑ аттене,
Тӑшмана вутпа çунтарнине,
Çӗршыва чунтан юратнине,
Ун чысне ӳкме паманнине.

Вёçсе килчӗ шӑнкӑрч çуркунне,
Хурланса пуçларӗ юррине,
Курнӑ вӑл каллех ман аттене,
Çырмара суранлӑ выртнине,
Юнлӑ аллипе кармашнине,
"Малалла!" – тесе кӑшкӑрнине.

Вёçсе килчӗ шӑнкӑрч çуркунне,
Хурланса пуçларӗ юррине,
Курайман текех вӑл аттене,
Тупнӑ шыраса ун хӗресне,
Ваттисем пилленӗ çӗр çине
Илсе килнӗ унӑн тӑприне.

Вёçсе килчӗ шӑнкӑрч çуркунне,
Савӑнса пуçларӗ юррине,
Вӑл пӗлтерчӗ вӑрçӑ пӗтнине.
Куртӑм эпӗ халӑх кӑмӑлне,
Куççульне çӑтса юрланине,
Сурансем çаплах ыратнине...

# ПУРĂННИНЧЕН ПАХИ ÇУК

*Н. Осипова*

Пурнăç çулĕ такăр мар
Тетпĕр эпĕр хăш чухне,
Анчах асăмра тытар
Пурнăç çеç чи хаклине.
Ăраскалпа киленме
Тен кашниншĕн май та çук.
Тем тесен те тĕнчере
Пурăннинчен пахи çук.

Тав тăвар ваттисене
Пил парса ӳстернĕшĕн,
Мĕнле пурăнмаллине
Пĕчĕкрен вĕрентнĕшĕн. –
Çынпа çын пек пулмалла,
Ырлăх-сывлăх сунмалла,
Туйăм алăкне уçса
Юратма та пĕлмелле.

Çывхартать телей патне
Тус-тăваншăн вăй хуни,
Ял-йыша та кирлине
Кунсерен туйса тăни.
Пурнăç çулĕ такăр мар,
Тетпĕр эпĕр хăш чухне,
Çулĕ чăн та такăр мар,
Анчах хаклăр пурнăçне.

# ĂÇТА ЭСИР, ЮРАТНĂ ЫВĂЛСЕМ

Инçе çула çĕкленнĕ кайăксем
Картин-картин вĕçеççĕ çаврăнса.
Мĕскер кунта шыраççĕ-ши вĕсем
Ытла та тунсăх юрă юрласа.
Телейлĕ ӳснĕ ăшă йăваран
Каяс килмест иккен час уйрăлса.

Телей курма çуратнă ывăлсем,
Мĕн-ма эсир васкатăр ют çĕре.
Çула тухатăр çăмăл çĕкленсе,
Тăван килтен пыратăр сивĕнсе.
Мĕн-ма эсир çӳретĕр инçетре,
Ма çук-ши сирĕн савăнăç питре.

Эпир пăхса ӳстернĕ ывăлсем,
Пин-пинĕпе пуç хучĕç инçетре.
Ăçта кăна выртмаççĕ пуль вĕсем,
Телей курма çуратнă чăвашсем.
Туяççĕ-ши чĕрем ыратнине,
Ачасăр юлнă арăм суранне.
Ăçта эсир, юратнă ывăлсем,
Телей курма çуратнă чунăмсем.

# ШУРĂМПУÇ ТАШЛАСА ÇЫВХАРСАН

Шурăмпуç ташласа çывхарсан
Умри çул курăнать уççăнрах,
Умри çул уççăнрах курăнсан
Пурнăç лавĕ чăнах çăмăлрах.

*Хушса юрламалли:*
Тулăх пурнăç патне çывхарма
Пĕр-пĕрне пулăшни пит аван.
Туйăма палăртса юрлама
Тăвансем кар! тăрсан пит аван.

Ĕмĕре тивĕçпе ирттерме
Хăв чысна упрама пĕлмелле.
Пĕрчĕн пухнă мулпа киленме
Ĕçпеле пиçĕхсе ӳсмелле.

*Хушса юрламалли.*

Шурăмпуç ташласа çывхарсан
Мĕнпур кайăк пуçлать юрлама.
Кашни çын ырлăхпа туслашсан
Сăлтав пур пурнăçпа савăнма.

*Хушса юрламалли.*

# КУЛСА ТĂТĂР УЙĂХ

Пушăпа çапасчĕ
Çутă хĕвеле.
Темшĕн вăрăм пулчĕ
Кунĕ ман тĕле.
Пурпĕр вĕçсе çитрĕм
Чĕннĕ вырăна,
Эсĕ те ав килтĕн
Шаннă йăвана.

*Хушса юрламалли:*
Иккĕн тĕл пулсан,
Эс ытакласан,
Кирлĕ мар мана
Чĕмсĕр юрату.
Илтĕр çунтарса
Сан пылак туту,
Тăтăр йăлкăшса
Пирĕн юрату.

Çăтмахри пек лайăх
Пултăрччĕ пире.
Кулса тăтăр уйăх
Çӳллĕ тӳпере.
Иккĕн ытамра чух
Теприн мĕн ĕç пур.
Юрату çумра чух
Юрату çеç пур.

*Хушса юрламалли.*

# САРМАНТЕЙЁН САР ЧĂХХИ

Сармантейён сар чăххи
Сар çăмарта тунă тет,
Çав çăмарта варринче
Ман телейём выртнă тет.

Сар чăххине юратса
Сарă тулă панă тет,
Çăмартине пытарса
Тёп сакайне хунă тет.

Ылтăн евёр парнене
Хума маннă чăх айне.
Çавăнпа та ман телей
Тупайман çав хăй çулне.

Сармантейён сар чăххи
Сар çăмарта тунă тет,
Çав çăмарта варринче
Ман телейём выртнă тет.

# ХЁЛЛЕХИ ЮРАТУ

Аслă çул çине эп тухрăм,
Тăтăм тĕттĕм пуличчен.
“Юратап” тесе те çыртăм,
Юр юрларăм сан çинчен.

*Хушса юрламалли:*
Эс, хĕллехи юрату,
Ан пул маншăн ырату.
Ăшăт тунсăх чĕреме,
Шăнса кӳтнĕ ӳтĕме.

Сивĕ чунлă хĕл мучийĕ
Хуçа пулчĕ таврара.
Шăлса кайрĕ çавра çилĕ
Эпĕ çырнă сăмаха.

*Хушса юрламалли.*

Ак каллех чĕрсе çыратăп
Хамшăн хаклă сăмаха.
Кил часрах, сана шанатăп,
Ан хăвар-ха тăлăха.

*Хушса юрламалли.*

# ИТАЛИРЕН КИЛНЁ ХӐНА ЮРРИ

Чун туртнипе кунта килеңто,
Чӑваш енне ҫитсе куранто,
Чӑваш енне ҫитсе куранто,
Мӗн курнине куплет юрланто.

Мӑн Атӑла курса савнанто,
Музейсене кӗрсе туханто,
Чуна парса "Нарспи" куранто,
Шупашкарта нумай таланто.

Чӑваш ялне ҫитсе куранто,
Йӑла-йӗрке кунта пуянто,
Хапха уҫса кӗтсе иленто,
Кашни килте хӑна пуланто.

Кӗрекене кӗрсе ларанто,
Шӳрпе, шӑрттан ҫисе куранто,
Ватти-вӗтти хисеп тӑванто,
Патша пекех хама туянто.

Алькеш енне ҫитсе куранто,
Чӑваш тӗрри мӗнле пуянто,
Айдак патне кӗрсе туханто,
Чӑваш сӑри ӗҫсе куранто.

Акатуйне ҫитсе куранто,
Вӑй картине кӗрсе тӑранто,
Алран-алла тытса юрланто,
Чӑваш юрри янрать бельканто.

Хăна пулса нумай çӳренто,
Анчах кĕтет тăван Сорренто,
Эсир вара чипер юланто,
Йыхрав ярсан пырса куранто.

# ЮРАТУ ХĂВАЧĔ

Çук, пĕлмен, шутламан çакăн пек пуласса,
Савма маннă чуна эсĕ вăй парасса.
Мĕнле ырă шăпа тĕл пултарчĕ сана,
Мĕнле ырă самант телей пачĕ мана.

Çук, пĕлмен, шутламан çакăн пек пуласса,
Ман валли те çапла юрату тупнасса.
Паянтан пуçласа ĕмĕтсем урăхла,
Ма тесен, сан сăну яланах куçăмра.

Çук, пĕлмен, шутламан çакăн пек пуласса,
Туйăмсем кăвар пек йăлкăшса çунасса.
Чĕререн тав тăвап, савнă тусăм, сана,
Юрату хĕмĕпе эс çын турăн мана.

# ЧĂВАШ ÇУЛĔ

Çакă çутă тĕнчере
Чăваш йышĕ сахал мар.
Анчах темшĕн Раççейре
Чăваш çулĕ çăмăл мар.

*Хушса юрламалли:*
Тинĕс хумĕ, тинĕс хумĕ
Çĕкленсе килет,
Çав тăварлă тинĕс шывĕ
Шур чула сирет.
Халăх чунĕ, халăх чунĕ
Капланса çитет.
Тинĕс шывĕ пек куççулĕ
Сăнчăра çиет.

Çут пуласлăха шанса
Кайрĕ халăх уйрăлса,
Кашни ырлăх шыраса
Уйрăм утрĕ такăнса.

*Хушса юрламалли.*

Чăваш паллă ĕçĕпе –
Шеллемест вăл хăй вăйне.
Йăваш чунлă пулнипе
Тупаймарĕ хăй çулне.

*Хушса юрламалли.*

Тĕрĕс çул тупас тесен,
Хамăра хисеплесе,
Чура туйăмне сирсе
Чăвашсен пĕрлешмелле.

*Хушса юрламалли.*

# ВАТӐЛМА ТА ВӐХӐТ ÇУК

Кам хӑять-ха ватӑлатпӑр-çке теме,
Камваскать-ха кун-çул вӗçӗ патнелле.
Пурнас марччӗ ватлӑха кӗтсе ларса,
Пурӑнасчӗ кашни куншӑн савӑнса.

Ватлӑх ман пата пымашкӑн шут тытсан
Асӑрхатӑр эпӗ ватӑ маррине.
Тӗрӗслетӗр вӑйӑм-халӑм мӗнлине,
Шута илтӗр чунӑм çамрӑк пулнине.

Ман çумра халь ӗçпе юрӑ пӗрле чух,
Ватлӑха аса илме те вӑхӑт çук.
Ман çумра халь пикесем йӑл кулнӑ чух,
Кулянма та, ватӑлма та вӑхӑт çук.

# ЙӐЛ КУЛСА ИЛЕМ ТЕ...

*К. Т.*

Ача чух пӗлменччӗ
Эсӗ мӗнлине.
Хӗҫ пек ҫурса кӗчӗ
Туйӑм чӗрене.
Эп сана кӗтетӗп, –
Ас илсем мана.
Йӑл кулса илем те
Хускатам чунна.

Ача чух сисменччӗ
Эс чиперрине.
Ирӗксӗр иленчӗ
Куҫӑм сан енне.
Эп сана кӗтетӗп, –
Ас илсем мана.
Йӑл кулса илем те
Йӑпатам чунна.

Ача чух курманччӗ
Эс маттуррине.
Юрату ваӑранчӗ,
Сарчӗ ҫунатне.
Эп сана кӗтетӗп, –
Ас илсем мана.
Йӑл кулса илем те
Ӑшӑтам чунна.

# ХЁРАРĂМ, ЭРЕХ ТАТА ЮРАТУ

Пĕлет-ши хăйне вăл хĕрарăм
Тĕнчешĕн мĕнле хаклине –
Пĕриншĕн пулсассăн та арăм,
Илемĕ кашниншĕн парне.
Эп çак илемпе йăпанатăп,
Сисетĕп, туятăп вăйне.
Хĕрарăм, сана тав тăватăп,
Çĕклетĕп янравлă черкке.

Ĕçрĕм акă саншăн,
Ĕçрĕм сывлăхушăн.
Юнăм кăварланчĕ,
Туйăм çивĕчленчĕ.
Ват эрех хăвачĕ
Ырă шанчăк пачĕ,
Çамрăклăх вăранчĕ –
Эпĕ каллех каччă.
Ват эрех хăвачĕ
Кăшт хăюлăх пачĕ,
Сан умра тăратăп,
Яшлăха туятăп.

Эсĕ те халь урăх –
Те хĕвел, те уйăх,
Пит-куçу илемлĕ –
Çамрăк пике тейĕн.
Йăл илме илемшĕн
Исçĕм шывĕ вирлĕ,
Ывăннă чĕремшĕн
Эсĕ кăна кирлĕ.

# МАНА ТЕМШЁН СИВЁ

Ешерет Чăваш çĕршывĕ, –
Терĕç юрăçсем пире.
Анчах тем чул юрласан та
Ешерни пит курăнмарĕ.
Ешерни пит курăнмарĕ,
Тĕнчери пек туйăнмарĕ.

*Хушса юрламалли:*
Сивĕ, сивĕ,
Темшĕн сивĕ.
Чунăм лăпкă мар.
Пулĕ-ши умра
Ăшă сывлăш хумĕ,
Пулĕ-ши умра
Ырă пурнăç çулĕ?

Тулăх пурнăçпа пурнатпăр, –
Терĕç сăвăçсем пире.
Анчах тем чул вуласан та
Тулăх пурнăç курăнмарĕ.
Тулăх пурнăç курăнмарĕ,
Тĕнчери шай сисĕнмерĕ.

*Хушса юрламалли.*

Ĕçлĕ халăх пит телейлĕ, –
Терĕç пуçлăхсем ăна.
Анчах тем чул тăрăшсан та
Телейне вăл тупаймарĕ.
Телейне вăл тупаймарĕ,
Тĕнчепе тан пулаймарĕ.

*Хушса юрламалли.*

# МĂШĂР ТЕНИ МĔН ТЕНИ

Мăшăр тени мĕн тени, –
Çумра арçын пур тени.
Юратупа пĕрлешсе
Пĕр çăмхана явăнни,
Пĕрне-пĕри итлесе
Килĕштерсе пурăнни.

Мăшăр тени мĕн тени, –
Çумра хӳтлĕх пур тени.
Ĕшенсессĕн тайăнма
Юман вырăнне пулни,
Ăшшăн тытнă ытамра
Ачашланма май пурри.

Мăшăр тени мĕн тени, –
Çумра шанчăк пур тени.
Çирĕп сывлăхлă пулса
Ăрăва вăй-хал пани,
Çут пуласлăха курса
Хавасланса пурăнни.

Мăшăр тени мĕн тени, –
Çумра ырлăх пур тени.
Ватлăхра та киленсе
Пурнăçа хыт юратни,
Ачасене ӳстерсе
Пĕрле ĕмĕр вĕçлени.

# ХАМĂР КИЛ АСРАН ТУХМАРĔ

*Ю. Т.*

Эп ăçта кăна çитмерĕм,
Пултăм тĕрлĕ çĕршывра.
Хамăр кил асран тухмарĕ,
Çук, каймарĕ куçăмран.
Ăшра лăпкăлăх пулмарĕ,
Шухăш хӳхрĕ пуçăмра.

*Хушса юрламалли:*
Тулли уйăх çутă çутатсан та
Хĕвеле нихçан та çитес çук.
Сар хĕвел тем пек хĕмне сапсан та,
Кил ăшшине пурпĕр çитес çук.
Кил ăшшине пурпĕр çитес çук та,
Хăй патне пире пуçтарас çук.

Эп ăçта кăна çитмерĕм,
Çук, пулмарĕ ыр кун-çул.
Умри асамат кĕперĕ
Пулчĕ савăнăçлă çул.
Вăл мана киле çитерчĕ, –
Курманни унта тем чул.

*Хушса юрламалли.*

Эп ăçта кăна çитмерĕм,
Телей хыççăн çӳресе.
Хам çуралнă савнă енĕм
Илчĕ кăмăллăн кĕтсе.
Атте килĕ хĕпĕртерĕ, –
Шаннă пуль çав килессе.

*Хушса юрламалли.*

# КĂВАР ÇИНЧИ ТАШĂ

Выртать кăвар йăл-йăл çиçсе,
Пире парса хăй ăшшине.
Вут пек таса пулас тесе
Чăваш пуçлать хăй ташшине.
Ташлать чăваш кăвар çинче,
Çапла сирет чирне-чĕрне.
Ташлать чăваш кăвар çинче,
Çапла сыхлать хăй сывлăхне.

Кĕрсе каять кăвар çине,
Вăл хăйшĕн хўтлĕх шыраса.
Çарран сикет кăвар çинче
Те савăнса, те макăрса
Ташлать чăваш кăвар çинче,
Çапла упрать чун хавалне.
Ташлать чăваш кăвар çинче.
Çапла сыхлать вăл хăй чысне.

Сикет чăваш кăвар çинче
Ниçта кайса кĕме çукран.
Ташланă чух кăвар çинче
Хăрушă мар нимле тăшман.
Ташлать чăваш кăвар çинче,
Çапла упрать таса ятне.
Ташлать чăваш кăвар çинче,
Çапла сыхлать хăй ирĕкне.
Чăваш ташлать кăвар çинче...

5. Заказ № 1117.

# СИСЕЙМЕРЁМ ЁМЁР ИРТНИНЕ

(Уйрăлу юрри)

Чупрĕ вăхăт çурхи кайăк вĕçнĕ пек,
Сӳнчĕ пурнăç çӳлтен ӳкнĕ çăлтăр пек.
Илтеймерĕм кăпăшка юр çунине,
Сисеймерĕм ĕмĕр хăвăрт иртнине.

Хирĕçместĕп турри панă телейпе,
Кулянатăп уйрăлнишĕн сирĕнпе.
Ватăлсан та йăлăхмарăм пурăнса,
Уйрăлатпăр, мана ярăр ăсатса.

Сывă пулăр, пурнăр пурте савăнса,
Эп кайнишĕн пит ан юлăр хурланса.
Чăрмав кӳтĕм сире вăрăм ватлăхпа,
Тав тăватăп усранишĕн ырлăхпа.

Уйрăласчĕ сирĕнпе ман аванах,
Тупăкра выртасчĕ ырă кăмăлпах.
Илтеймерĕм кăпăшка юр çунине,
Сисеймерĕм ĕмĕр хăвăрт иртнине...
А-а-ах... А-а-ах... А-а-ах...

# *ПРОЗĂЛЛА СĂВĂСЕМ*

# ЮРАТУРАН ВĂЙЛИ ÇУК

Çуркунне çитсен пурнăç çĕнелет, ешĕл сăнĕпе кăмăла çĕклет. Улăха тухсан хитре чечек пит нумай. Нумай пулсан та татас килет саррине. Юрату çинчен çепĕç юрă пит нумай. Сана тĕл пулсан юрлас килет çĕннине.

Çуллахи илем çимĕçпе пуян, çут çанталăка тав тăвар ялан. Вăрмана кĕрсен пиçнĕ çырла пит нумай. Нумай пулсан та татас килет тутлине. Юрату çинчен çепĕç юрă пит нумай. Сана тĕл пулсан юрлас килет çĕннине.

Хĕр чух хĕрĕх тус, тетчĕç аннесем, каччăн аллă тус, тетчĕç аттесем. Яшлăх яка чух çывăх туссем пит нумай. Нумай пулсан та савас килет савнине. Юрату çинчен çепĕç юрă пит нумай. Сана тĕл пулсан юрлас килет çĕннине.

1996

Эй, эйпеçсем, эльпуçсем, элĕксем – экологи енчен таса хĕрсем! Сирĕн умма тăрса куçран пåхса калаçма пит аван. Ыталаса чуп тума тата кăмăллă. Паллах, хăвăр хирĕç мар пулсан, пире тивĕç каччăсем шутне хурсан.

Эй, чăваш хĕрĕсем, таса шывпа çăвăнса, уçă сывлăшпа кăкăр тулли сывласа ӳснĕскерсем, арăм тума лайăххисем, çирĕп сывлăхлă ача çуратма хатĕррисем! Сире никампа та улăштарма çук. Çакна ыттисем тахçанах сиснĕ, чи лайăххисене суйланă та суйланă, пире шăхăрта-шăхăрта хăварнă.

Эй, чăваш каччисем, авланаймасăр çӳрекеннисем. Чăваш хĕрне тивĕç пуласси хăвăртан килет.

1996



А. Кибеч студентсем хушшинче.

Тӗлӗнмелли юратура та сахал мар. Мӗншӗн тесен ҫак туйӑм вӑл никама та, ниме те пӑхӑнмасть. Веҫех хӑй хуҫа.

Акӑ пырать урампала пӗчӗк те ырхан хӗрарӑм. Юнашар – Улӑп пек кӗрнеклӗ арҫын. Шӑкӑл-шӑкӑл калаҫнӑ ҫемӗн илеҫҫӗ ав йӑл-йӑл кулса, пӗрне-пӗри кӑмӑлласа.

Çав хушăрах пулать ав урăхла, Нар пек чипер хĕрарăм валли те арçын çук. Пĕчченех вăл пурнăçра. Кăштах та пулин тайăнма çумра çук нимле юман. Мĕн тăвас тен, шăпи çапла. Май çук кунта канаш пама.

Те юратма пĕлменни, те идеал пуянни, те юрату çине ăс-тăн вăйĕпе çеç пăхни – калама хĕн.

Юрату вăл юрату. Ăна нимĕнпе те улăштарма çук. Вăл вăйлă та, айван та, вăл пурнăç та, вилĕм те.

1994

Асăрхарăм эп сана. Куçăмпа чуптуса илтĕм. Эсĕ сисрĕн пулмалла. Пăхса илтĕн те, питӳ пиçнĕ пĕрлĕхен пек хĕрелсе кайрĕ. Шухăшăмпа çитес чарăнура тухма ыйтрăм. Эсĕ тухрăн, эп те тухрăм. Пĕр-пĕрин патнелле туртăнтăмăр. Мĕнле вăй пулчĕши, мĕнле туйăм туртрĕ-ши?

Тахçанах паллană çынсем пек утса кайрăмăр пĕрле...

1996

Юратупа ӳслĕке пытарма çук теççĕ. Пурпĕрех асăрхаççĕ.

Ӳслĕкĕ пирки калаçмăпăр. Вăл килет те каять, манăça юлать.

Юратăвĕ вара... Унтан тарса пытанма çук. Пĕр хуçаланма пуçласан никама та канăç памасть, хăй ĕçне тăватех – юраттарать те, кĕвĕçтерет те.

Тепри туртса илесрен хăранипе ăш вăркама пуçлать. Кĕвĕçӳ туйăмĕ кăкăра хирет, чĕреме хĕртет. Йывăрлăхĕ хама тивет.

Тепри ав пачах урăхла. Кĕвĕçӳ хĕмне веçех хăй юратнă çын çине сапать. Вырăнсăр ыйтусемпе чыхăнтарать, хыççăн кайса вăрттăн сăнама та именмест...

Виççĕмĕшĕн вара вылявлă кĕвĕçӳ. Ăна вăл хăйне юратнипе юратманнине тĕрĕслемелли мел выранне хурать. Анчах йăнăшать. Нимле кĕвĕçӳ те юрату тусĕ мар. Ун çунатне хуçакан ултавлă вăй çеç.

Кĕвĕçме сăлтав çуккине, пĕрне пĕри шаннине нимĕн те çитес çук.

1996

Кĕтмен çĕртен тĕл пултăм çамрăк чухнехи тусăма. Вăтам çулалла çитнĕ пулсан та илемлĕ, пит-куçĕ илĕртӳллĕ çиçет. Чылай лартăмăр калаçса, яшлăха аса илсе.

Тусăм ман хаш! сывласа илчĕ те çапла каласа хучĕ: "Çук, упăшкам йĕркеллĕскер пулмарĕ. Ман чысăма хаклама пĕлмерĕ. Хăй маншăн пĕртен-пĕр арçын пулнине ним выранне те хумарĕ. Çакна пĕлнĕ пулсан... санах парнеленĕ пулăттăм".

Çак сăмахсене илтсен пачах аптраса ӳкрĕм. Мĕн каламалла, савăнмалла-и, тав тумалла-и? Пĕлместĕп. Ку çеç те мар-ха.

"Çитменнине тата ачамсем те веçех ашшĕне пăхрĕç, лайăх вĕренекенскерсем пулмарĕç... Миçе хутчен сана аса илмен пуль çак çулсенче. Пĕр ачине те пулин санпа тăвасчĕ тесе тĕлпулу шыранă самант та пулнăччĕ. Эсĕ ĕçленĕ вырăна та, телефонна та тупрăм. Анчах хăяймарăм", – тесе хурсан вара...

"Кăмăлу пулсан çак ĕмĕте тен пурнăçлăпăр та", – тесен вăл çапла хуравларĕ: "Кая юлтăмăр пуль çав. Сывлăхăм та ĕлĕкхи мар"...

Тавах сана, ырă çыннăм, мана çавăн пек пысăк хак панишĕн, кая юлса каланă сăмахсемшĕн, юрату туйăмне яланах чĕрӳ çумĕнче упранишĕн.

Мĕн тума пултарăп-ши эпĕ халĕ саншăн?..

1994

Эпĕ нимĕн шарламасăр выртнишĕн ан ӳпкелеш-ха. Ан каластар-ха. Сан хăлхусене ачашлакан сăмахсене те тен каярах калăп...

Ман сан çине пăхса савăнас килет. Шурă мрамăр пек яка ӳтӳ çинчен куçăмсене илес килмест. Тархасшăн сăмах ан ыйтха. Куçран пăх. Унта мĕн çиçнине асăрха. Чĕрем таппине тăнла, тикĕс сывламаннине чухла.

Нивушлĕ эпĕ сана сăмахсăр пуçне урăх нимех те параймăп вара. Е эсĕ манран пурне те сăтăрса илесшĕн, сăмахне те, юратăвне те...

Тӳрех калатăп, эп сан пата сăмах çаптарма килмен...

1994

Куçне курма тунă-ха. Сăмсине – сывлама. Те мăкăрăлса тăнăран сăмса тепĕр чух чăрмав та кӳрет. Калăпăр, кĕпе е çăтăрах свитер тăхăнса хывнă чух...

Тутине тата мĕн тума тунă-ши? Паллах, чуп тума, пĕр-пĕрне юратнине палăртма.

Ак тамаша. Чуп тунă чух сăмса чăрмантарнине пачах та астумастăп. Ăçта кайса кĕрет-ши вара вăл çав юратуллă самантра? Пĕлместĕп.

1997

"Юрату çуккă вăл, Юрату пĕтнĕ вăл", – теççĕ хăшĕ-пĕрисем. Аплах мар пуль. Ыйтса пăхар-ха çакна тĕттĕм каçран. Вăл курманни, вăл пĕлменни пулас çук.

Урамри шăв-шав лăпланнă май kaçхи хăлха çивĕчленсех пырать. Нумай енлĕ пурнăç кĕввине уçăмлăрах туйма пуçлать.

Ĕнер кăна юнашарсем хăнисене кĕтсе илчĕç. Шăкăл-шăкăл калаçупа, илемлĕ юрăпа пире те савăнтарчĕç. Хăйсене курмасан та вĕсемшĕн чун хĕпĕртет.

Акă тата касçерен çӳлти хутран мачча витĕр Юрату таппи сăрхăнса кĕрет. Апла пулсан пурнăç вĕрет-ха. Ачисем те çуралĕç, çемье те пĕтмĕ. Этемлĕх те аталанĕ. Шăпах çавăншăн ĕçлет те ĕнтĕ çын чĕринчи Юрату. Вăл пулмасан пурăннин те тути çук. Килсĕр выльăх пек сулланса çӳрени кăна мар-и-ха.

Юрату çуккă тенине ĕненместĕп. Вăл пур, малашне те пулĕ. Юрату пулмасан çынна çын пек пулма мĕн вĕрентĕ тата.

1994

О, Гагра, Гагра, kaçхи Гагра! Ĕмĕрлĕхех вырнаçнă эсĕ асăмра. Ун чух эпĕ çамрăкчĕ, ун чух эпĕ вăйлăччĕ...

Хум çапнăçем пĕрчĕн-пĕрчĕн хĕм сирпĕтекен Хура тинĕс, тĕм хушшинче лăпкăн калаçса ларни, тута хăпарса тухиччен чуптуни, эрехсĕрех ӳсĕрĕлни, хĕвел çинче хытă хĕртĕннипе мана çĕр kaçиччен ăшă парса тăракан Любаша ӳчĕ...

Тинĕс, çутă Уйăх, Дон шывĕ хĕрринчи станицăра ӳссе хитреленнĕ Любаша тата Эпĕ... Ыттисем? Çук, урăх никама та астумастăп...

Хальхи Гагра мĕнлине пĕлместĕп. Ун чухнехи – куç умĕнчех. Паллах, унта Любаша пулнăран.

1994

Енчен те хĕрарăм хăйне упăшкинчен маларах хума хăнăхрĕ

пулсан, çакна вăл кашни утăмрах кăтартма тăрăшать. Калаçура та çавах. Хирĕçле сăмахпа арçынна пăчăртаса лартма пикенет. Чĕлхе шăмăсăррине пула çаптарать те çаптарать, мĕн калани пирки шутламасть...

Амăшĕ киле таврăнсан ачисем вăл вĕр-çĕнĕ пальтопа пулнине асăрхаса:

– Анне, ку илемлĕ пальтона атте илсе пачĕ-им? – тесе ыйтрĕç тет.

– Аçуна шансан пальто мар, эсир те пулас çук, – тесе хучĕ тет амăшĕ...

Тепĕр килте килес хăнасем валли пурте хатĕр тет. Капăр тумланнă арăмĕ тĕкĕр умĕнче сăрланкаласа тăрать тет. Упăшки, кăшт хытканрахскер, майкăпа труссипех калла-малла уткаласа çÿрет, тет. Арăмĕ:

– Мĕншĕн халь те тумланмастăн çак, кĕçех хăнасем çитеççĕ вĕт-ха, – терĕ, тет.

– Тăхăнмастăп, курччăр эсĕ мана мĕнле çитерсе усранине, – тесе çинçешке урисем çине тĕллесе кăтартрĕ, тет.

– Апла пулсан веçех хывăн эппин, сана мĕншĕн çитерме юранипе юраманнине те курччăр, – тесе хучĕ тет арăмĕ.

Пыр та калаç. Хĕрарăма сăмахпа çĕнтерме çук тесе ахальтен каламан пуль çав.

1994

Юрату çинчен шутласан тÿрех арбуз çинĕ чухнехи аса килет.

Малтанхи çыртăмсем пулчĕç ытлашши пылак. Çыртнă хыççăн çыртас килсе тăчĕ. Юлашкисем, хуппи патне çывăххисем, пулчĕç пачах урăхла. Унта сахал пылакки. Тĕсĕпе те шупкарах.

Юрату та çавна май. Ăçтан ёнтĕ танлаштаран малтанхипе хальхине.

Анчах пурпӗр кулянмастӑп тути самай улшӑннишӗн. Çамрӑк чухнехине аса илни те теме тӑрать, халь те чуна савӑнтарать.

1996

Кӗтрӗм, кӗтрӗм, эсӗ шӑнкӑравласса кӗтрӗм. Чупса пытӑм телефон патне, сан сассу пулмарӗ. Кӑмӑлӑма хуçни çеç пулчӗ.

Мӗншӗн ытла паха-ши сан сассу? Ӑна илтсенех хама пачах урӑхла туя пуçлатӑп. Темле лӑпкӑлӑх, шанчӑклӑх çуралать. Ӑна илтсенех ӑш вӑркани чарӑнать. Калаçнӑ чух вара хӑвна курнӑ пекех туйӑнать, сӑну сан куç умӗнчех выляса тӑрать.

Курсан, ыталаса чуп тусан вара пӗрле таçта çити вӗçсе каяс килет. Пурнӑç тути-маси те урӑхларах курӑна пуçлать. Пурӑнас килет, сан ытамунтан вӗçерӗнес килмест, нумайлӑха юлас килет.

Кӗтетӗп, эсӗ шӑнкӑравласса кӗтетӗп.

1996

Эп юратнӑ хӗрсемпе хӗрарӑмсем, чи хитрисем, чи кӑмӑллисем!

Мӗнле-ха капла, аллӑ урлӑ каçсан та пӑрӑнмарӑр, утмӑла çитсен те пӑрахмарӑр.

Мӗне пула-ши çавӑн пек пысӑк парнене тивӗç пултӑм. Эсир пулман пулсан пурнӑçӑм çапла ӑнӑçлӑ иртес çук. Чирлемерӗм, нӑйкӑшса çӳремерӗм, ыттисене йывӑрлӑх кӳмерӗм. Эсир пулман пулсассӑн сӑвӑ-юрӑ та шӑранса тухас çук.

Каçарӑр. Тен ман çумри ырлӑх хумӗ кашни патнех пӗр пек çитеймерӗ. Анчах эпӗ сире пурсӑра та юратнӑ, усал тӗллев пулман. Халӗ те çавах...

Енчен те эпӗ маларах уйӑрӑлса каяс пулсан, ытлашши ан

кулянăр. Эпĕ выртнă çĕре пырса тăрăр та ыррине аса илĕр. Çакă вăл сире çăмăллăх парĕ. Чăннипе каласан, эпĕ кăштах сирĕнте те пурăнатăп вĕт-ха. Веçех кайса çухалман. Апла эппин эпир яланах пĕрле.

1996

Килĕшместĕп, чăвашсене ытти халăх çыннисем юратмаççĕ тенипе килĕшместĕп. Йĕри-тавра пăхкаласа илетĕп те куратăп, чăваш арçынни çумĕнче кам кăна çук пуль. Мĕнле хĕрарăмсем усă курмаççĕ пуль унпала, вăл тунă пурлăхпа. Авлантараççĕ те авлантараççĕ. Уйрăмах вырăс е еврей хĕрĕсем. Суйласса вара хытă суйлаççĕ. Чи пултаруллисене, аслă пĕлӳ илнисене, пулас профессорсене, министрсене, президентсене...

Чăваш хĕрĕсем валли иккĕмĕш сортлисем çеç тăрса юлаççĕ. Шăхăртса хăвараççĕ çав вĕсене. Шăпах çакăнта чăваш хĕрĕн юратури сăпайлăхĕ ытти халăх хĕрĕсене пулăшса пырать те ĕнтĕ.

Мĕн тăвас тен, йăли çапларах. Ятласшăн мар эп хĕрсене. Каччисене кăна кăштах хăлхаран пăрасшăн. Чăваша илмен чăваш арçынĕ ирĕклĕ çын мар тесе каласшăн. Тăванĕсене те чăвашла хăналаса яраймасть.

1996

Эпĕ вилĕ пытарма пуçлани тахçанах. Тăваттă çурăрах аттене ăсатрăм. Çакă пулнă 1942 çулта, çерçисене вĕçсе пынă çĕртех юр çине çапса ӳкерекен сивĕ кăрлачра.

Атте тупăкне йăтса тухса кайсан чăтса тăраймарăм. Хампа пĕрле хăварнă асанне аллинчен вĕçерĕнтĕм те нуски вĕççĕнех урама чупса тухрăм.

Инçетре, вăрăм урамăн тепĕр вĕçĕнче, аттене пытарма каякансен ушкăнне асăрхарăм. "Атте, ăçта каятăн!" – тесе кăшкăра-кăшкăра чупрăм. Анчах çитеймерĕм. Мана тахăшĕ тытса чарчĕ те пĕр киле кĕртсе ячĕ. Унта манăн шăнса кӳтнĕ ал-урана ăшăтрĕç...

Тăван ялăм ăшшине пĕрремĕш хут шăпах çавăн чухне туртăм. Çав ăшă мана паян кун та вăй парса тăрать.

1994



Сулахайран сылтăмалла: Г. Шуканов, А. Кибеч, Г. Хирбю, В. Михайлов.

Эх, Раççей, Раççей, юратусăр çĕршыв. Мĕншĕн çав тери нумай-ши сана сутакансем, сан чысна варалакансем?

Хамăр çынсемех вĕт-ха, Уйăх çинчен килмен. Хамăр шкултан вĕренсе тухнисемех, комсомолра, партире тăнисемех. Кама ятламалла-ши?

Раççей юратăвне кашниех ăмсанать. Вăл чаксанах ятлаçма пуçлатпăр. Хамăр тивĕçе вара манарах паратпăр.

Раççей пуянлăхĕ ылтăн-кĕмĕлĕнче мар, çыннисенче. Çавсене хаклами пулчĕç. Пуçлăхсене çилленнин ăншăрчĕ вара Раççей çине ӳксе пырать.

Çĕршыв вăл яланах пĕрре. Шăпи темле пулсан та пирĕн юратăва тивĕç. Кунта эпир çуралнă, кунта пурнатпăр. Тухса каяс кăмăл çук. Йăва пирĕн çакăнтах.

Юратусăр ӳснĕ ача телейсĕр. Çĕршыв та çавах. Ура çине тăраймасть, вăйланаймасть. Раççее паян пирĕн юрату çитмест.

1996

# ЧЫСА УПРАМА ПЁЛМЕЛЛЕ

Эй, тусăмсем, тантăшсем! Пурнăç лавне пĕр вăхăтра кӳлĕнтĕмĕр, вăй çитнĕ таран туртрăмăр. Халĕ хамăр мĕн тунине хак пама вăхăт çитмерĕ-ши?

Нумай-и, сахал-и, лайăх-и, начар-и – ĕçĕмĕрсем пирĕн чăннипех те чунпа тунăскерсем. Ĕненсе ĕçленĕ. Пире хамăр вăхăт хамăр пек тунă, пил панă, пурнăçа вĕрентнĕ. Пирĕн савăнăç – хамăр савăнăç. Куляну та, юрату та пирĕн хамăр евĕрлĕ.

Тен çавна пулах пĕрне-пĕри паян кун та лайăх ăнланатпăр, çывăхрах пулма тăрăшатпăр. Ыттисем хушшинче пире темшĕн сулхăнрах та. Апла пулсан пурнăçăмăра хамăр пекех утса тухар пуль. Вĕçне çитиччене пĕрле пулар.

1994

Мĕн тери çепĕç те илемлĕ сăмахсемпе усă курмаççĕ пуль поэтсем, çын ӳтне-пĕвне, питне-куçне ырласа юрлакансем. Темшĕн-çке-ха манарах параççĕ çын аллине мухтама.

Çĕр çинче мĕн пуррине пĕр йышшине çутçанталăк хăй тунă, ыттине – веçех çын алли. Урăх никам та нимĕн те туса паман.

Алă вăл пăхма çеç пĕр пекрехhĕн курăнать. Ĕçе тытăнсан – пачах урăхла. Кирпĕч вăл пуриншĕн те кирпĕч – кăмакисем пулаççĕ урăхларах, хăма вăл пуриншĕн те хăма – арчисем пулаççĕ урăхларах, пусма-тавар та çавах – тумтирĕ çĕленет урăхларах, сĕрме купăс вăл пуриншĕн те пĕр пек – кĕвви янăрать урăхларах...

Ку çеç те мар-ха. Акă пĕри ӳпкелешет хăйне алă паманнишĕн. Пĕр япалана ăнланмасть. Алă пани вăл тепĕр çын

аллине чăмăртани çеç мар вĕт-ха. Чи пахи кунта ал ăшшине пани, чĕрери туйăма палăртни, тепĕр çынна пĕтĕм ӳт-пĕврен тапса тăракан ырă вăйпа пуянлатни.

Тен, çавна пулах юратман çынна пĕртте алă парас килмест.

1994

Тепри ав хăйне ытла мăнна хурать. Ун пек чапли те, ун пек ăсли те, ун пек пултарулли те çуккă пек тыткалать. Сăмсине каçăртать те ури çĕре тивми çӳрет.

Анчах çак çынна пĕр япала канăç памасть: хăйне ыттисем хак пани тивĕçтермест. Темшĕн çке-ха çыннисем урăхларах шутлаççĕ, кăшт йӳнĕрех хаклаççĕ.

Сăлтавĕ паллă ĕнтĕ. Ячĕ те пур, тава тивĕçлĕ ятсем те, премисем те илсех тăрать. Анчах чысĕ çук. Вăл ăна çамрăклах çухатнă. Халь тен кулянать те пуль, каялла тавăрма çук. Укçа парса илĕччĕ... Илĕнмест.

Чыса ăна упрама пĕлмелле.

1996

Паянтан пач урăхла пурăнма пуçлатăп. Çӳлти хутран анатăп та хура халăх хушшинче çухалатăп. Никам та ан паллатăр. Çӳрем çулне çухатнă комета пек, çурт купалакансене, асфальт саракансене, суха тăвакансене сĕртĕне-сĕртĕне илсе. Раççей пирки, Чăваш Ен пирки шутланисем манăçа юлччăр. Текех ватмастăп пуçа, ыраттармастăп чĕреме.

Паянтан эпĕ кахал çын пурнăçĕпе пурăнма пуçлатăп. Нимĕн те тумастăп. Ĕçетĕп те çиетĕп, тăраниччен çывăратăп. Атăл хĕрринче кăштах уткаласа çӳретĕп те каллех...

Паянтан эпĕ пач урăхла çын. Çакна шута илĕр те текех ан

чăрмантарăр. Манăр мана. Хăçан та пулсан хамах аса илтерĕп. Уйăрălса каяс умĕн кăшт йăлкăшса илĕп те ĕмĕрлĕхех сӳнĕп.

1997



В. Давыдов-Анатри (сылтăмран пĕрремĕшĕ), Ю. Семендер (виççĕмĕшĕ), А. Кибеч (пиллĕкмĕшĕ), П. Ялгир (улттăмăшĕ) ытти республикăсемпе облаçсенчен килнĕ учительсем хушшинче.

Тавлашу та, харкашу та вырăнсăр сăмахран пуçланать. Темшĕн-çке çакна шута илместпĕр. Нумай пуплешетпĕр, шутламасăрах сăмах çине сăмах купалатпăр. Шăп çавăн чух тепĕр

çынна кӳрентерекенни сиксе тухать. Пуçланать вара харкашу.

– Мĕншĕн çапла каларăн?! – кăшкăрать пĕри.

– Эпĕ сана кӳрентерес тесе каламанччĕ, – хуравлать сăмах хуçи.

Лешĕ хăйĕннех перет. Чĕлхе вĕçĕнчен вĕçерĕнсе кайнă сăмах хăй ĕçне тăватех.

Апла эппин кашни сăмахăн хăйĕн вырăнĕ пур. Вăл çеç те мар, вăхăчĕ те пур. Ăнсăртран сиксе тухнă сăмахăн та, маларах е ытлашши кая юлса каланин те усси сахал. Тепĕр чух сиен те кӳрет.

Каланă сăмах яланах вырăнлă пултăр.

1994

Яковлев, Çеçпĕл, Урдаш, Ухсай... Вĕсем мĕнлерех çынсем пулни – хăй вăхăтĕнчи çынсем валли. Темлине те курнă пуль, тĕлĕнни те, савăнни те пулнă пуль.

Пирĕн вĕсемпе пурăнас çук, ачасене шыва кĕртсе кумаллă пулас çук.

Пирĕншĕн чи хакли – еткерлĕхĕ пахи. Темле элек сарсассăн та, юриех усалтарах кăтартма тăрăшсан та çын пахалăхне эпир ун ĕçĕнче куратпăр.

Усаллине вĕсем тахçанах хăйсемпе илсе кайнă, пире валли вара ыррине кăна хăварнă.

1996

Акă пĕри хаваслансах телевизорпа пуш параппан çаптарать. Вăл тахçан ĕлĕк пулнă иккен Нефертити. Ун пекех маттур, ун пекех хитре.

Камӑн пулас килмест ӗнтӗ пуль тӗнчипе паллӑ хӗрарӑм пек?

Анчах чи пысӑк тӗлӗнтермӗш вара пачах урӑххи. Вӑлах пулнӑ иккен Лермонтов та.

Ак тамаша, хӗрарӑмран та арҫын пулса тӑнӑ. Кайрах каллех Ахматова, Цветаева... Вӑл такам та пулнӑ, хӑй кӑна пулайман.

Мӗн тери шел. Курасчӗ ӑна хӑй пек пулнине, хӑй пуҫӗпе шухӑшланине, хӑй чӗлхипе калаҫнине, ҫырнине.

1996

Айдаш калашле, пурнӑҫ вӑл пӑтранчӑк юхӑм ҫеҫ. Пӗлместӗп, пуриншӗн те ҫапла-ши? Пӑтраштараканӗсем вара чӑннипех те ҫителӗклӗ. Пӗри кунталла туртать, тепри тепӗр еннелле. Пӗри каланине илтетӗн – тӗрӗс пек. Теприне итлетӗн – вӑл та йӑнӑшмасть пек. Анчах ӑшра уҫӑмлӑх ҫук. Калаҫӑва ӑна чӑнах та тӗп шухӑша пытарма ҫеҫ тунӑ пулас. Калаҫма юратаканнин чӗлхи яланах яка, ӗненӳллӗ.

Юрать-ха ҫӗр ҫинче ӗҫ пур. Пуҫри пӑтрашӑва, шикленӗве шӑпах ҫавӑ татса парать те. Илтнӗ сӑмахпа ҫеҫ ан ҫырлахӑр, ӗҫне тӗплӗнрех тишкерӗр.

Сӑмах вӑл – сӑмах. Ӗҫ вӑл – ӗҫ, куҫа уҫӑмлӑн курӑнакан пулӑм. Унта сӑмахӗ те, чӑнлӑхӗ те пӗр ҫӗрте, пӗр тӗвӗре.

1996

Каҫар мана, Кашкӑр Хуначи, хӑвӑн хӑватсӑр шӑллуна. Сулӑмлӑ пулӑшу параймарӑм. Курни, калаҫни сахал пулман, анчах пӗри тухмасть асран.

Хуса ярсассӑн Мускава хӑв укҫупа лартнӑ хваттере пырса кӗтӗмӗр пӗрле. Манран малтан кунта Шупашкар ҫынни пулман.

Сётел-пукантан малтан эсĕ илнĕччĕ ун чух кĕнеке хумалли çӳлĕксем, шкапсем. Ним тума аптранипе лартса патăм çав шкапсен алăк хăлăпĕсене. "Халĕ ĕнтĕ çакăнта эс хăвартăн ĕмĕрлĕхе хăв аллусен ăшшине", – тесе тав тунине нихăçан та манас çук. Пĕчĕк ĕçех çапла пысăк хак панине унччен курманччĕ.

Халĕ ĕнтĕ хам та çапларах. Мĕншĕн тесен тем пек пысăк ĕç те пĕчĕккинчен пуçланать. Пысăк ĕç вăл пĕчĕк ĕç ачи кăна.

Каçар мана, йывăр чух пысăк пулăшу параймарăм. Хам та айван пулнă. Халĕ те пулин ман ырлăхăм сан пуçу çине çусах тăтăр.

1997

Чунăм чухăн, тăлăх. Унта ырлăх çук. Ăна хăй килĕнчен хаярлăхпа кĕвĕçӳ хăваласа, кутран тапса кăларса янă. Халĕ унта çавсем хуçаланаççĕ. Мана унталла – кунталла турткалаççĕ, хăйсемпе пĕр майлă пулма хистеççĕ.

Ырă чух, хама лайăх туйнă чух, эпĕ кун пек марччĕ. Ыттисене те ырă тăвас килетчĕ.

Халĕ пачах урăхла. Япăх туятăп хама. Чунăм тăвăлать, тĕл пулакансен савăнăçĕ тата хытăрах ыраттарать. Тен çавна пулах ыттисене те усал тăвас кăмăл хуçаланать.

Тепĕр тесен, мĕншĕн ман çеç асапланмалла вара? Йӳçĕ çимĕçе ыттисем те тутанса пăхчăр эппин.

1996

Ӳсĕр чăваш пек вĕçкĕн çын урăх çуках. Палламалла мар улшăнса каять. Чĕлхи ниçта çакланмасть. Унтан ăсли те, вăйлă те, хăюлли те, пуянни те çук. Ачисемпе мухтанма пуçласан вара...

Ӳсĕр чăваш – суя чăваш. Ун савăнăçĕнче тĕреслĕх çук.



А. Кибеч ял ёҫченӗсемпе калаҫать.

Ӗмӗтленни чӑнах та пурнӑҫа кӗнӗ пек курӑнса кайнӑ суя самантсӑр пуҫне кунта урӑх нимех те ҫук. Вӑхӑтлӑх пулӑм. Урӑлса пынӑҫемӗн веҫех куҫран ҫухалать. Каллех йывӑрлӑхсем капланса килеҫҫӗ. Чӑваш пурнӑҫӗ пуҫланать...

Ҫӗр ҫинчи чи пысӑк тавлашу пӗрре ҫеҫ. Турӑ пур-и е ҫук-и? Татӑклӑн никам та калаймасть.

Турра таҫта инҫетре, ҫӳлти тӗнчере пурӑнакан ҫын пек

кăтартма тăрăшни айванлăх çеç. Кулăшла та курăнать. Ун пек ăнланупа ниепле те килĕшме май çук.

Маншăн турă – çын ăшĕнче вырнаçнă ырă сăнар. Çын сăнарĕ. Урăхла пулма та пултараймасть. Мĕншĕн тесен турра ăна çынсем хăйсем шыраса тупнă. (Арăслансем тупнă пулсан, паллах, арăслан пек курăннă пулĕччĕ). Кирлĕренех тупнă пуль çав.

Турă ятпа çирĕпленнĕ сăнар кашниннех пултăр эппин. Идеал вырăнне илĕртсе тăтăр, пире пулăшса пытăр. Турăпа танлашаймăпăр, анчах тĕслĕх вырăнне хурса ун патнелле туртăнни çынна пăсас çук.

Турăпа никама та ан хăратăр. Ун сăнарĕ ырăпа çеç ялкăшса çиçсе тăтăр.

Пире пурсăмăра та ырă турă çеç кирлĕ.

1996

Ачалăх вăл айванлăх, парăма кĕнĕ тапхăр. Çуралнă-çуралманах хатĕр пурнăç ытамне кĕрсе ÿкетпĕр те "пар" сăмаха çеç юратарах паратпăр. Кĕçех ав парăмсене тавăрса памалли вăхăт та çĕмĕрттерсе çитет. Кашнин çынлăхĕ мĕнле шайра тăнине шăпах çакăнта куратпăр та ĕнтĕ.

Пĕри хăй тивĕçне кăмăлпах пурнăçлать. Тепри вара...

Акă ваттисен çуртĕнче ларать пĕр карчăк. Хăйпе пĕрле пурăнакансене çине тăрсах ачисем çинчен каласа парать. Паллă та сумлă çынсемех иккен. Анчах...

Амăшне пĕрле усрама ăшă вырăн тупăнман, кăмăлĕсем те хытса ларнă, сивĕннĕ.

Тепри ав ялта пĕччен пурăнакан амăшне хĕл каçма та пулин Шупашкара илсе килесшĕн. Арăмĕ вара яхăнне те ямасть. Аннÿ сан япăх тумланать, вырăсла та ăстах мар тесе сивĕлет. Ачисем те çавнашкал, асламăшне курассишĕн çунмаççĕ.

Амăшĕ умĕнчи тивĕçе ывăлĕ пурнăçлаймасть, ачисемшĕн ырă тĕслĕх пулаймасть.

Пуçăмăрсем çине атте-анне ырлăхĕ çуса тăнă чухне эпир пурте телейлĕ. Парăмсене тавăрмалли вăхăт çитсен вара пăтăрмахсем сике-сике тухаççĕ. Ытларахăшĕ – хамăра пулах.

Илме яланах аван иккен, тавăрса панă чух вара...

1996

Тĕлĕнтермĕш япала. Шупашкарти пĕр кĕвĕç чун çăхав çырнă Мускава, хăй юлташне хурласа, хура тĕспе сăрласа. Пит хăравçă çын пулас. Алă пуснă ман ятпа. Те алли чĕтренĕрен, картне лартнă кăшт кăна.

Ман ятăмпа çырнă та-ха, анчах пĕрне чухлайман. Кибеч вăрттăн ĕç тумасть, хăй ятне те пытармасть. Мĕскер калас тенине халăх умĕнче калать. Мĕскер çырас тенине хăй ячĕпех пичетлет. Çакна пĕтĕм тĕнче пĕлет.

Калас кăмăлăм çапла. Усал ĕçсем тунă чух ман ятăма ан тĕкĕнĕр. Ырлăх патне çывхарма пулăшать пулсан, манран вара чару çук.

1996

Пасарта ларать пĕр ыйткалакан. Утайманскер, ачаранах сывмар ўснĕскер.

Укçи пуçтараннă самаях, эпĕ те хурса патăм кăштах...

Сасартăк илтрĕм кăшкăрса янине. Çавăрăнса пăхрăм. Ыйткалакан ура çине тăнă, анчах утаймасть. Аллисемпе хăлаçланса: "Тытăр ăна, тытăр! Укçана веçех туртса илчĕ!" – тесе кăшкăрать.

Куратăп, пĕр арçын çынсем хушшипе хĕсĕне-хĕсĕне пасар

алăкĕ патнелле васкарĕ. Чупса пытăм, пасар тулашĕнче хăваласа çитсе аллинчен ярса тытрăм. Хăраса ÿкрĕ. Чĕтрет. Çавăтса ыйткалакан патне илсе пытăм. Сылтăм аллипе тытнă пĕр ывăç укçана тавăрса пама хушрăм. Укçине ыйткалакан çĕлĕкĕ çине пăрахрĕ те карт! туртăнса айккинелле тапса сикрĕ...

Вăхăтра ярса тытнă вăрă хăравçă иккен. Хамран çамрăк, хамран çÿллĕ, хамран вăйлă арçын та тĕрĕслĕхе парăнчĕ.

1994

Астăватăп. Вăрçă мĕнле вĕçленнине те астăватăп.

Çĕнтерÿçĕ салтаксем яла паттăрăн килсе кĕчĕç. Анчах кĕске вăхăтрах вĕсен паттăрлăхĕ чакса ларчĕ. Пур çĕрте те юхăннă хуçалăхсем, нишлăх, выçлăх... Колхозсем те ячĕшĕн кăна.

Чунра хирĕçÿлĕх. Мĕнле-ха капла. Халь те куç умĕнче тăракан нимĕç ялĕнчи йĕркесем тата чăваш хушшинчи пурнăç шайĕ. Çĕрпе пĕлĕт тесен те тĕрĕсех пуль. Унччен пире калатчĕç, эпир чи пуяннисем, ăслисем, телейлисем...

Çĕнтерÿçĕ салтаксем ниçта кайса кĕрейменнипе черккене ытларах чуп тума пуçларĕç, колхоз ĕçкине те хапăл тусах йышăнчĕç.

Чăваш ялĕ вăрçăччен самай урă пулнă.

1997

Çын вăл пĕрре хăнăхнă йăларан пăрăнмасть. Шухăшланине тăвать, пурнăçлас тенине пурнăçлать. Чарма çук. Паракан паратех, илекен илетех. Веçех совесть йĕркелет. Пăсăлнин, намăса çухатнин чаракĕ çук. Тасин ĕçĕ те таса.

Эпĕ хама яланах икĕ çын пек туятăп. Пĕри ĕçлекенни, мĕн

те пулсан тӑваканни. Тепри айккинчен пӑхса, сӑнаса тӑраканни. Хама ҫапла тытнин усси пурах пулас. Хама хам вӑрҫма та вӗренсе ҫитрӗм. Йӑнӑшсем те кӑшт сахалланса пычӗҫ.

Ҫын шанчӑклӑхӗ совеҫрен килет. Совеҫлӗ ҫын – ирӗклӗ ҫын. Тӗнче ҫине уҫҫӑн та хӑюллӑн пӑхать.

Ӗмӗре совесть хушнӑ пек пурӑнса ирттерекенсем чӑннипех те телейлӗ. Таса.

1996



А. Кибеч ют ҫӗршыври наука конференцинче.

Чыса ӑна таптама памалла мар. Варалас текенсем тупӑнсах тӑрӗҫ, енчен те хамӑр харсӑр пулмасан.

Теприне ав асфальт ҫине пӑрахнӑ пирус тӗпӗ пек таптаса иртсе каяҫҫӗ, сураҫҫӗ, кулаҫҫӗ. Анчах вӑл нимӗн те шарламасть, чысне хӳтӗлемелӗх хӑюлӑх ҫитерейместь.

Ун пек ҫынна хӗрхенес те килмест. Ҫапла кирлӗ те ӑна, таса чысне варалама ирӗк параканскерне.

Чыса ӑна упрама ҫеҫ мар, хӳтӗлеме те пӗлмелле. Уйрӑмах паян, ыттисем лайӑх пурӑннишӗн, пултаруллӑрах пулнишӗн кӗвӗҫекенсем йышланса пынӑ чухне.

Чыса таптама памалла мар.

1996

# КУÇ ИЛЕМЕ КИЛĔШТЕРЕТ

Çын çумĕнче яланах икĕ тĕрлĕ хитрелĕх. Пĕри вăл сăн-питрен, ӳт-пĕврен килĕшӳллĕ пулни. Çакă, паллах, ашшĕ-амăшĕн парни. Турă пани тесен те ытлашшиех мар.

Тепри вара – çын хăй тăрăшса пуянлатнă хитрелĕх. Кунта пур тăхăнма пĕлни, ыттисен умĕнче сăпайлă тытма хăнăхни, таврари илеме хаклама пĕлни. Чун илемĕ тейĕпĕр. Çакă вара веçех хамăртан килет.

Сăнран хитре çуралнисем пур-ха, чун илемĕ чухăнрах. Тепри ав сăн-питрен ыттисенчен уйăрăлсах та тăмасть, чун илемне пула питĕ хитрен курăнать.

Пурнăçра пурпĕрех чун илемĕ пахарах. Ыттисене ăшă парса тăрать, нумая пырать.

1996

Тĕкĕр умĕнче тăрать пĕр ватă çын. "Эпех-ши ку", – тет пулас. Тĕкĕрĕ вара çине тăрсах ĕнентерет. "Эсех, эсех. Сана лайăх астăватăп", – тет. – Çамрăк чухне, яш чухне яка питлĕччĕ эсĕ, кăтра çӳçлĕччĕ эсĕ. Астăватăп яка тăхăнса вăйăа васканине, авланас умĕн çĕнĕ костюмпа ман умра тăнине, вăрçă хирне тухса кайсан арăмупа ачусем макăрса юлнине, каярах ав аманнишĕн панă медаль çакнă симĕс тумпа уткаласа çӳренине, хăв çук чухне кӳршĕ арçынни арăму çумне çулăхнишĕн çапăçса кайсан кăвак куçпа çӳренине...

– Астăватăп сана колхоз председательне суйласан утту кăштах улшăннине, çĕнĕ тырра ытларах патшалăха парас ырăнне колхозниксене те самай валеçсе панăшăн райкомра

пӗҫеркке панишӗн мӗнле хыпса-ҫуннине, ывӑлӳ-хӗрӳсене туйлӑ авлантарнине, качча панине...

– Халь куратӑп арӑмупа иксӗр кӑна тӑрса юлнине, вӑйсем чакса пынине...

Ан хӗрхен мана. Ҫапса ват. Курас килмест тупӑк йӑтса тухнине.

1994

Шултра чӑваш сахалтарах. Ӑна куратпӑр хамӑрах. Куратпӑр кӑна мар, мӗншӗннине те чухлатпӑр.

Эпир те шултрисен, вӑйлисен шутӗнчехчӗ. Пӑлхар патшалӑхӗ арканни пӗтерчӗ.

Тыта-тыта кайрӗҫ чи хитре хӗрарӑмсене. Улӑп пек тӗреклӗ арҫынсем ют ҫӗрти йывӑр ӗҫпе хуҫӑлчӗҫ, салтакра пӗтрӗҫ. Вӑрлӑх пахалӑхӗ чакса пычӗ. Нишлӗ пурнӑҫ, начар апат халӑх сывлӑхне те, илемне те хавшатрӗ.

Ҫук, эпир ялан кун пек пулман. Хӑш чух тата славянсемпе хазарсенчен те маттуртарах пулнӑ. Патшисем те хамӑрӑннисемех пулнӑ. Варягсем мар.

Юрӗ. Йӑх шултралӑхӗ пирки пуҫа пит ватар мар. Телей вӑл ӑна пӑхмасть. Сывлӑхлӑ пулар. Ҫирӗп ӑру ӳстерер. Вӗренӳпе, пӗлӳпе мала ӳкер. Вара йӑлтах вырӑна ларӗ. Пысӑк ҫын та пӗчӗкреххин тарҫи пулӗ. Ытларах ӳтпе чун хушшинчи килӗшӳлӗх пирки шутлар.

1996

Мӗнле-ха капла. Шӑпам ман пулчӗ урӑхла. Ытти халӑх ҫыннисен пек мар. Тӗнче мана палласшӑнах пулмарӗ.

Хам вара ҫине тӑрсах тӑрӑшрӑм. Германи ҫыннисемпе нимӗҫ культури пирки, Греци ҫыннипе грексен авалхи мифӗсем ҫинчен, эрменсемпе вӗсен ӗлӗкхи ҫырулӑхӗ пирки, Ирак ҫыннипе унта тӑватӑ пин ҫул каялла пурӑннӑ шумерсем ҫинчен калаҫма хӑюлӑх ҫитертӗм. Калаҫмалли ман ҫук мар итальянсемпе, акӑлчансемпе, французсемпе, китайсемпе. Вырӑссем пирки вара шарлама та кирлӗ мар. Раҫҫей историпе культури ҫинчен каласа парса миҫе пин ҫын куҫне уҫман пуль. Вырӑссем хӑйсем пӗлменнине те сахал мар уҫса панӑ.

Хама чӑвашсем ҫинчен йӗркеллӗ каласа паракан ҫынна урӑх халӑхсем хушшинче тӗл пулмарӑм. Апла пулсан мана вӗсем пачах та пӗлмеҫҫӗ. Эпӗ сутмалли юмах вырӑнне ҫеҫ. Тулашӗнчен пӑхсан тен ытти ҫынсем пекех. Анчах ман тата сисӗм-туйӑмпа ӑс-тӑн тӗнчи те пур вӗт-ха. Эпӗ чӑваш культурин пӗр пӗчӗк тӗпренчӗкӗ мар-и-вара.



А. Кибеч Шупашкарти наука конференцине килнӗ хӑнасем хушшинче.

Шел, эп ыттисене палларăм, вĕсем мана асăрхамарĕç Тен çавна пулах тăлăх çын туйăмĕнчен паян та тасалса пĕтейместĕп. Ачамăрсен шăпи мĕнлерех пулĕ-ши.

1997

Савăнатăп. Пĕр çутçанталăкшăн кăна савăнатăп. Хăй йĕркипе пурăнать.

Акана тухма хатĕр-и е хатĕр мар-и, халăх суйлава йышлăн хутшăннă-и е хутшăнман-и, президент сывах-и е кăштах чирленĕ-и, арман чулĕ çаврăнать-и е çаврăнмасть-и, çăкăр лавкки ĕçлет-и е ĕçлемест-и – çутçанталăкшăн пурпĕрех. Кун хыççăн кун килет, хĕл хыççăн çу çитет. Мĕн пулса иртмелли пулса иртетех. Каллех чĕрĕлӳ, каллех çĕнелӳ. Çакна эпир асăрхатпăр, уншăн хĕпĕртетпĕр.

Савăнатăп, çутçанталăкшăн савăнатăп. Ирĕклĕ вăл. Вăйлă вăл. Хăйне пăхăнтарма çине тăракансене часах тăн кĕртсе илет.

Тĕрĕссипе каласан, этем вăл çутçанталăк ачи çеç.

1994

Çакă ялта пур-ши арçынсем. Кĕперĕ ишĕлсе аннă. Ура йĕпетмесĕр çырман тепĕр енне каçма çук. Униче карти те тӳнсе кайнă. Ăна вырăна лартма арçын алли çук.

Çакă ялта пур-ши арçынсем. Çăл пурисем чалăшса кайнă. Урамĕсен латти çук. Ял витĕр тухнă чух ура хуçас хăрушлăх пур.

Çакă ялта пур-ши арçынсем. Каçхи урам тĕп-тĕттĕм. Юпа çинчи хунарсем те çунма пăрахнă тахçанах...

Сывă та илемлĕ ачасем çуратмашкăн çакă ялта чăн-чăн арçынсем пур-ши?

1996

Хĕрарăм илемĕ маншăн кăна пулмалла теттĕм. Урăххисен ытамĕнче пулнине пĕлсенех пăрănаттăм. Анчах сана тĕл пулсан пачах пăтрашăнса кайрăм. Хама хам та ĕненми пултăм.

Сисетĕп-ха, сан патăнта пулнă арçынсен шучĕ ӳссех пырать. Апла пулин те санранах юрату ыйтас килет, вăхăтлăха та пулин санпа пулас килет. Енчен те эсĕ маншăн хăв туйăмна шеллес пулсан, çакна чăтса ирттерме çăмăл пулас çук. Санран тӳрех: "Мĕншĕн-ха эсĕ ыттисемшĕн пур, маншăн çук. Эпĕ ыттисенчен начар-им, сана тивĕç мар-им", – тесе ыйтнă пулăттăм.

Арçын туйăмĕ вăл çапларах. Унта яланах ăмăрту туртăмĕ пур. Ĕмĕчĕ шикленӳллĕ пулсан та аса илтерсех тăрать, малаллах чĕнет.

1994

Çук, ӳнер тĕнчи вăл урăхла. Кунта кашни çунатлă, пултаруллă, талантлă. Турри пани пысăк-и е пысăках та мар-и, ятне халăхра хăварасси пирки шутлатех. Пушкин та уççăнах каланă.

Тен çакă вăл пит япăх япалах та мар. Çын ĕненсе пурăнать. Çырать те çырать, купи-купипе сăрă пĕтерет, кĕвĕ кĕвĕлет... Тен мана каярах ăнланĕç, юратĕç тесех çĕре кĕрет.

Вăхăчĕ вара... Али ун ытла та шултра. Вак-тĕвек тухса ӳкет те çухалать. Чи пултаруллисем, чи талантлисем кăна тăрса юлаççĕ.

Хăв пирки тем шутласан та, пĕтĕмпех вăхăт татса парать.

1996

Çамрăк чухне кун пекех марччĕ, кăмăлăм самай хытăрахчĕ.

Чунăма веçех музыка сухаласа тухрĕ, сисĕм-туйăм çимĕçĕ шăтса ÿсме пултаракан хура тăпрана çемçетрĕ, кăпăшкалатрĕ. Халĕ вара халăхăма мĕнле çимĕç парнелесси хамран килет. Вăрлăхне пăрахаканĕ пурнăçĕ хăех. Малтан чун ыратăвĕ е савăнăçĕ, унтан хайлавĕсем шăранса тухаççĕ. Паллах, пурте пĕр пек мар. Ыттисен чунне хускатаканнисем çуралсан тем пекехчĕ.

Çыравçă ятне çĕнсе илмелли пĕртен-пĕр мел çавă çеç. Урăххи пулас та çук.

1996

Вулакан çыракана шанать, ĕненет. Пичетленĕ сăмаха пысăка хурать. Уншăн пур çыравçă та вулакан валли çеç çырассăн туйăнать. Паллах, йăнăшать.

Хăйшĕн çеç çыракансем те çук мар. Акă пĕри хăйне Александр Македонски ăрăвĕнчен тесе ĕнентерсе çырать, патша йăхĕнчен тухнине кăтартасшăн çунать. Ку автора вара тĕрĕслĕх ним тума та кирлĕ мар. Çырса пултăр.

Тепри тата кăçал çырнă сăввисене çирĕм çул каяллах çырнă тесе пичетлеме юратать. Пăхăр, эп ун чухнех мĕнле хăюллă пулнă тесшĕн курăнать.

Демократи, паллах, çыравçăна уçăмлăх, ирĕклĕх парать. Çав хушăрах тата тĕрĕслĕх тилхепине çирĕп тытса пыма та хушать.

Халăха тĕрĕссине çеç каласчĕ, çыравçă тивĕçне таса чунпа, ырă кăмăлпа пурнăçласа пырасчĕ.

1996

Çĕнĕ тапхăр пусланман пулсассăн çĕнĕлле çыракан çыравçăсем те пулас çукчĕ. Пĕр майлă, шак та хамăра хамăр

ырласа çырнипех çырлахма тиветчĕ. Пурнăçăн тӳнтерле енĕсене уçса паракан та пулмастчĕ.

Халĕ ĕнтĕ куратпăр, кивĕ самана хăйпе пĕрле рупорĕсене те илсе кайрĕ. Вĕсене паян вуламаççĕ, вĕсене паян пичетлемеççĕ. Ятне каласан та хыпăнса ӳкмеççĕ.

Пĕрисем каяççĕ, теприсем килеççĕ. Пăшăрханма кирлĕ мар. Килнисен хушшинче хама та куратăп. Демократи юхăмĕ тапранман пулсан Кибеч те пулас çукчĕ. Тарăн шухăша яракан юрăсен хумĕ те çĕкленес çукчĕ.

Çĕнĕ вăхăт çĕнĕ юрăçсене çуратать.

1996



Сулахайран сылтăмалла: С. Азамат, А. Кибеч, Л. Сарине.

Пире паян Швеци поэчĕсен айван сăввисене чăвашла

пичетлесе чыхӑнтараççӗ. Те юри начар поэтсене суйласа илеççӗ, те тӑлмачӗсем пултарусӑр. Калама хӗн.

Вулакана ӑнланмалла мар мелсемпе çыракансем пирки шӑналӑк пек статьясем кӑлараççӗ. Халӑх юратса вулакан çыравçӑсене асӑрхамаççӗ.

Çук ӗнтӗ. Вылявла та пӑтранчӑк поэзи пире валли мар. Вӑл халӑхлӑх тымарӗ типнисем валли кӑна.

Сисетӗп, туятӑп, чӑваш поэзин сӑпки кӑнтӑраллах. Тен çавна пулах Гильгамӑш çинчен вулама юрататӑп, Тагор умӗнче пуçӑма таятӑп.

1996

Хӗвел анӑçнелле пӑхрӑм та пӗр пулӑма асӑрхарӑм. Унтан кунталла сӑрхӑнса килекен поэзи пачах та пирӗнни пек мар иккен. Вӑл темшӗн типшӗрекен курӑка аса илтерет. Сӗткенӗ ӑçта кайса кӗнӗ-ши вара? Тен, çавна пулах чӑваш чунне хытах хускатаймасть. Паллах, çакӑ сӑлтавсӑр мар.

Унта самай сисӗнет çут çанталӑка шанманни, çынна хӑйне айванлатса кӑтартни. "Çакӑ çутӑ тӗнчере вӑйли çук та этемрен", – темелӗх унта паян хӑюлӑх çук. (Çапла калама пултарнӑ чӑваш кӑна.)

Хӗвел анӑç поэзине Христос тӗнӗ типӗтсе пымарӗ-ши?

1997

Пур çӗрте те виçмелли мелсем, виçесем. Шӗвеке виçетпӗр куркапа, кӗлетри тырра – пӑтавккапа, ялпа ял хушшине – çухрӑмпа...

Укçапа виçмелли те тупӑнсах тӑрать. Уйрӑмах çын ӗçне, лавккари тавара хак панӑ çӗрте. Анчах...

Мана паян шиклентерет пур çĕрте те укçа пуçа çĕклени, хуçаланма тăрăшни, – тĕрĕслĕхшĕн хăрушлăх пурри.

Мана паян хăратать çын чысне ылтăн чĕпĕтсе тăни, хамăра совесть хушнă пек тыткалама кунран-кун йывăрланса пыни.

Ирĕксĕрех куç умне тухса тăрать çамрăклăх.

Пĕр пекрехчĕ ун чухне. Хамăр пеккисем, укçасăррисем, темĕн чухлехчĕ. Апла пулин те, Нар пек чипер хĕрсемех ун чух пирĕн çумраччĕ. Кĕсье çӳхе пулсан та чунсем пирĕн тасаччĕ...

Халĕ ĕнтĕ пĕр тĕллев. Тем чул укçа илĕртсен те чысăма сутас марччĕ. Шанчăклă çын шутĕнчен тухса ӳкес марччĕ.

1996

Нумай енлĕ ĕçлетĕн, сăввусене хăçан çырма ĕлкĕретĕн вара текенсем те тĕл пулаççĕ.

Мĕнле хуравлам-ши? Хам та пĕлсе çитерейместĕп. Анчах кăштах чухлатăп. Сăвă çырма уйрăм вăхăт кирлех те мар. Вăл хăех майлашăнса пырать. Веçех таврари пулăмсенчен, пурнăçран илнинчен шăтса тухать. Асăрхама кăна пĕлмелле, унчченхине лайăхрах аса илмелле. Вара сăнарĕ те курăнса каять, хут çине те час ӳкет. Сăвва ăна пурнăç суратать. Ăсталăхĕ – çырассинче кăна.

Пахалăхĕ вара ыттисем асăрхайман пулăмсемпе япаласене уçса панинче, ыттисем çырман йĕркесенче. Çак çĕнĕлĕх çуккă пулсан – хăвна çыравçă теме ан васка. "Поэт" сăмахпа та ан выля. Çыракансем нумай, поэтсем вара питĕ сахал.

1996

Çĕре улталаймăн. Вăл хăй ĕçне тăватах. Лайăх çыншăн – лайăх, япăххишĕн – япăх.

Çӗр ытларах хӑй хуçине, хӑйне хисеплекене килӗштерет. Çапла пулмалла та ӗнтӗ. Çӗр вӑл çын пекех, чӗрӗ, чунлӑ, веçех туять. Ун пек пулман пулсан кашни çулах çӗнӗ çимӗç çуратса пире ырлӑх кӳрес çук.

Çӗр пӗтӗ вӑхӑтра лӑпкӑрах пулмалла. Ӑна ача амӑшӗ пулма хатӗрленекен хӗрарӑма пӑхнӑ пекех пӑхмалла. Апатне те вӑхӑтра çитермелле, шывне те ӗçтермелле. Вара пархатарӗ те çителӗклех пулать.

Çӗрпе пӗр шухӑшлӑ пулар, ун илемне упрар.

1996

Шекспир калашле, пӗтӗм тӗнче вӑл театр. Кашни хӑй рольне вылять. Унта тем хӑтланакан та пур.

Пултӑм пӗр çӗрте, ӳнерçӗсен куравӗнче. Савӑнмалли сахал мар. Тӗлӗнмелли те çук мар. Акӑ тамаша...

Çара пакка çын ларать. Хӑйне сӑнчӑрпа кӑкарнӑ. Юнашар – хӑмаран çапса тунӑ йытӑ йăви. Çынни йытӑ пек вӗрет, улать, шӑлӗсемпе шаккать, çыртма та пикенет.

Сасартӑк пӗр çынна шӑлӗсемпе урараи ярса тытрӗ. Ямасть. Леш турткалашать, кӑшкӑрать. Хуралçӑсем пырсан тин ячӗ.

Çапла вара ӳнер çынна çыртнине хам куçпала хам куртӑм. Авангард сӗрӗмӗпе тӑнран тухнӑскерӗнчен тем те кӗтме пулать иккен. Виçи çук.

Акӑ тата тепри, пӑтрашуллӑ сӑвӑсем çыраканни. Хӑй çуралнӑ кун тӑван яла пырсан иртенпе кӗтсе тӑракан шкул ачисем патне кӗрсе тухма ӳркеннӗ. Тӑван шкула çитерекен çӗр утӑма çӗнсе илмелӗх мехел тупайман.

Авангард текенни халӑхлӑха çеç мар, çынлӑха та типӗтет иккен.

1996

Эсӗ хитрине хам куҫпа хам куртӑм. Килентӗм. Ӗнентӗм. Ҫырса сӑнарлама тӑрсан йывӑрлӑха кӗрсе ӳкрӗм. Чӗлхем чухӑн, сӑмахӑм ҫитмест.

Сӑрӑпа сӑрласа сан сӑнна уҫса парӑттӑм, анчах чун илемӗ патне ҫывхараймӑп, кӑтартаймӑп. Юлӗ пытанса.

Мӗн тӑвам-ши? Ҫырни те, ӳкерни те ҫителӗксӗр; мана ҫырлахтарас ҫук. Кашни кун курса калаҫнине, санра ҫиҫсе тӑракан илемпе киленнине пурпӗрех ним те ҫитес ҫук.

Вилес пулсан та пӗртен-пӗр ҫухату эсӗ ҫеҫ. Эсӗ ман пурнӑҫ. Вилӗм те санран уйӑрӑлни ҫеҫ. Ыттишӗн кулянмастӑп.

1996



А. Кибечпе Г. Иванов ентешлӗх уявне килнӗ хӑнасене саламлаҫҫӗ.

Çыравçă ĕçĕ те пит çăмăлах мар. Паллах, мĕн те пулин çĕннине калас тесен, вулакансене халиччен тĕл пулман сăнарсемпе паллаштарас тесен.

Чи кăткăсси – сăмахсене ала витĕр кăларасси. Ала тĕпне юласшăнах мар, туха-туха ӳкеççĕ.

Ак ĕнер те асапланса çӳрерĕм. Çĕнĕ сăввăмри пĕр йĕрке канăç памасть кунĕпех. Лекци вуланă чухне те пуçран тухмасть.

Каç та пулчĕ. Çывăрма та вăхăт. Шухăшласа выртатăп тĕттĕм пӳлĕмре. Ыйхă килмест. Вуншар вариант пуçра çаврăнать. Акă кантăкран тул çути те сăрхăнса кĕме пуçларĕ. Ĕçе кайма та вăхăт...

Урампа васкаса пынă чухне сасартăк пуçа пырса кĕчĕ пĕр йĕрке: "Çĕнĕ куна Нар пек сăн пар!" Çапла икĕ йĕрке тупрĕç пĕр-пĕрне:

> Çĕрпе Хĕвел пире вăй пар,
> Çĕнĕ куна Нар пек сăн пар", –

юрлатпăр халĕ юрăра.

Вулаканшăн, юрлаканшăн, тен, нимех те мар. Анчах, мĕнле çуралнине шута илсен, çакă йĕрке маншăн питĕ хаклă.

1994

Ваттисен хорĕнче пикесем юрлаççĕ. Сассисем уçах мар пулсан та, эп илтетĕп вĕсен çамрăклăхне, сăнран чакнă пулсан та, эп куратăп вĕсен илемне...

Çакна туйма, çакна курма хальхи çамрăксене хĕнтерех те-и тен. Маншăн вара йывăрлăх çук. Мĕншĕн тесен, вĕсем пурте ман тантăшсем. Эпĕ вĕсен илемĕпе киленсе ӳснĕ. Вĕсен çепĕçлĕхĕ, сăпайлăхĕ мана ăшă парса тăнă...

Юрлăр, юрлăр, пикесем. Эпĕ каллех сирĕнпе. Сирĕн сассăртан хакли маншăн урăх нимĕн те çук.

1994

Хĕрхенетĕп сана, питĕ хĕрхенетĕп.

Илем тути-масине пĕлменни кашни утăмрах сисĕнет. Çук туйăма кивçен илеймĕн çав. Мĕн кăна тăхăнса пăхмарăн пуль, мĕн кăна çакса çӳремерĕн пуль – илемлĕ чăваш хĕрарăмĕ пулаймарăн. Чăваш пулма чăвашранах çуралмалла пуль çав.

Чăваш пек тыткалама та, калаçма та вĕренсе çитеймерĕн. Çирĕп пĕлӳпе культура çукки сисĕнет. Çакна ан ман, хаярлăхпа сăпайлăх нихăçан та туслă пулман.

Çырас енĕпе те ыттисенчен тăрса юлтăн шăхăрса. Мĕнле илемлĕ те витĕмлĕ сăнарсем парнелеççĕ паян халăха хĕрарăм çыравçăсем! Азамат кăна мĕне тăрать.

Кĕвĕç чуна кĕве кăшлать, шĕкĕ пекех шăтарать. Чуна çеç мар, сывлăха та пĕтерет. Çынна çӳççĕр, шăлсăр хăварать, илеме çисе ярать.

Хĕрхенетĕп сана. Пулăшма пулĕ-ши сана.

1994

Пăшăрханмалли, кулянмалли тупăнсах тăрать. Пĕри ав кулянать кушакки япăх çывăрнишĕн, тепри – хваттер тăвăрришĕн, ачисене лайăх тумлантараймannишĕн, апат-çимĕçрен хĕсĕкреххишĕн...

Мана халь пăшăрхантарать ыттисем çырнисене вуламашкăн вăхăт сахалли. Кун-çулăм иртсе пырать парта хушшинче ларакансен умĕнче тăрсах. Чи паха вăхăтсене, вăйпитти çулсене

парса пытăм çавсене. Çырасса та çывăрас вăхăтран чĕпĕткелесе илнĕ самантсенче çеç çыркаларăм. Вуласса та çаплах. Тăраниччен вулаймарăм.

Пĕлетĕп-ха, çыракансем йышлă. Пурне те вулас пулсан... Чунăм халь ытларах чипер ăстăнлă, сывлăхлă çын çырнисемпе кăсăкланать. Чирлисен хайлавĕсем илĕртмеççĕ. Чирлĕ çыравçăн чирлĕ туйăмĕсене хам çине илес килмест. Ун пек поэтсен сăввисене çине тăрсах чăвашсене сĕне кенсене сивĕлетĕп. Халăха паян сывлăхлă поэзи кирлĕ.

1997

Тунтикунри ирхи троллейбус мухмăрпала хĕн курать. Хĕсĕнсе кĕрсе тăрсан часах сывлăш пӳлĕнет, тухса утассăм килет.

Çук, курмастăп çак çынсене спортзалра, стадионра, паркра йĕлтĕрпе ăмăртса чупнă çĕрте...

Çук, курмастăп çак çынсене театрта, концертра, музейре...

Çуккă вĕсем библиотекăра, пĕр-пĕр паллă çыравçăпа ирттернĕ тĕлпулура. Курмастăп вĕсене ытти çĕрти ют çĕршыври илемлĕ вырăнсене курса çӳрекенсен хушшинче...

Ăçта вăхăтне ирттереççĕ-ши. Сăра пички кутĕнче çеç-ши вара. Пурнăç тĕллевĕ вĕсен мĕнре-ши. Черкке ӳпĕнтересси çеç-ши?

1994

Темшĕн çапла туса янă-çке-ха, сăнран начартарах, имшертерех хĕрарăмсем ача хыççăн ача туса параççĕ, илемлĕ те сывлăхлисем вара йăкăртатса çӳреççĕ, ытларах хăй киленĕвĕпе пурăнса ирттереççĕ.

Çакă вăл пурнăç илемĕшĕн калама çук пысăк çухату.

Халăха сывлăхлă та илемлĕ ачасем парнелекен хĕрарăм чăннипех те мухтава тивĕç. Унпа никам та танлашма пултараймасть – кирпĕч хураканни те, асфальт сараканни те, чугун çул юсаканни те, космоса вĕçекенни те... Тепĕр тесен тата ачисене йĕркеллĕ, тĕрĕс-тĕкел çуратса паракан хĕрарăмăн сывлăхĕ те çирĕпрех, хитрелĕхĕ те нумая пырать. Тухтăр патне чупарах параканнин илемĕ кĕске вăхăтрах шанать.

Хитре хĕрарăм час ан ватăлтăр тесен ăна ытларах ача çураттармалла, пепкисене çитĕнтерме пысăк пулăшу парса тăмалла. Ача çуратассине чи паха ĕç вырăнне хумалла.

Йĕри-тавра хитре çынсем ытларах пулсан пурнăç та илемлĕрех курăна пуçлĕ.

1994

Ун чух йăласем урăхларахчĕ. Салтакра пулман каччă сумлисен хушшинче марччĕ. Енчен те флота лексен вара, ун çумĕнче чи чаплă хĕрсеммччĕ. Салтака каяс килетчĕ. Анчах вăхăчĕ ытла та хуллен шăватчĕ...

Çул çитсен пĕр ӳсĕмсем тухса утрăмăр комиссие. Шур халатлă тухтăрсем тĕрĕслеççĕ сывлăха. Йывăрăшне, çӳллĕшне виççе пăхаççĕ кашнинне.

Ак манран маларах çӳллĕшне виçнĕ çĕре кĕрсе тăчĕ Микулай, тантăшсенчен чи пĕчĕкки. Асăрхарăм, кăштах чĕввĕн тăнине. Юрăхлă пулчĕ салтака. Юрласа çӳрерĕ тутăр сулласах...

Кайран салтакран килсен савăнтарчĕ туй туса. Яштак пӳллĕ арăмпа, хăйĕнчен самай çӳллĕ ачисемпе халь пурăнать савăнса.

1994

Мĕнлерех-ши эпир, мĕн енĕпе вăйлăрах? Пурлăхпа-ши,

политикăра-ши, мораль шайĕпе-ши, калама хĕн. Мĕншĕн тесен эпир кунта пачах та хамăр пек мар. Ыттисем вăй хуни, çич ют алли сисĕнет. Тĕнчери пăтăрмахсем пире те çавăтса кĕрсе каяççĕ те, урăхлатса яраççĕ.

Эпир ӳнерпе вăйлă. Çавăнта кăна хамăра хамăр пек туятпăр. Хамăр пек ташлатпăр, юрлатпăр, тĕрлетпĕр, ӳкеретпĕр... Хамăр туйăмпа хамăр хуçа. Малашне те çаплах пултăрччĕ. Ӳнер пире çынлăх шайне упраса хăварма пулăшса пытăрччĕ.

1996

Мĕн-ши вăл искусство? Тепĕр чух ултав пек те туйăнать. Унта çук тӳрĕлĕх, унта çук уçăмлăх. Акă тухрĕç сцена çине хĕрĕх çын. Çине тăрсах турă юрри юрлаççĕ. Анчах туррине ĕненеççĕ-ши. Çакна чиркĕве пынă çынсен юррипе танлаштарма пулĕ-ши? Çук пуль.

Театр та çавах. Мĕнле сăнарсем калăпласа кăтартмаççĕ пуль пире. Сцена çинче мĕн пулса иртни сисĕм-туйăма хускатать – савăнтарать те, тарăхтарать те, кулянтарать те, макăртать те...

Театрта ĕçлекенĕ уншăн хытă хĕпĕртет, тепĕр чух тата мухтанса та илет. Анчах пĕр япала шиклентерет. Ырă сăнар тăвакансем пурте ырă çынсем-ши? Пире ырра вĕрентекенсем хăйсем мĕнлерех-ши? Тĕмшĕн-çке-ха ыррине ыр çынран илес килет. Театрти вылява ĕненес килет, ултав вырăнне хурас килмест.

Апла пулин те ытлашши пăшăрханар мар-ха. Искусствăри ултав саманчĕ вăл чăн-чăн ултавах пулас çук, вылявлă ултав çеç. Сиенлĕхĕ ун ытлашши пысăк пулас çук. Пăтраштарса кăна ярас марччĕ. Пурнăç вăл пĕр япала, искусство – урăххи. Вăл пурнăç тĕкĕрĕ кăна.

1994

Поэзи анинче кашнин хăй каçалăкĕ, кашнин хăй кĕлти, çĕмелĕ.

Пĕри ав пĕрмаях хăй ăшчиккинче чакаланать. Те сывлăхĕ хавшакран, те пурнăçĕ ăнманран вулакансене йӳçĕ çимĕçсĕр пуçне нимех те параймасть.

Тепри тата шак та юрату çинчен çеç çырать. Ыталаса чуп тунисĕр пуçне ниме те мухтамасть. Утиял айĕнчи поэзипех поэт шутĕнче çӳрет.

Çав хушăрах куратпăр урăхла çыракансене те. Кусене ытларах халăх шăпи кăсăклантарать. Вĕсен хайлавĕсенче сисĕнет хальхи самана таппине лайăххрах туйни, халăх нушине чĕре патне илсе çырни. Çакă паллах, çăмăл мар. Пурнăçри пулăмсене пур енлĕ тишкермелле, пĕлессе те нумай пĕлмелле.

Поэзи ани сарлака. Унта такам та, темле çыракан та пур.

1997

Курасчĕ сан художник ĕçленĕ чух хăйне мĕнле тыткаланине. Эпĕ куртăм те тĕлĕнтĕм.

Аллипе çеç мар, пĕтĕм ӳчĕпе ĕçлет. Пит-куçĕ те улшăнса каять, пĕрре çуталса, тепре тĕксĕмреххĕн курăнса илет.

Сасартăк çĕкленет те Страдивари тунă купăс хĕлĕхĕ пек туртăнса илет. Çын ӳчĕ кĕç-вĕç янăраса каяссăн туйăнать. Тен çав самантра ун ăшĕнче кĕвĕ янăрать? Пĕлме çук.

Ӳнер çынни ĕçленине курсан ывăнни те иртсе каять, шăмшакран йывăрлăх тухса ӳкнĕн туйăнать, юнра темле вăй хускалса илет, пурăнас килет.

1996

# ТĔНЧЕ ТИЛХЕПИ – ЭТЕМ АЛЛИНЧЕ

Паянхи пурнăç тытăмĕ пачах тӳнтерле. Урапи малта сиксе пырать, лаши – хыçалта. Урăхларах каласан, укçа мурĕ мала ӳкрĕ, тавар тăвасси юлса пырать. Пур çĕрте те укçа хуçалана пуçларĕ. Укçаран укçа тăвакансем те йышланса кайрĕç. Нумая пырĕ-ши? Лашине мала ямасăр халăх пурнăçĕ лайăхланĕ-ши?

Çук пуль. Тырпул туса илмесĕр, çурт лартмасăр, вăрман касмасăр, хурçă шăратмасăр, пурлăх тăвакана çăмăллăх памасăр пурнăç урапи тикĕс кусас çук.

Ĕççыннине пуç таяр. Çавна хисеплер. Патшалăха ĕçпе хăпарса тухнă аллисемпе атлант евĕр тытса тăраканни шăпах çавă пулать те ĕнтĕ.

Урапине тĕрĕс кӳлесчĕ.

1996

Вăхăт çитсен пурте çĕр çине ӳкет. Ав çӳлте-çӳлте ăмăрткайăк ирĕккĕн вĕçсе çӳрет. Тытас тенĕ чĕрчуна курсан чул пек персе анать те çивĕч чĕрнисемпе тирсе илет. Хăйне пĕлĕт хуçи пек туять. Вăхăт çитсен вăл та çĕр çине ӳкет.

Çурта пек тӳрĕ хыр та çĕр туртăмне çĕнсе илме çӳлелле кармашать. Йĕпписем тăкăна-тăкăна ӳксен те яланах симĕссĕн курăнать. Вăхăт çитсен вăл та тӳнсе каять, выртсан-выртсан çĕрпе пĕрлешет.

Çын та çавах, çĕр çинех ӳкет. Çĕр вăл пуриншĕн те тăван кил.

1995

Ăҫта кайса кĕрем-ши? Хыҫран хуйхă хăвалать, умра шухăш ҫул памасть.

Каялла ҫаврăнса пăхрăм та тунсăх куҫлă аннесем, тăлăх ӳсекен ачасем ушкăнпала тăраҫҫĕ. Шăпи йывăр пулнăран савăнăҫĕ пит сахал. Тăраниччен ҫименрен сывлăхран та чаплах мар.

Акă пĕри кантăкран ҫунашкапа ярăннине пăхса ларать. Тухĕччĕ, тумтирĕ ҫук. Пиччĕшĕ кĕрессе кĕтет. Ун тумтирне тăхăнса кайран вара хăй тухать.

Кăштах та пулин ҫын евĕрлĕ ӳсчĕр тесе аннесем пире хăйсем ҫиессине, хăйсем тăхăнассине парса пычĕҫ. Вĕсен чăн-чăн юратăвĕ шăпах ҫавă пулчĕ те ĕнтĕ.

Малалла пăхатăп та ачамсемпе мăнукăмсем курăнса каяҫҫĕ. Мĕн кĕтет-ши вĕсене?

Тунсăх шухăш пуҫа хĕсет.

1996

Сире кам тесе чĕнмелле-ши, ĕлĕкхи нимĕҫ вăрҫинче Раҫҫей парăнтăр тесе тăрăшакансене, пролетарин хăйĕн ҫĕршывĕ ҫук тесе вĕрентекенсене.

Сире кам тесе чĕнмелле-ши, ăслă ҫынсене пинĕ-пинĕпе чикĕ леш енне хăвса яракансене, илемлĕ ҫуртсене, чиркӳсене ҫапса ҫĕмĕрекенсене.

Сире кам тесе чĕнмелле-ши, лайăххах пурăнакан ҫын туприне тытса илме хушакансене, ют ҫĕршывсене сутмалăх тырă туса илекен ҫĕрĕҫченĕсене Ҫĕпĕрелле ăсатакансене, ашшĕпе ывăлне, пиччĕшпе шăллĕне класс тăшманĕ тесе ҫапăҫтаракансене.

Сире кам тесе чĕнмелле-ши, пултаруллă ҫыравҫăсене, командирсене Сталин лагерĕсенче пăчлантаракансене, авалтан мăн аслашшĕсен ҫĕрĕ ҫинче пурăнакан халăхсене тăван килĕнчен кутран тапса кăларса яракансене.

Сире кам тесе чӗнмелле-ши, пӗтӗм тӗнчене хамӑра хирӗҫ тӑрататакансене, ялсене ҫӗклес вырӑнне танксем, тупӑсем, ракетӑсем тӑвассине мала хуракансене.

Сире кам тесе чӗнмелле-ши? Ун пек сӑмах пур-ши? Чӑваш чӗлхинче тупӑнӗ-ши?

Сире кам тесе чӗнмелле-ши?..

1995

Хӑш-пӗрисем ытла кӑнттам. Ялан ҫӳреҫҫӗ йӳҫӗхсе, сӑлтавсӑрах ав хирӗҫсе. Ниҫта та ҫукка килӗшӳлӗх, ӑшӑ куҫпа саламлани. Пулмасть-ши ҫака чӑннипех телейлисен ҫулне пӳлни, хӑйне хӑех сиен кӳни, юн таппине йывӑрлатни.

Мӗн тӑвас тен, шӑпи ҫапла. Ӗмӗр иртет ун тунсӑхра, ыттисене айӑпласа. Пӑхса илмешкӗн хӑй ҫине пачах вӑл маннӑ курӑнать.

Калас килет ман ҫав ҫынна тахҫан ҫуралнӑ шухӑша. Килӗшӳ вӑл чи малтан пулмалла хамӑр ӑшӑмра. Ун чух вара ҫумри ҫынсем чӑнах та пулӗҫ урӑхла, килӗшӳ тупмалли ҫулсем те хуллен ав пырӗҫ уҫӑлса.

1996

Тусӑмҫӑм, ытлашши ан васка-ха. Чарӑнмалли ҫӗрте чарӑнма ан ман.

Тем умӗнчен хӑвӑрттӑн иртсе пырсан та вил тӑпри умӗнче уттуна чакар. Самантлӑха та пулин чарӑнса тӑр та пурнӑҫу пирки шухӑшласа пӑх.

Кунта выртать сан пек ҫынах, ачалӑхран чупса тухса юрату ытамне лекнӗскер, туй туса, йӑва ҫавӑрса ачасене ӳстерсе курнӑскер, тӑвансемшӗн усӑллӑ пулнӑскер.

Кунта выртать сан пек çынах, çемье чысне, ял-йыш чысне, тăван халăхăмăр чысне çирĕп упраса пурăннăскер.

Кунта выртать чăн-чăн çынах.

1996

Çĕр çинче такам та пур: тухтăрĕ те, хурçă шăратаканĕ те, çăкăр пĕçерекенĕ те, юрă-ташăпа чуна илĕртекенĕ те...

Анчах пур тепĕр çын, çаксене пурне те çунат параканни. Пĕр сăмахпа Учитель тетпĕр. Ун умĕнче пуç таятпăр.

Тĕлĕнмелле çын. Ырми-канми ĕçлет, çамрăк ăрăва вăйлатассишĕн çунать. Хăйне пачах та шеллемест; вăйне те, сывлăхне те, илемне те ыттисене парса пурăнать.

Тен çавăнпах савăнăçĕ те ун пачах урăхла. Мулпа мухтанассинче мар, хăй вĕрентнĕ ачасен телейлĕ шăпинче.

Манас марччĕ вĕсене, хамăра вĕрентсе ӳстернĕ çынсене. Нумай та кирлĕ мар, чĕререн тухакан тав сăмахĕ кăна.

1996

Ырă пурăнăç... Камшăн та пулин пулнă та-и тен. Маншăн пулман. Çĕтĕк те выçă ачалăха аса илсен, юратнă аннем колхозра мĕнле тертленнинине шута илсен Совет влаçне питĕ мухтакана кăштах чарнă пулăттăм.

Пĕри ав калать, сана коммунистсен партийĕ вĕрентсе çын турĕ, тет. Юрать. Вĕреннĕ тейĕпĕр (вĕренессе ăна Финляндире те, Японире те вĕренеççĕ-ха), аслă шкулта ĕçлемелĕх те пĕлӳ илнĕ ĕнтĕ.

Анчах... Кам-ха эпĕ? Ман мĕн пур? Пур-и-ха ман ылтăнăм хăтлă хваттер илмелĕх, Олимп вăййисене е Лувра çитсе курмалăх?

Пур-и-ха ман укҫам мӗн ҫиес тенине, мӗн тӑхӑнас тенине илмелӗх, кӑмӑл туртакан пикесене хаклӑ парне памалӑх?..

Кам-ха эпӗ? Ятӑм та пур, ӑсран та пит катӑках мар пуль тетӗп. Анчах тӑван шкулӑма, тӑван ялӑма пулӑшмалӑх вӑйӑм ҫук. Мӗншӗн тесен эп астӑвасса вӗреннӗ ҫын нихӑҫан та сумра пулман. Выҫӑ вилесрен тенӗ пек укҫине паркаласа пынӑ та мухтав грамотисемпе хавхалантарнӑ...

Кивӗ Раҫҫейри ӑсчахсемпе танлашасси пирки калаҫу та пулас ҫук.

Совет влаҫне, коммунистсене тем чул ырласан та мана пурпӗр ӗнентереймӗр. Пурне те хам курнӑ, пурне те хам тӳснӗ.

1994



Утатпӑр утмӑла.

Этем паянхи пек нумай калаҫман. Мӗн чул нумайрах калаҫатпӑр, ҫавӑн чул хӑвӑртрах ҫухалса каятпӑр.

Паян калаçмастăп. Никампа та. Паян ман калаçмалла мар кун.

Мĕн тери ырă вăхăт! Хампа хам калаçма та май пур. Мĕн палăртса хунине тума та çăмăлрах. Ĕçĕ те пырать ÿсĕмлĕрех.

Шăпах çакăн пек кунсенче чăмăртанать те ĕнтĕ çĕнĕ шухăш тĕшши. Атьăр-ха эрнере пĕр кун калаçмасăр пурăнса пăхар. Тен çакă пире кăштах ăсланма пулăшĕ.

1997

Пурнăçа лайăх пĕлетĕп теме пултараймастăп. Асăрхаса ĕлкĕрейменни чăрмав кÿрет. Эпĕ ун пĕр сыпăкне е самантне тишкерсе пĕтĕмлетÿ тунă вăхăтра вăл тата малалла тапса сикме ĕлкĕрнĕ те ĕнтĕ. Ăна нимĕнпе те танлаштарма çук, кайăкпа та, ухă йĕппипе те...

Кайăк вăл тем чул вĕçсессĕн те турат çине ларатех. Ухă йĕппи те çавах, ăçта та пулин пырса тăрăнать те вĕçевне чарать. Вара ăна тытса пăхма та пулать.

Пурнăç вара пачах урăхла. Ун канмалли вăхăчĕ çук. Пĕр чарăнмасăр малалла. Эпир ун çинчен паян пĕлни ыран кивелме те пултарать. Кашни кун çĕнелĕх парнелет.

Пурнăçа лайăх пĕлетĕп текенсене ĕненместĕп.

1996

Пулмаллин – пулмаллах, арканмаллин – арканмаллах. Пирĕнтен сахал килет. Тĕнче таппи те çавах. Вăл яланах хăйне май.

Тĕнчене тĕпрен улăштарас тесе çунса çÿрерĕмĕр, усси пулмарĕ. Халĕ ĕнтĕ ывăнса та çитрĕмĕр пулас. Сăлтавĕ паллă ĕнтĕ. Хамăрăн хăвăртрах улшăнса пымалла пулнă. Ытлашши

кая юлтӑмӑр. Тӗнчи вӑл тахҫанах малалла тапса сикнӗ ёнтӗ. Унта халь пач урӑхла ёҫлеҫҫӗ. Пурӑнасса та ҫавах. Паллах, тулӑхлӑрах, савӑнӑҫлӑрах.

Тӗнче пирки шутла-шутла хамӑр пурнӑҫа ним вырӑнне хуми пулса ҫитрӗмӗр. Унччен хамӑртан юлса пынӑ финсем те мала ӳкрӗҫ, пирӗншӗнех тӗслӗх пулса тӑчӗҫ.

Ҫӗр ёҫӗнчен риснӗ, суту-илӳрен йӗрӗнсе ӳснӗ, пӗлӗвне ҫӗнетсе пыма ӳркеннӗ ӑруран сулӑмлӑ утӑм кӗтме ҫук.

Пирӗн шанчӑк – ҫӗнӗ ӑрура.

1996

Влаҫ тытӑмӗнчи йӑласем юрлакансен ушкӑнӗнчи пекех. Енчен те пӗри пит килӗшӳллех юрламасан, хӑй сассине палӑртсан, йывӑрлӑхсем пуҫланаҫҫӗ. Пӗр майлӑ юрлама тытӑнмасан хӑваласа яраҫҫӗ.

Влаҫ вӑл шак та таса ҫынсенчен ҫеҫ тӑмасть. Апла пулма та пултараймасть. Влаҫри пӗрлӗхе тытса тӑракан пӗр питӗ ҫирӗп ҫилӗм пур. Ҫакӑ вӑл пӗр-пӗрин вӑрттӑнлӑхӗсене лайӑх пӗлсе тӑни.

Пӗрле ёҫлекен хӑвна пӑхӑннисӗр пуҫне тата кӑштах хӑраса та тӑтӑр тесен, вӑл тунӑ киревсӗр ёҫсене пӗлмелле. Ун пек туни курӑнмасан ҫав ёҫе тутармаллах. Вара вӑл веҫех сан алла кӗрсе ӳкӗ, тем хушсан та пурнӑҫлӗ.

Шӑпах та ҫак мелпе ёҫлесе пурӑннӑ та ёнтӗ иртнӗ тапхӑрти пуҫлӑхсем, ҫирӗмшер, вӑтӑршар ҫул хуҫара ларнисем.

Енчен та ҫак ҫын ушкӑна лекрӗ пулсан, ӑна кӑларса яман, вырӑнтан вырӑна ҫеҫ куҫарса пынӑ. Пӗр-пӗрин вӑрттӑнлӑхне пӗлни ҫак картаран тухма паман.

Ҫакна вӗсем паянхи кун та туслӑх вырӑнне хурса хаклаҫҫӗ. Ун чух эпир питӗ килӗшӳллӗ ёҫлеттӗмӗр тесе хӑйсене хӑйсем лӑплантараҫҫӗ. Чӑн-чӑн туслӑхӗ пулнах-ши?

1995

Этемлӗх яланах пӗр майлӑн курӑнать. Пиҫнӗ-пиҫмен ҫырла пек. Йӳҫӗпе пылак хушшинче. Ӑсран та ҫавах. Ма тесен, хыҫалтан ачалӑх кӑшкӑрашса пырать. Ваттисен ӑсӗ ун пуҫне вырнаҫиччен вӑхӑчӗ чылая каять. Каллех хирӗҫӳ, каллех пӑтрашу, такӑна-такӑна ӳксе суранланни.

Ҫапла вара пӗрисем икӗ урапа хӑюллӑн утма пуҫланӑ вӑхӑтрах хыҫалта тӑватӑ уран тапалашакансем курӑнса каяççӗ. Шӑпах ҫакӑ этемлӗхе ачалӑхра тытса тӑрать те ӗнтӗ.

Лайӑх-и ҫакӑ, начар-и, тавлашма пултараймастӑп. Пирӗнтен тухнӑ йӑла мар.

Апла эппин этемлӗх ачалӑхран нихӑҫан та тухса пӗтес ҫук. Тухса та ан пӗттӗр. Пурнӑҫ ҫапла хистет.

1996

Пуҫлӑх пулассишӗн ҫеҫ ҫунса ҫӳрекен ыттисене асӑрхамасть, хӑй ҫинчен ҫеҫ шутласа пурӑнать. Тав туйӑмӗ те мӑкалать. Хӑйне вӗрентсе ҫын шайне кӗртнӗ ӑсчаха та асӑрхами пулать, ун чӗрине ыраттаракан ирсӗр ӗҫсем тунине те сисмест. Совеҫӗ ун ҫук.

Ун пеккисем чее. Малтан куҫран пӑхсах йӑпӑлтатаççӗ, кайран вара ӑслӑ ҫын вӑйӗпе ҫӗкленсен, вӑрттӑн ҫыртаççӗ, чӑвашлӑха сутма та именмеççӗ.

Тӳрех калатӑп, карьера тума Кашкӑр Хуначисӗр те пулать, чӑн-чӑн наука лавне кӳлӗнме вара унсӑр йывӑртарах.

1997

Раççей ҫыннин, вырӑс ҫыннин чӑрсӑрлӑхӗ пурах ӗнтӗ.

Хӑй килӗ те уншӑн тӑвӑр. Урӑх ҫӗре ҫитмелле те хӑйне

кирлĕ йĕрке тумалла. Ыттисене вăйпалах хăй пек шутлама, ĕçме-çиме, алхасма вĕрентмелле. Лайăххи те çуккă мар, усалли те сахал мар.

Ют çĕрте хуçаланма пикенни, унти халăх чĕлхине, культурине ним вырăнне хуманни халĕ хăйне пырса тиврĕ. Ăна хисеплеми пулчĕç. Юрату пирки вара калаçмалли те çук.

Таçта çити тĕнче касса çÿрерĕ, хăй çуралнă çĕрĕ, тахçан "Руç" текенни, юхăнса пычĕ, çум-курăк ăшне путрĕ. Кантăкĕ хупăннă вырăс ялĕсем халĕ те пинĕ-пинĕпех.

Вырăс çыннин чунĕнче лăпкăлăх хуçаланма пуçламасăр Раççей чечекленессе шанма çук.

1996

Вăрçă та пулман, нимле мур та килсе силлесе кайман, манпа пĕр çултисем ялта питĕ сахаллăн тăрса юлчĕç. Кăштах ашшĕсемшĕн те пурăнмаллаччĕ те...

Халь тĕл пулчĕç пуль ĕнтĕ леш тĕнчере. Анчах пултарĕç-ши пĕрне-пĕри ăнланма.

Ашшĕсем пуçне хунă Тăван çĕршыва сыхласа, ачисем куçне хупрĕç ĕçкĕпе иртĕхсе.

Ашшĕсем пуçне хунă тăшманпа çапăçса, ачисем вилĕм тупрĕç пĕр-пĕрин çине алă çĕкленине пула.

Ашшĕсем пуçне хунă "çут пуласлăхшăн" ĕçлесе хуçăлса, ачисем çамрăклах вилсе пĕтрĕç тĕрмесенче патак çинине пула...

Кайса пĕтрĕç пĕр класра вĕреннĕ туссем, аллă çула та çитеймерĕç вĕсем. Мĕншĕн васкарĕç-ши манран уйăрălса кайма. Ачалăха аса илсе калаçса халь кампа чуна пусарăп.

Вăрçă та пулман, нимле мур та килсе силлесе кайман...

1994

Çын теме те пултарать. Вăл туман ĕç çук. Паллах, пĕр чăрмава çĕнсе илсен – хăв мĕнле ĕç валли çуралнине пĕлсен.

Вара веçех урăхла. Ĕçлеме те йывăр мар, ывăнни те сисĕнмест. Савăнмалли те тупăнсах тăрать.

Анчах... Пурин те ун пек мар çав. Акă пĕри сцена çинче хĕн курать – юрлаймасть те, выляймасть те, ăсталăхĕ вăй илеймест. Тен шкулта ĕçленĕ пулсан, ун пек паллă учитель те пулас çукчĕ.

Тепри ав тухтăр шутĕнче çӳрет. Дипломĕ те пур. Анчах ун патне лекессишĕн çунса çӳрекенсем çукпа пĕрех. Черет те çук. Паллă ĕнтĕ, пултарулăхĕ начартан.

Çапла вара чылай çын хăйне уçса параймасăрах пурăнса ирттерет. Турри панă талантне уçаймасть, пĕрлех илсе каять. Çакă вара хăйшĕн те, ыттисемшĕн те калама çук пысăк çухату.

1996

Тĕнче вăл пысăк. Унта тем те пулса иртет. Тӳрлетсе пĕтерме çук ăна. Пĕр çĕрте йĕрке тунă вăхăтра тепĕр кĕтесре мĕн те пулин пулатех, е кивелет, е ишĕлсе анать. Çĕмĕрекенсем те тупăнсах тăраççĕ.

Çыннисем те икĕ тĕрлĕ. Пĕрисен яланах алли кĕçĕтсе çӳрет, аркату туйăмĕ канăç памасть. Теприсем ĕмĕр тăршшĕпех юсавçă шутĕнче. Çанă тавăрса ĕçлеççĕ. Пурнăç тĕллевне çавăнта кураççĕ.

Пĕрисем хăй аллипе пурлăх тăваççĕ, пухаççĕ, теприсем – пайлаççĕ. Ĕçлекене сахалрах та лекме пултарать.

Пурлăх пайлакансен те куляну çук мар. Кунта тытăçу. Пĕрне – нумайрах, теприне – сахалрах.

Пур çĕрте те хирĕçӳлĕх. Çын пурнăçĕ иртсе пырать хурапа шурă хушшинче. Пач йывăрлăхсăр пурăнакан вара çук та пуль.

1996

Пултăм хăнара.

Эпĕ хуларан çитнĕ çĕре вырьăх пусса шăрпе çакса янă, сăра тунă, мунча хутнă – пурте чăвашла. Çине тăрса ĕçлекенĕн ĕçмелли те, çимелли те çителĕклех. Уншăн питĕ савăнтăм.

Киле таврăннă чухне аслă çул çине çитиех ăсатса ячĕç. Çул тăршшипех пирĕн умра тин çеç сăнчăртан ирĕке тухнă çамрăк йытă сăлтавсăрах вĕркелесе, ниçта кайса кĕреймесĕр сиккелесе пычĕ.

Асфальт çине тухрăмăр та каласса тăратпăр. Автобус килессе кĕтетпĕр. Акă çулпала прицеп кăкарнă трактор вĕçтерсе пырать. Пирĕн йытă тапса сикрĕ те трактора тытса чарас пек хирĕç тăрса вĕрме пуçларĕ. Трактор айне кĕрсе ӳкрĕ. Прицеп урапи ун малти ури урлă каçса кайрĕ. Йытă çухăрса ячĕ, тăнне çухатрĕ. Трактор чарăнмарĕ, малалла сирпĕнчĕ. Чупса пытăмăр. Йытă хурлăхлăн нăйкăшать, пуçне асфальт çине çапать. Кăштах выртсан мĕнпур вăйне пухса сывăрах урисемпе тапалашса юнашар тăракан хуçи патне шуса пычĕ те пуçне ун ури çине хучĕ. Лешĕ вара йыттине ятла-ятла тирĕ сĕвĕнсе кайнипе юнланнă урине сăмса тутрипе çыхма пуçларĕ...

Ман шутпа вара айăпли кунта пачах та йытти мар, хуçи хăй, пăхса çитĕнтерекенĕ, алла вĕрентекенĕ. Çамрăк йытă пĕрремĕш хут мăн çул çине тухса курчĕ те тӳрех çĕр чĕтретсе пыракан трактор айне пулса аманчĕ.

Хăш-пĕр чухне хăй тĕллĕн пĕрремĕш утăм тăвакан çамрăксен шăпи те çавна маях. Пурнăç вĕсене силлесе тăкать, амантать. Айăпĕ çакăнта пăхса, вĕрентсе ӳстерекенсен те пур пуль тетĕп.

1994

Ыттисем çырнине çеç вуласа пухнă ăс нумая пымасть, час сĕвĕрлет.

Вуламалла мар теместĕп. Вуламалла. Анчах хăв пуçупа ĕçлеме ӳркенмелле мар.

Акă пĕри хăйне философ текелесе кăшкăрашса çӳрет. Вулакалать те пуль. Ыттисем çырнисене пăхмасăр калама та юрататъ. Анчах çакă пурпĕрех çителĕксĕр. Философ пулма ăс çуратакан пуç кирлĕ. Турри пани çук пулсан тем чул вуласан та çĕнĕ шухăш хуçи пулаймăн. Тарăн шухăш пулмасан философ та çук.

1994

Шкулта та, институтра та хĕрачасем хастартарах. Пурнăçра вара пачах урăхла. Пуçлăхсем, хуçасем кунта пурте тенĕ пекех арçынсем. Анчах çакă хĕрарăм айккинче тăнине пачах та пĕлтермест.

Арçын ĕçре çĕкленесси те, чылай вăхăт хушши пуçлăх шутĕнче тытăнса тăрасси те, çӳллĕ вырăнтан ӳкесси те – веçех хĕрарăмран килет. Çĕклеме те пултарать, намăспа вĕçлесси патне те çитерет.

Тепĕр хĕрарăм арçынпа тутă кушак шăшипе вылянă пекех вылять.

Пысăк пуçлăхсен арăмĕсем пирки иккĕленмелли те çук. Раисамаксимовщина текенни кăштах пур вăл кашнинчех. Тепĕр тесен, çакă вăл хĕрарăм хăй кам пулнине пĕлтерниех. Пур пулас кунтах тавăру туйăмĕ те. Паллах, матриархатри влаçа çухатнишĕн, хăйне ыттисене ертсе пырас ĕçрен пăрса янишĕн.

Тĕрĕссипе каласан, çак ĕçре хĕрарăмсен опычĕ пысăкрах та пуянрах. Хăçан та пулин пирĕн çĕршывра та хĕрарăм президент е çар министрĕ пулнине курăпăр-ши.

1994

Хура халăх ытларах хура ĕçпе пурăнать, çĕр сухалать, выльăх

пăхать, вăрман касать, хурçă шăрататать... Хăйне ертсе пырас ĕçе ыттисене шанса парать.

Çамрăк чухне шутлаттăмччĕ патшалăха ертсе пыма питĕ пысăк ăс кирлĕ пуль тесе. Халĕ шухăш урăхларах.

Ăсĕ, паллах, пурне те кирлĕ ĕнтĕ. Анчах пуçлăх пулма вăл çес çителĕксĕр пулас. Ăслă çынсем сахал мар, пурпĕрех пуçлăх пулаймаççĕ. Ăслă та таса чунлă çынна патшалăх тилхепине тытса пыма йывăртарах та-и тен. Çăмăлрах пуль чеереххисене, чăрсăртараххисене, хаяртараххисене...

Тĕрĕссипе каласан, хирĕçӳллĕх, пăтрашуллăх халăхра та сахал мар. Вăл ытларах хăйне хытăрах хĕстерекенсене ырлать. Сума сăвакансене, хăйне юрататакансене пит асăрхасах каймасть.

Пуçлăхсемпе халăх хушшинчи çыхăнусене ниепле те ăнланса çитерме çук.

1994

Çĕр çинче темле çын та пур. Пĕри ав пĕчĕклех хăй аллипе мĕн те пулин тума юрататать. Тепри – пĕлӳ пухма, вĕренме. Ку та ĕçех. Тен алăпа ĕçленинчен те йывăртарах. Ахальтен мар чылайăшĕ пуçпа ĕçлессинчен пăрăнаççĕ.

Тепĕр йышшисем тата шак та ыттисем пулăшасса, мĕн те пулин туса парасса кăна кĕтсе лараççĕ. Ĕçри пуçарулăхĕ, хастарлăхĕ сахал. Кахалтараххисем тейĕпĕр.

Пакăлтатма ăстисем те тупăнсах тăраççĕ. Сăмахпа тем тума та хатĕр. Ĕçĕ вара курăнсах каймасть.

Теприсем тата пуçлăх пулассишĕн çес çунса çӳреççĕ. Тĕллевĕ паллă ĕнтĕ. Пурлăх кукăльне пайлаканнисен шутне кĕрес килет.

Çын вăл тĕрлĕрен пулать. Пĕр пекки пачах та çук.

1996

Тепӗр чиновник ҫине пӑхсан тӳрех чуман лаша аса килет. Чӑпӑрккана хӑмсарса пымасан лавӗ малалла каясшӑнах мар.

Йӑли ҫапла пулас. Пуҫласса пурте харсӑр пуҫлаҫҫӗ, ҫӗнӗ шӑпӑр пек ҫӗнӗлле шӑлаҫҫӗ. Анчах ҫакӑ нумая пымасть. Лӑпкӑн ӗҫлесех лайӑх пурӑнма май пуррине сиссенех чиновник хӑйне пачах урӑхла тыткалама пуҫлать.

Лаша ҫывӑрса каясран пӑван пур. Чиновник валли вара... Кам-ши? Прокурор-ши? Президент-ши?

Нивушлӗ чиновниксене сухӑр вӗлтренпе юнаса тӑракан ҫук вара? Пур пулсан мӗншӗн-ха вӗсене халӑха кирлӗ пек ӗҫлеттермеҫҫӗ?

Чиновник чиновнике аякранах асӑрхать. Хура халӑх нуши айккине тӑрса юлать.

1996

Камсем хытӑрах кӑшкӑраҫҫӗ-ха? Паллах, хӑйшӗн нимле хӑрушлӑх та ҫуккине лайӑх туякансем. Кӑшкӑруллӑ сӑмах влаҫ шухӑшӗпе пӗр майлӑ пулсан вара пырне хӗрхенмесӗр шӑв-шав тӑваҫҫӗ.

Иртнӗ саманара та ҫаплахчӗ. "Вӑл халӑх тӑшманӗ! Персе пӑрахмалла ӑна!" – тесе ӗҫсынни кӑшкӑрни влаҫра ларакан-семшӗн чи кирлӗ пулнӑ. Ҫак сӑмахсем вӗсемшӗн: "Малашне те ҫаплах иртӗхӗр", – тенӗ пекех илтӗннӗ. Кам килӗшмен, урӑхларах шухӑшланӑ, ҫавсене тӗп тунӑ.

Ӑслӑ та йӗркеллӗ ҫынсемсӗр ӑҫтан ырӑ пурӑнӑҫ тӑвӑпӑр-ха. Патшалӑх укҫине тыткалама пӗлекен те ҫук, Раҫҫей пурлӑхӗпе тӗрӗс усӑ куракансем те ҫук. Чавса таврӑрса ӗҫлекенсем те сахал. Кӑшкӑрашакансемпе влаҫшӑн ҫапӑҫакансем вара нумайлансах пыраҫҫӗ.

1994

Пĕлӳ шайне палăртса калаçăттăмччĕ, анчах шикленетĕп. Ăнланĕç-ши? Ним шарламасăр итлесе лартăм та шухăша путрăм.

Нивушлĕ çак çынсем те вăтам шкул пĕтернĕскерсемех, хаçат-журнал вулаканскерсемех, кĕнекепе туслăскерсемех...

Нивушлĕ çак çынсем те пуçпа шутлаканскерсемех. Çаплах пулсан мĕншĕн-ха шухăшлав шайĕ пыртан çӳлерех хăпараймасть. Çиессипе ĕçесси çеç хуçаланать. Чун çимĕçĕ пирки вара пĕр калаçу та çук.

Мĕнле-ха капла, çиессишĕн çеç пурăнатпăр-ши вара? Кампа калаçса чуна пусарам-ши?

1996

Мĕн вăл патшалăх? Хура халăха хӳтĕлемелли япала-и е пĕрне-пĕри пăхăнтармалли аппарат?

Ĕççыннине хӳтĕлес тĕллевпе тунă патшалăх çук та пуль. Çак ĕçе вăл ячĕшĕн кăна туса пырать. Пăхăнтару туртăмĕ вара кашни патшалăхăн пур. Пĕрисен пĕчĕкрех, теприсен пысăкрах. Раççейре мĕнлерех-ши?

Пирĕнни пек "ырă" патшалăх урăх пулас та çук. Вăл кашни çынна ĕçлеттерчĕ, укçине çителĕклĕ парасси пирки шутламарĕ. Кашнине çапăçтарчĕ, класс тăшманĕсем шыраттарчĕ, айăпсăр çынсене, халăхсене килĕнчен хăвала-хăвала кăларса ячĕ, каçару ыйтмарĕ. Кашни çын утăмне асăрхаса тăчĕ, кама тата мĕнле юратмалли таран вĕрентсе пычĕ, халăха хăй тĕллĕн шухăшлама мантарсах ячĕ.

Халăх вăл стадионра ларакан пекех, алă çупать, кăшкăрашать, ятлаçса илме те пултарать. Урăх нимех те тăваймасть. Çӳлтисем вара выляççĕ, çапăçаççĕ, мирлешеççĕ, халăх пĕçернĕ кукăле пайлаççĕ. Хăйсенчен юлнине пĕçерекенĕсене таварса параççĕ. Çакă вара арăслан çисе тăраннă хыççăн вĕтĕрех кайăксем шăм кăшласа савăнни пек çеç курăнать.

Патшалăх вăл чи малтан хăйшĕн пурăнать, халăх тарĕпе, сывлăхĕпе, юнĕпе тытăнса тăрать. Çак ĕçе веçех пăхăнтару мелĕпе туса пырать.

1994

Вырăс чунĕ мĕнлине паян пĕлме çăмăл мар. Вырăсла калаçакан нумай, чăн-чăн вырăссем сахал.

Такам вăл, пĕлме çук. Раççей пирки калаçать, вырăссене ырлать, чăвашсене, тутарсене хурлать. Пурнăç чакса пынишĕн вырăс мар халăхсене айăплать, кĕпĕрнесем тăвас шухăша ырлать...

Такам вăл. Вырăсах-ши? Тен, юриех вырăс мар халăхсемпе вырăссене хирĕçтерсе ярас тĕллевпе палкамасть-ши?

Йышлă та вăйлă халăх çынни ыттисене хĕстерес тĕллевпе пурăнас çук. Чăн-чăн вырăс шухăшĕ паян мĕнлерех-ши? Çакна кам уçса парĕ-ши?

Ман питĕ чăн-чăн вырăса тĕл пулас килет.

1994

Парнелем-ха сире сутмалли юмах.

Çĕрне те, лашине те, урапине те, суха пуçне те, сӳрине те, ĕнине те унне туртса илнĕ. Кĕлечĕ те пуш-пушах. Ĕçе те çын хушнипе çеç çӳрет. Паян сухалама, ыран çул тума, тепĕр кун вăрман касма... Пĕр лав вутă илсе килес пулсан та лаша пăхакана, урапа паракана пуç çапмалла. Пурнăç тилхепине ун аллинчен туртса илнĕ. Кил хуçи пулмалăх хăвачĕ те çук. Арăмне те тумлантараймасть, ачисене те çын евĕрлĕ пăхаймасть, мĕн кирлине илсе параймасть. Тем чул тăрăшсан та, кăкăрне çапсан

та чăн хуçа пулаймасть, хăйне хĕрарăмран çӳллĕрех шая çĕклеймест. Хăй телейне хăй купалаймасть, веçех çын аллинче.

Çак çын кам пулать-ши? Кам тупсăмне тупать – коммунистсене мухтама пăрахать.

1996

Эпĕ ватă артист. Нумай çӳрерĕм концертпа. Çитмен ял та юлмарĕ пуль.

Вулаттăм шӳтлĕ калавсем, пурнăçри пăтăрмахсене питлесе, шӳтлесе, кулса. Алă çупатчĕç куракансем култарнишĕн тав туса.

Анчах пурччĕ пĕр йышши çынсем, парти пленумне пуçтараннисем. Йывăрччĕ вĕсен умĕнче тăма. Çитменлĕхсене сăнарласа уçса парсан та шăп лараççĕ. Кулма та хăраççĕ, алă çупни те саралса çитнĕ çулçă татăлса ӳкни пек çеç.

Пĕр çимĕçпе çеç пурăнакан кĕçех чирлеме пуçлать тенĕ пек, пĕр идеологипе çеç пурăнакан çын та çителĕклĕ таран аталану илеймест иккен. Туйăмран та, шухăшран та чухăн. Тĕрĕслĕхпе чăнлăх та уншăн парти пуçлăхĕсем каланă пек çеç. Вăл пĕтĕмпех çыхăнса ларнă. Ун ниçта та ирĕклĕх çук. Вăл парти чури.

1997

Демократи вăл малтанлăха утма вĕренекен ача пекех: тăрать те, алăкран кĕреймесĕр те нушаланать. Ун чухне ун çулне пĕр çынах пӳлсе лартма пултарать. Çакна хам куçпа хам куртăм.

Мĕн кăна тумарĕ пуль çак хăямат, обком хуçаланнă чухнех пуçлăх пуканне йышăннăскер.

Малтан пуҫтарчӗ хӑй тавра айванккасене, элекҫӗсене, ҫылӑхлисене, хӗрлӗ тӗспе тула тухакансене, сыпкалама юратакансене. Ясарлӑ пурнӑҫа килӗштерекенсем те ҫул тупрӗҫ ун патне.

Пуҫларӗҫ вара хӗсме ҫӗнӗлле шухӑшлакансене, демократи мелӗсене сарассишӗн ҫунакансене.

Кунта халь ҫуккӑ пуҫлӑха ирӗклӗ майпа, пӗтӗм ушкӑнпа суйласси. Пурте пӗрле пухӑнса калаҫманни те вунӑ ҫул.

Пулса тухать ара ҫапла. Президента суйлама та, суйланма та ман право пур. Хамӑра ертсе пыракан пуҫлӑха суйлама – ҫук. Апла пулсан кунта демократие кӗртмен.

Иртнӗ самана ҫынни алӑк хӑлӑпне хальхи пурнӑҫ ҫыннине ирӗкпе парасшӑн мар.

1997

Пӗр-пӗр импери е чаплӑ ҫӗршыв арканса каясси пуҫланать пуҫлӑхсем влаҫпа иртӗхме тытӑннинчен. Ҫакна лайӑх курнӑ ӗлӗкхи грексем, римлянсем. Ҫакна хамӑр та куртӑмӑр.

Влаҫа пула пӑсӑлнӑ ҫынна ватлӑх та тытса чараймасть иккен. Вӑл калаҫнинче, хӑйне мӗнле тыткаланинче темӗн чухлех тӗл пулать камитри пек кулӑшли. Пурнӑҫ таппинчен тӑрса юлнӑ пулсан та ҫӳрет пуҫне каҫӑртса, ӗҫлекенсен ырлӑхӗ веҫех унтан килес пек. Енчен те ҫакӑ пуҫлӑхӑн "хӗрарӑм чирӗ" пулсан, унпа усӑ куракансен шучӗ хутшӑнсах пырать. Пуҫланать вара ӗҫкӗҫикӗпе иртӗхесси, ҫемьери ҫирӗп йӑласене пӑхӑнма пӑрахасси. Ун пек пуҫлӑхшӑн наци шайӗнче тӑракан тӗллевсем те ним те мар, хӗрарӑм ытамӗ кӑна пултӑр...

Ҫапла вара пысӑк пуҫлӑх пӗчӗкреххисемшӗн влаҫпа иртӗхсе пурӑнмаллине кӑтартакан тӗслӗх пулса тӑрать. Ҫакӑншӑн ӑна ырлаҫҫӗ, мухтаҫҫӗ, хӳтӗлеҫҫӗ, татах та нумайрах пурӑнтӑр тесе Турра кӗл тӑваҫҫӗ.

Ватӑ пуҫлӑхӑн тымарӗсем самай тарӑн иккен.

1994

Çула тухни вăл пачах та çĕнĕ япала. Унта нумай халиччен курманни, халиччен пулманни.

Пыратăп акă вĕçтерсе тин çеç туяннă çăмăл машинăпа. Пĕлсех каймастăп-ха унăн кăмăлне. Тин çеç паллашнă чиперкке пекех тыткалать вăл хăйне. Çул тăршшĕпех пыратăп тимлĕн асăрхаса, мотор мĕн каланине тăнласа...

Сасартăк çул çине чупса тухрĕ пĕр пысăк пăши. (Инçех те мар тăрать пăрушĕ). Çулăн тепĕр енне каçнă-каçманах пăлт! çавăрăнчĕ те тапса сикрĕ каялла, хăй ачи патнелле. Аран пусса ĕлкĕртĕм тормоза. Чутах сиксе тухатчĕ тамаша.

Шуршăл патне çитсен куратăп – çул хĕрринче тăрать пĕр çамрăк хĕрарăм. Пĕр аллипе вăл чăмăртанă пĕчĕк ачине, теприпеле – ыйтать лартма. Чартăм. Тархаслать Çĕнĕ Шупашкара çитерме. Лартрăм. Ачи çине пăхса шăла-шăла илет хăй куççульне. Пепки ним те шарламасть.

Мĕн пулчĕ вара, пикеçĕм, тесен, вăл хуравларĕ чĕтренӳллĕ сасăпа: "Ачам сывмар çуралчĕ. Таçта çитсен те усси çук. Халь ав килетпĕр ватă карчăк патĕнчен..."

Çак сăмахсене илтсен калаçас кăмăлăм хуçăлчĕ. Хам куçпалах курма тӳр килчĕ ытла телейсĕр çынсене. Тӳрех пуçа пĕр шухăш çапрĕ: те упăшки ĕçекенскер, те хими сĕрĕмĕ тискер...

1994

Йăлкăшса çунакан кăвайт çине пăхнăçемĕн пăхас килет. Унта темле асамлă илĕртӳ. Кашни çулăмĕ, кашни саманчĕ çĕнĕлле çуталса илет те тавралăха урăхла сăн кӳрет. Çак таçтан авалтан килекен туртăм нихăçан та чакас çук.

Акă пĕр çулăмĕ ыттисенчен вăйлăрах йăлкăшса илчĕ те сывлăшра ирĕлсе çухалчĕ. Ĕмĕрĕ ун питĕ кĕске пулчĕ. Апла пулин те çын куçĕнче çутă сăн хăварчĕ, асра юлчĕ.

Этем пурнӑҫӗ те ҫавах, йӑлкӑшса илет те сӳнет. Йӗрӗ вара юлатех. Пӗрин – ҫутӑрах, теприн – тӗксӗмрех.

Аса илтӗм тӳрех Ҫеҫпӗле. Темле асамлӑ вӑйпа вӑл туртать хӑй патне. Вуланӑҫемӗн вулас килсе тӑрать. Ҫеҫпӗл ҫутнӑ ҫӑлтӑр ҫути нихӑҫан та сӳнес ҫук.

1996

Чӑваш хушшинчен полковниксем, генералсем йышлӑн тухнипе ытлашши ан мухтанӑр-ха. Ӗҫчен те сӑпайлӑ халӑхӑмӑршӑн ун чул генерал кирлех те мар. Веҫех Раҫҫей ҫарӗшӗн, веҫех Раҫҫей чапӗшӗн.

Чӑваш Раҫҫейшӗн, вырӑссемшӗн шанчӑклӑ ҫын пулни ҫакӑнта та курӑнать. Тен ҫавна пулах чӑвашсене ҫапӑҫӑва кӗртсе яраҫҫӗ чи малтан. Ҫакна аван кӑтартрӗ Афганистан.

Ҫын вӗлерсе чапа тухнӑ чӑвашсем халӑх чысне ҫӗклес ҫук.

Кирлӗ пире паян ӑсчахсем, ӗҫе тӗплӗ тӑвакан ӑстасем, Чӑваш ҫӗрне илем кӳрекенсем.

Кирлӗ пире ытларах хамӑр пӗчӗк ҫӗршывра йӗрке тӑвакансем, чӑвашлӑха упракансем, ҫамрӑк ӑрӑва вӑйлатакансем.

Кирлӗ пире паян халӑхӑмӑра тӗнче умне тухма пулӑшакансем. Полковниксемпе ытлашши мухтанар мар-ха.

1994

Ӑс-тӑнран хавшакраххисемпе, калтуринсемпе пакӑлтатса ларса вӑхӑта ытлашши ан иртерӗр-ха. Ӑслӑраххисем патнелле туртӑнӑр.

Айвансем хушшинче айванланса пыратӑн, ӑслисем хушшинче – ӑсланса. Енчен те тусу хӑвӑнтан ӑслӑраххи тупӑнсан, ҫакна пысӑк парне вырӑнне хурсах хакла. Туслӑха упра.

Тепĕр çĕрте ав ялĕпе шырасан та ăс ыйтмалăх çын çук. Пурте пĕр майлă, пурте айван. Пурнăç шайĕ те çавах. Пуласлăх та тĕксĕм.

1997

"Мĕншĕн пурăнатăп-ха çакă çутă тĕнчере?" – тесе ыйтман çын çук та пуль.

Çăмăлттайсем, вĕçкĕнсем пакăлтатаççĕ, пурнăç тĕллевне эпир ăна вунçиччĕрех лайăх пĕлнĕ, теççĕ. Ĕненместĕп. Уйрăмах юлташĕсем пĕр кун сиктермесĕр вĕренме çӳренĕ вăхăтра таçта йăкăлтатса çӳрекене, кайран шăпам йывăр сиксе тухрĕ тесе пĕтĕм тĕнчене айăплакана.

Пурнăç тĕллевне ăна кашни çын хăй палăртать те ун патне çывхармалли çулсем шырать, вăй хурать. Тĕллевне, паллах, темлине те лартма пулать. Анчах чи пысăк тĕллев пĕрре çеç. Çакă вăл чăнчăн çын пек, çемьеллĕ, йĕркеллĕ, çăкăрлă-тăварлă пурăнасси.

Апла пулсан пурнăç тĕллевĕ – пурнăçра хăйĕнчех. Пурăннинчен хакли нимĕн те пулас çук.

1994

Эпир пĕтĕм тĕнче тавне тивĕç. Кама кăна пулăшмарăмăр пуль. Пуяннисене татах пуянлатрăмăр, чухăннисене те манмарăмăр.

Ăçта кăна пулмарăм, пур çĕрте те Раççей çыннин пултарулăхне, ăсталăхне асăрхарăм.

Большевиксем хăваласа янă çынсем ахаль ларман иккен. Ĕçленĕ вĕсем. Пĕри наукăра, тепри искусствăра. Пĕри техникăра, тепри фирмăсене ертсе пырас çĕрте.

Апла эппин Америка пуянлăхĕнче Раççей çыннин тӳпи те çук мар. Паян та çавах. Çамрăк талантсем унталлах туртăнаççĕ.

Укçапа та аванах пулăшатпăр. Паллах, унта туса кăларнă таварсене илсе, унти çынсем валли ĕç вырăнĕ туса парса.

Эпир питĕ ырă çынсем, такама та пулăшатпăр. Хамăра хамăр çеç пулăшаймастпăр.

1996

Шухăшăм, ăмăрт кайăкăм, çĕкле мана çӳлерех. Пăхса илем хам пурнăçăм çулĕ çине.

Шухăшăм, урхамахăм, кĕрсе тăрсам икĕ турта хушшине. Кӳлем сана сӳсмен пăявне шăла çыртса туртса, парăнасшăнах мар хурама пĕкке тата хытăрах авса.

Шухăшăм, хам çуратнă ачам, пулăшсам пурнăçăм урапине малалла тикĕс кусма.

1997

Тĕнче тилхепи – этем аллинче. Пурнăç йĕрки мĕнлерех пулмаллине çынсем хăйсем татса параççĕ. Ырри те, усалли те, илемли те, ирсĕрри те – пурте çын çумĕнче. Çав хуçаланать, çут çанталăка та хăйне майлă ĕçлеттерет.

Тепри ав калĕ урăхла, куçа курăнман вăйсене шанса. Ёненĕ. Туррине те манмĕ. Ăна вăл хурĕ пысăка.

Калас килет кăшт урăхла. Тем чул шансан та туррине, манса ан кайтăр çын хăйне. Вăл хăй те вăйлă, хăват çук мар. Пĕлместпĕр хамăр мĕнлине. Кашнин хăй майлă пархатарĕ. Ăсĕ çитет килçурт лартма, çăкăр-тăварлă пурăнма. Паллах, ĕçрен хăрамасан.

Тĕнче вăл çынсемпе илемлĕ. Ытти вара нимех те мар.

1996

# ЧӐВАШШӐН ЧӐВАШАХ ШАНЧӐКЛӐРАХ

Халӑхӑмӑра вӑрҫар мар. Ытларах уйрӑм ҫынсене, халӑх сӑнне пӑсакансене ятлар.

Халӑх пулман пулсан эпир те пулас ҫук. Чӑваш чӗлхи те, чӑваш юрри те, чӑваш тӗрри те пирӗн чуна илӗртес ҫук.

Ытти халӑх ҫыннисен пурнӑҫне ӑмсанмастӑп. Вырӑссен телейӗ хӑйне май пуль, еврейсен те ҫавах. Чӑваш телейӗ чӑвашла. Ӑна ыттисем ӑнланас та ҫук.

Чӑваш ытларах хӑйне шанать. Тума пултарнӑ таран веҫех хӑй тӑвать. Вӗт-шакӑр ӗҫпе ҫынна чӑрмантармасть. Тӗплӗн хатӗрленнӗ хыҫҫӑн ҫеҫ нимене чӗнет, пысӑк ӗҫе тытӑнать. Анчах ҫак пӗрлӗх туйӑмӗ ӗҫ вӗҫленсен сӗвӗрлет, малалла анлӑн сарӑлса каяймасть, ял виҫипех ҫырлахать, пӗтӗм чӑваш шайне тухаймасть.

Чӑваш хӑй тӗнчине куҫӗсем курнӑ таран ҫеҫ ӑнланни, ял шайӗпе ҫеҫ виҫни паянхи кун та сисӗнет. Телейне те пӗчченрехех туптать, халӑх телейӗпе явӑҫтармасть.

Вӗҫлес сӑмахӑм ҫапла. Халӑхӑмӑр ирӗклӗ те телейлӗ пулмасан, уйрӑм ҫын телейӗ тулли пулас ҫук.

1994

Ӗненместӗп. Мускаврисене пачах ӗненместӗп. Шупашкартисем пирки те шикленетӗп. Чӑваш арҫыннисене те шанмастӑп. Пӗр сана ҫеҫ шанатӑп, чӑваш хӗрарӑмӗ. Эсӗ пулман пулсассӑн эпир те паян пулас ҫук. Чӑваш арҫыннисен шӑммисем Атӑл тӗпӗнче, Дон тӗпӗнче, Висла тӗпӗнче купи-купипе выртаҫҫӗ пулсан та эсӗ ҫине тӑнипе Чӑваш тӗнчи пӗтмерӗ. Эсӗ уншӑн

кĕлрен чĕрĕлсе тăракан Феникс кайăкĕ пултăн. Эсĕ Чăваш тĕнчин ĕмĕрлĕхĕ, вĕçĕмсĕрлĕхĕ.

Тавах сана, чăваш хĕрарăмĕ, çĕр çинче пурришĕн. Шанчăклăраххи пурпĕрех эсĕ.

1995

Кашни кун вăл çĕнĕ пурнăç. Унта тек çук ĕнерхи. Лайăххи те, япăххи те тăрса юлнă хыçала. Паянхи вăл малалла. Умра веçех урăххи.

Çĕнĕ куна парнелет çуталса тухакан Хĕвел. Çавна пулах асаттесем пуççапнă пысăка хурса ăна, мухтанă кĕлĕре. Вăл пулнă Турă та, юлташ та, вăхăт виçи те...

Кунпа виçнĕ инçе çула. Пысăк ĕçе вĕçлессине те палăртса хунă кунпала. "Ĕмĕр иртет, кун юлать",– тесе юрланă юрăра.

Хĕвеле кĕтсе илме чăваш васканă ир-ирех. Ахальтен каламан пуль çав чăваш сахал çывăрать тесе.

Çĕнĕ куна чăваш кĕтсе илнĕ çĕнĕ ĕмĕтпе, пуççапнă ылтăн Хĕвеле.

1994

Пирĕн ăсчахсене тепĕр чух тата ытлашши нумай вулани те чăрмав кӳрет пулас. Чăваш шăпи çинчен калаçнă чух тӳрех ют çĕршыв çыннисем каланисене тĕпе хурса тавлашма тытăнаççĕ.

Акăлчансем, нимĕçсем, еврейсем каланисене айван шухăшсем тесшĕн мар эпĕ. Ăслă çынсемех вĕсем. Анчах мĕн пулса иртнине кашни хăй куçĕпе курать, хăй пуçĕпе хаклать. Темиçе ĕмĕр хушши ытти халăхсене пăхăнтарса, ĕçлеттерсе

пурăннă акăлчансен шухăшлавĕ паллах пирĕнни пек пулас çук. Уйрăмлăх пур ытти халăхсен те.

Чăваш тĕнче çине чăваш куçĕпе пăхать. Тен çавна пулах ыттисем асăрхаманнине те курать, хăйне кирлине те тупать.

Тĕнче çине чăваш куçĕпе пăхар.

1997

"Улма" сăмах паллă ĕнтĕ, тавлашма та кирлĕ мар. Кунталла нумаях пулмасть çитнĕ çимĕçе те чăваш каланă "çĕрулми" тесе. Улми чăнах та çĕрĕннех ĕнтĕ. Ун пек тĕрĕс ыттисем калаяс та çук.

Анчах та пур тепĕр сăмах. Ун тупсăмне ăнкартма йывăртарах. Çакă пулать вăл "пан улми". Улми паллă терĕмĕр, панĕ мĕне пĕлтерет-ши?

Аваллăха кĕрсе кайсан тупма пулать çак сăмаха та. Çут çанталăк тĕнĕпе пурăнакан грексен вăрман турри шăпах та пулнă Пан. Апла эппин Пан панă улмапа чăваш паян та савăнать. "Пан" вара "этем" пекех пулать чи ĕлĕкхи сăмах. Пирĕн чĕлхене вырнаçнă тахçанах, пин-пин çул каяллах.

Калатăп сире тепĕр хут: чăваш чĕлхинче – пĕтĕм этемлĕхĕн ачалăхĕ.

1997

Алăри пўрнесем те пĕр пек мар. Пĕри вăрăм, тепри кĕске. Тăванра та çавах. Пĕри телейлĕ, тепри телейсĕртерех, пĕри пуян, тепри чухăнрах. Шăпах çакă тепĕр чух тăванлăха хавшатать, кĕвĕç туйăм çуратать, юратăва сивĕтет.

Апла ан пултăр тесен пулăшма тăрăшмалла, тăван хуйхи-

суйхине йышпа çӑмӑллатмалла.

Тӑлӑх тӑван, чухӑн тӑван ӑрӑва илем кӳмест. Çакна темшӗн хӑш чухне пачах манса каятпӑр. Тулӑх пурнӑç ырлӑхне кӑшт та пулин чӗпӗтсе тӑвансене памастпӑр. Хамӑршӑн çеç пурнатпӑр.

Мала ӳкрӗмӗр пулсассӑн, хыçалтине ал парар. Такӑннине курсассӑн, тикӗс çула кӑларар. Пӗрне-пӗри пулӑшса ӑру ятне хӑпартар. Тата тепӗр сӑмахӑм. Сапаланса пӗтер мар. Ытла инçе тӑвана пулӑшма та çӑмӑл мар.

Тӑванпа тӑван ӑмӑртнине пачах та ырламастӑп. Ялпа ял ӑмӑртнишӗн савӑнатӑп.

1994

Наци туйӑмне пӗрчӗн-пӗрчӗн пухса вӑйлатса пыракан çемьесем пирӗн паян та питӗ сахал. Пӗр çурта хыççӑн тепри йӑлкӑшма пуçласси йӑлана хӗнпе кӗрсе пырать.

Кашни вӗреннӗ чӑвашрах кӑштах та пулин Яковлев тӗслӗхӗ пурах. Пӗри унта курать паллӑ педагога, тепри – Христос тӗнне чапа хуракана, виççӗмӗшӗ вара çемьери йӗркесене – вырӑс хӗрне качча илессине, ачисене вырӑсла çитӗнтерессине.

Çак Яковлев мешехи паян та чылай çирӗп ларать-ха. Апла пулин те улшӑнусем çук мар. Çамрӑксем тӗслӗх параççӗ. Тургай, Смолин, Лукиянов, Михайлов, Дворников ачисемпе чӑвашла шӑкӑл-шӑкӑл калаçма май пурришӗн питӗ савӑнатӑп.

Тавах ашшӗ-амӑшне, ачисене чӑвашлӑх парнелекенсене.

1997

Чӑваш куçӗпе пӑхсан Мускав яланах иккӗллӗн курӑнать.

Пĕри – нуша хуçи, тăван халăхăмăра чура вырăнне хурса тăрăнса кайиччен ĕçлеттерекенни, вăл тунă пурлăха хăйне пуйма турттарса тăраканни. Тепри – пачах урăххи, ытти халăх çыннисене те асăрхаса хӳтлĕх параканни. Çак ырлăх кăштах чăвашсене те лекрĕ пулас.

И. Яковлева хăй вĕрентсе ӳстернисемех, паллах, хĕрлĕ тĕспе сăрланнисем политика хĕскĕчĕпе хĕстерме тытăнсан ăна çăлса хăвараканĕ пулнă Мускав. Кашкăр Хуначине те çавах – йывăр кунсенче, обком алхаснă вăхăтра, ăна Мускав ăнланчĕ, алă пачĕ.

Чăннипе Мускавĕ пĕрре кăна ĕнтĕ. Унти вăйсем вара ĕлĕкренпех иккĕллĕ.

1997

Тавтапуç сана, ырă çыннăм Кашкăр Хуначи, чăваш ятне тĕнче шайне çĕклекенсенчен пĕри. Чи хаклине, чăваш хăй ачинчен çын тума пĕлнине, уçса патăн пурне те.

Çĕршывĕ те пулнă, тĕп хули те пулнă, анчах вĕсене çапса çĕмĕрнĕ. Ылтăнĕ те пулнă, кĕмĕлĕ те пулнă, анчах вĕсене туртса илнĕ. Ăсĕпе ăсталăхне илеймен, чăвашлăха пĕтерреймен. Çавăнпа сыхланса юлтăмăр та ĕнтĕ. Чăвашлăхра çынлăх пур.

Хаклă тăванăм, халĕ Эсĕ пĕччен мар. Хăв çул кăтартса панисен хушшинче пурпĕрех шанчăклисем ытларах.

1997

Кашкăр, кашкăр тееççĕ, кашкăр чăвашсемшĕн хăрушă маррине пĕлмеççĕ. Тахçан ĕлĕк çухалса кайнă чăвашсене Атăл патне тухма шăпах кашкăр ами пулăшнă тет.

Эпир пурте кашкăр ачисем. Ун сăнарĕ – ырă сăнар.

Хальхи çамрăксене чăвашлăх çулĕ çине тăма хавхалантараканни, пулăшаканни вара шăпах Кашкăр Хуначи пулчĕ. Çавна тав тăвар. Малтан ăна И. Яковлев çулне çитиччен пурăнма çирĕп сывлăх сунар, унтан В. Егоров çулне çитиччен сунăпăр, каярах вара Альтук аппа çулне çитиччен...

Пире кашкăрпа хăратма кирлĕ мар.

1997

Мана нимех те кирлĕ мар. Чăваш кăна пурăнтăрччĕ. Паллах, йĕркеллĕ, çăкăрлă-тăварлă, ачаллă-пăчаллă.

Чи пысăк парне вара – чăваш сывлăхлă пулни, ăс-тăн енчен çĕкленни, вырăсланса пырас йăларан сивĕнни, хăй килĕнче хăй хуçаланни.

Мана нимех те кирлĕ мар. Чăваш кăна пурăнтăрччĕ, паллах, хăй чăваш пулнишĕн мухтанса, савăнса.

Çак туйăма вăйлатма пуçламалла ачаран, анне панă чĕлхерен. Ачасене тăван культурăна явăçтаракан çынран сумли маншăн паян урăх никам та çук.

Эй, чăваш çыравçисем! Мĕншĕн пĕрисем килте кăшăртатса ларатăр, теприсем митингсем тăрăх хĕрлĕ ялавпа сулкалашса çӳресе вăхăта сая яратăр. Шкула васкăр, шкула!

1996

Чиркӳри ĕç театрти пекех. Унта пур режиссерĕ, унта пур дирижерĕ. Актерĕсем те çителĕклех...

Веçех туйăмпа сăнар çине тайăнса туса пыраççĕ. Пĕлӳ те, шухăшлав та кунта кирлех мар. Ĕнен те пуççап...

Тата тепĕр тĕлĕнтермĕш. Мĕншĕн-ха чиркӳ ылтăн-кĕмĕле

çав тери килĕштерет. Пĕр ĕçне те укçасăр тумасть. Мĕншĕн-ха чиркӳ ыттисенчен пуянрах пулассишĕн çунать?

Çакăншăн Турра пачах та айăпламастăп. Кунта ун çылăхĕ çук. Турă ячĕпе пурлăх пухакансен вара нимле именӳ те çук. Чухăн укçишĕн те савăнаççĕ. Нумайрах паракана вара мухтаса юрлаççĕ. Пĕрисем парса тăраççĕ, теприсем пуйса пыраççĕ.

Туррине, тен, ĕненме те пулать-и. Анчах чиркĕве – çук. Вăл маншăн Турра айванлатса, начарлатса кăтартакан вырăн кăна.

Чăваш турри чиркӳсĕрех хăватлă.

1994

Çимелли, ĕçмелли кунта та çителĕклĕ-ха. Чун çимĕçĕ çитменни канăç памасть. Мĕн чул нумайрах çиетĕн, çавăн чул сахалрах пек туйăнать.

Пултăм Ереванра, кĕрсе тухрăм Матенадарана, тытса куртăм чи авалхи кĕнекесене. Луврта тĕл пултăм чăваш тухйине. Пулма май килчĕ Олимп вăййинче. Савăнтăм кашниншĕн, тĕнче умне тухма пултарнишĕн, хăй çĕршывĕн чысне хӳтĕленишĕн.

Чим-ха, мĕншĕн пурте ман пек мар. Эпĕ алă çупнă чух шыв сыпнă пек шăп лараççĕ. Камсем-ха çаксем? Америка çыннисем иккен.

Чăваш хĕрĕ чупса тухрĕ марафон. Алă çупмарĕç. Медаль илчĕ Пăлхар каччи. Шарламарĕç. Çакă пулмĕ-ши вара чункăмăлран чухăнни. Укçипе пуян пуль те-ха...

Эпир пуян урăххипе, ытти çынсен хуйхи-суйхине, савăнăçне ăнланма пултарнипе, теприне хĕрхенме пĕлнипе, тăванлăхпа, ентешлĕхпе. Истори те хамăрăн, культура та тахçанхиех.

Апла эпир çав териех чухăн мар-ха. Пĕтмен-ха эпир. Пурăнатпăр. Чун хавалĕ те иксĕлмен, хамăрпах.

1996

Кашни ӳсен-тăран çеçке çурса чечекленсе вăрлăх тума тăрăшать, хăй йăхне малалла тăсассишĕн пурăнать. Пулăшаканĕсем вара çук мар – хура тăпра вăрлăха хăй çине илет, çумăрĕ те шăварсах тăрать, хĕвелĕ те ăшшине шеллемест.

Халăх та çавах, ăру хыççăн ăру ӳстерсе хăй йышне хушасси пирки ĕмĕтленет. Чăрмав кӳрекен вăйсем пулмалла мар пек. Ара, пур çĕрте те çынсем вĕт-ха, ăс-тăн енчен пуянскерсем, пĕрне-пĕри ăнланма пултараканскерсем...

Çук çав. Ăнлану кунта сахал. Хуçаланать харкашу, темле вăрттăн тытăçу. Ура хуçма хатĕррисем ав тăраççĕ тупăнсах.

Чăваша чăваш пулма чăрмав кӳрекенсем темĕн чухлех. Кĕрсе пăхăр лавккана, мĕнле кăна кĕнеке сутмаççĕ пуль унта. Чăвашли çукпа пĕрех. Ярса пăхăр телевизор, мĕн тери ирсĕр те хăрушă, наркăмăшлă япаласене курма тивмест пуль чăвашсен. Тăван сăмах, тăван кĕвĕ ытла сахал радиора...

Кунта пире Мускав та, Вашингтон та, Токио та пулăшаяс çук. Мĕнпур шанăç Шупашкарта. Анчах вăл халь айван-ха. Пурăнаймасть чăвашла. Халлĕхе кунта чăвашлăх хăнара кăна-ха.

1994

Мэр патне, президент патне хамшăн çӳреместĕп. Вĕсенчен хама валли нимĕн те ыйтмастăп. Манран начар пурăнакан та темĕн чухлех. Çавсен шăпи канăç памасть.

Пиншер чăваш пурăнать хула айккинче, вăхăтлăха туса лартнă пĕчĕк пӳртсенче. Пырса кĕме çулсем çук, тăраниччен ĕçмелĕх шыв та çук. Анчах пурпĕр пурăнаççĕ, çут хĕвелпе киленеççĕ. Кăнтăрла ыттисем пекех асфальт тăрăх утса çӳреççĕ, вăй хурса ĕçлеççĕ, çуртсем лартаççĕ, приборсем тăваççĕ. Çывăрма вара çырманалла утаççĕ.

Ачисем те çавах. Кăнтăрла – ыттисемпе пĕрле, каçа хирĕç – çырманалла.

Чăваш шăпи çапларах. Капăр хваттер кама кăна лартса памарĕ пуль, хăйне валли çук. Çурт лартнă çĕрте пĕтĕмпех чăвашла, хваттер пайланă чух – шак та вырăсла.

Ытла та хытă юрататпăр иккен эпир ниçта витменнине пула хамăр пата куçса килекенсене. Кавир сарсах кĕтсе илетпĕр. Хамăр ентешсем вара урăх çĕрте ĕç шыраса çӳреççĕ. Асаттесен çĕрĕнче чăвашсене хĕсĕкрех...

Пуçлăхсем патне çӳрекелерĕм. Усси ытла та сахал.

1994

Мунча шутласа тупнă чăваша халалласа палăк лартнă пулăттăм. Мĕн тери паха япала парнеленĕ вăл пире. Ӳт-пĕвĕме кăна мар, чуна та тасатать. Çамрăклатсах ярать, чир-чĕртен сыватать.

Çав хушăрах куратăп, пиншер вырăс çынни мунча мĕннине пĕлмест. Кăмакара хĕртĕнсе тухса çăвăнкаласа илет те тасалтăм тет. Хурăн милĕке хĕртнĕ чул çинче пĕçернĕ чух сарăлакан тутлă шăршăпа киленеймест. Мĕн тери пысăк çухату!

Виçĕ мунчаллă чăваша та куртăм. Хура мунча, шурă мунча тата пĕве çывăхĕнчи çулла кĕмелли мунча. Кун пекки вара çĕр çинче урăх çуккă та пуль. Чăвашăн çеç пулма пултарать. Мĕншĕн тесен ăна çак ĕçре мунча турри пулăшса пырать.

Чăваш мунчасăр пурăнаймасть.

1996

Тутар сакки çине саваламасăр ларма хушман. Кута шăрпăк кĕме пултарать.

Мĕн тăвас тен, саваламасăрах лартăмăр пулас. Халĕ вара унтан-кунтан чикекен вырăнсем сарăлсах пыраççĕ. Ниепле те чарма çук. Метастаза текенни пуçланчĕ курăнать.

Веçех хамăра пула. Хуть те мĕнле ĕçе тытăнсан та пайланса каятпăр. Пĕр тĕллевпе, пĕр мелпе ĕçлеме пĕлместпĕр. Суйлавсенче те çавах. Шăпах çакăнпа усă курса юлаççĕ те ĕнтĕ пуçлăх пуканне юратакан çич ютсем. Пĕр йышăнсан...

Çапла вара пĕр пуканах çĕршер, пиншер чăваш çулне пӳлсе лартать. Чăваш такăнма пуçлать. Ахаль те пĕшкĕнерех утаканскер чĕркуçленсех ларать. Вăл ура çине тăриччен ыттисем вăшт та вăшт! кăна иртсе каяççĕ, мала ӳкеççĕ.

1996

Чăваш хăйне паян хăвăрт типсе пыракан кӳлĕри пулă пекех туя пуçларĕ. Ниçта кайса кĕме çук. Сывлăшĕ те пӳлĕнет. Ывăнса çитсен тайăнса тăмалăх пĕр тĕреклĕ Юман та çук.

Халăх, халăх текелетпĕр те-ха, халăхĕ пит курăнсах каймасть çав. Ăçта кайса кĕнĕ-ши вара вăл?

Халăхах пулсан ун пĕрлĕхĕ те, пĕрне-пĕри кар! тăрса хӳтĕлесси те, ирĕклĕ чĕлхипе Çĕршывĕ те пулмалла пек-çке. Ăçта-ха вĕсем?

Шак та ĕçкĕпе çеç чунне пусаракансене, тем чул йышлăн пулсан та, халăх теме çук. Ĕçекен çын вăл чунне çеç мар, ӳтне те эрехе сутать, сăн-питне çухатать, халăх вăйне хавшатать. Тен çавна пулах чăваш ятпа çӳрекенсем чылайăн-ха, чăвашĕсем – сахал.

1997

Шак та чĕлхи пирки çеç калаçнине ырламастăп. Ирĕклĕ пулма çакă вăл паллах сахалрах.

Çӗр çинчи çӗршер халăх хăй чӗлхипе çеç калаçать. Анчах ирӗклӗхӗ, телейӗ кашниннех пур-ши? Çук пуль çав. Чылайăшне пачах та пӗлместпӗр. Мӗншӗн тесен влаçӗ çук, çӗршывӗ çук.

Пирӗн шăпамăр та çавах. Тӗп хуламăра Шупашкара та çӗнсе илейместпӗр. Хамăр алăра мар. Ун пуянлăхӗпе усă куракансем те эпир мар.

Тăван чӗлхепе калаçнипех çырлахас марччӗ. Пире паян пурлăх тытăмӗнчи ирӗклӗх кирлӗ. Çав шанчăклăрах. Шăпах çак тӗллеврен хăраççӗ те ӗнтӗ пирӗн "туссем". Суйлавра та, пуçлăха суйласа лартнă чухне те ура хурса пыраççӗ.

Çук, вӗсене чӗлхе ирӗклӗхӗ мар, пурлăхри ирӗклӗх ытларах хăратать. Çавăнпа влаçшăн çапăçаççӗ те ӗнтӗ, паллах, улталаннă чăвашсем çине лайăх тайăнса.

1996

Кантăк умӗнче ларать касса кайнă чăрăш тункати. Юлнă аялти тăлăх туратсем. Симӗс курăнсан та тунсăхлă вӗсем.

Хăш турачӗ çӗнсе тухӗ-ши, ытти йывăçсем пек тӗнче çине çӳлтен пăхса савăнаканни тупăнӗ-ши? Е пурте вӗсем çӗр çинчи çум курăксемпе çапăçсах хуллен типсе пырӗç. Йывăç пурнăçне малалла тăсакан пулӗ-ши?

Мӗн çинчен шутлать-ши пуçне касса кайнă чăрăш?

1997

Юлнă ӗç çине юр çăвать теççӗ. Екки килессе çеç кӗтсе ларар мар-ха. Ӗçлер. Пуçа кахалланма парар мар. Лешне, хыçалтан туртсах тăракан наянлăха, ӗçпе çӗнтерсе пырар.

Акă пӗри калать, нумай вуласан, нумай çырса ларсан ухмаха

тухан тет. Йăнăшать. Ĕçлеме хăнăхнă пуçшăн ун пек хăрушлăх çук. Паллах, пурнăçа, ĕç йĕркине тĕрĕс тытса пырсан, сывлăха упрама пĕлсен.

Пуç хăвачĕ вăл иксĕлми пуянлăх. Тем пек вăйлă ĕçлекен пуç та унпа пĕрре çирĕммĕш пайĕнчен ытла усă кураймасть. Ытти вара веçех леш тĕнчене ăсанать.

Вĕреннипе ухмаха тухассинчен ан шикленĕр, екки килессине çеç кĕтсе ан ларăр. Хăвăра хăвăр хăвалăр. Çырмалли вара...

Тĕрĕссипе каласан, чăваш тĕнчине, чăваш чунне уçса парас ĕçре эпир халь малтанхи кĕске утăмсене кăна тунă-ха. Вăйсем сахал, вĕреннĕ çынсем çитмеççĕ.

1997

Троллейбуссем Шупашкарти пек йĕркеллĕ çӳренине урăх çĕрте асăрхаман. Кам ытти хуласене кайкаласа çӳремен, çакна пĕлмест-ха хаклама.

Кăштах кĕтсе тăрсан троллейбус вĕçтерсе те çитрĕ. Лартăмăр. Шалта çын нумаях мар. Пушă вырăнсем те пур. Ман умри арçын кантăка çывăхрах вырăна йышăнчĕ те пĕчĕкçĕ ывăлне чĕрçи çине илчĕ. Лешĕ ларнă-ларманах калаçма пуçларĕ. Чăвашла шатăртаттарать, ашшĕне ыйту хыççăн ыйту парать. Ачан шăнкрав пек сасси аякранах илтĕнет, троллейбуса илем кӳрет...

Ак тамаша, манпа юнашар тăракан вырăсла калаçса пыракан икĕ хĕрарăм та чăвашла калаçма тытăнчĕç. Тепĕр темиçе çĕрте те чăваш чĕлхи илтĕне пуçларĕ. Пурте тенĕ пекех чăвашсем иккен. Калаçасса кăна вырăсла перкелешсе пынă.

Чăтса тăраймарăм: "Мĕн ятлă-ха эсĕ, маттур каччă", – терĕм. "Ваня Ягудин эпĕ", – терĕ уçăмлă сасăпа.

Троллейбус чарăнчĕ. Анса юлтăм. Ыттисем вара чăвашла шăкăл-шăкăл калаçса малалла çĕмĕрттерчĕç. Пĕчĕк Ваня урокĕ

усăллă пулчĕ иккен. Вăтанчăк та именӳллĕ чăвашсене самаях вĕрентсе илчĕ. Тавах ăна, таса та хăюллă Чăваша.

1994

Паян Президента хытă вăрçнипе мухтанса кăкăра çапса çӳрени пысăк хăюлăхах мар ёнтĕ. Çакна халь кашниех тума пултарать. Нимле чару та çук. Вăрç та вăрç.

Обком хуçаланнă вăхăтра çак çынсем ăçта пулнă-ши? Шкулсенче тăван чĕлхемĕре хĕссе пынă чух мĕншĕн ун хутне кĕме хăранă-ши? Кăткă йăви пек йышлă Чăваш Енре виçĕ хими завочĕ лартнă чух, унта чăваш хĕрарăмĕсене противогазпа ĕçлеттернĕ чух мĕншĕн шăп çӳренĕ-ши? Нуски, супăнь, сахăр, эрех таврашне талонпа пайланă чух сассăр ăçта пулнă-ши? Чăваш халăхĕн пултаруллă ывăлĕсене тăван килтен хăвала-хăвала янă чух, кивĕ Шупашкара динамитпа сирпĕтнĕ чух хăюлăхăр ăçта пулнă-ши?

Паян пурте хăюллă. Çак хăюлăха кам панине асрах тытасчĕ. Астăвăр, митингсенче Сталин портречĕпе сулкалашса çӳрекенсем халĕ те самай йышлăн-ха.

1997

Ватă çын вăл лăпкăрах çын. Уттинчен те паллă, калаçăвĕнче те çавах. Сăмахĕ вырăнлăрах, шухăшĕ тарăнрах, пурнăçа çывăхрах.

Çамрăк чух шутлаттăм урăхла. Каланă ырă шухăша пурте хапăл туса йышăнаççĕ пуль тесе. Йăнăшнă иккен.

Мĕн чул тăрăшмарăм пуль пуçлăхсен пуçне халăха усăллă шухăшсемпе пуянлатас тесе. Илтрĕç те пуль, вуларĕç те пуль, анчах...

Влаç тытăмĕнчи çын хăвăрт улшăнассине кĕтни кăлăхах. Вăл унччен мĕнле пулнă, çав манерлех юлать. Шухăшласса та çавах.

Чăвашлăхшăн хыпманскер пулсан, ăна унталла пăрма хĕн. Хайне чăваш культури кирлĕ мар пулсан, ун нушине чĕре патне илес çук.

Темшĕн-çке-ха суйлав вăхăтĕнче тимлĕхе çухататпăр. Кайран вара çав пуçлăхсенченех чăвашлăха пĕтме парас марччĕ-ха тесе укçа-тенкĕ ыйткаласа çӳретпĕр. Пирĕн пек тăмсайсем урăх пурши.

1996

Тăван халăхшăн ĕçлекенсем те ывăна пуçларĕç курăнать. Уйрăмах политика лавне кӳлĕннисем. Депутат пулса халăха хӳтĕлессине хăй çине илес текенсем те сахаллансах пыраççĕ.

Чылайăшĕ укçа хыççăн кайрĕç. Чăваш шăпине чун ыратăвĕпе виçми пулчĕç.

Юрать-ха чăтăмлисем, хăюллисем пур. Кусем парăнмаççĕ, суйласа илнĕ çулран пăрăнмаççĕ. Вĕсене чĕркуççи çине лартма пултаракан вăй та çук. Ылтăн та айван, доллар та хавшак. Ĕçрен хĕссе кăларса ярассипе хăратни те ним те мар...

Кун пеккисем те пулмасан вара кам чăваш хутне кĕрĕ. Чăваш ĕнси çине улăхса ларнисене кам турта-турта антарĕ.

Тавах сире, пире ырă тĕслĕх кăтартакансене, халăх умĕнчи тивĕçе мĕнле пурнăçламаллине вĕрентекенсене.

1996

Чăваш чĕри Чĕмпĕрте теççĕ. Çапла ахальтен каламан пуль çав.

Малтан Чӗмпӗре Яковлев ҫӗнсе илнӗ, унтан ытти чӑвашсене ҫул уҫса панӑ. Ялта пурӑнакан пиншер чӑваш ҫак хулара тӗрӗслӗх, хӳтӗлӗх шыранӑ. Чылайӑшӗ тупнӑ та пуль. Паллах Яковлев хута кӗнипе. Ахальтен мар ӗнтӗ чӑвашсем ҫак хулана сӑвӑ-юрӑра мухтанӑ.

Тӗп хула тума пикеннинчен те тӗлӗнме кирлех мар. Кунта та тӗрӗслӗх пурах. Чӗмпӗр вӑл юрӑра ҫеҫ мар, Чӑваш тӗнчи варринче.

Чӑваш чӗри паян ӑҫта-ши?

Патӑрьелсем вӗсем самай урӑхла ҫынсем. Паллах маттуртарах, хӑюллӑрах. Те кӳршисем тутар пулнӑран, парӑнманлӑх та аванах сисӗнет. Кӑштах куштанлӑхӗ те, вӗҫкӗнлӗхӗ те пур. Чирӗсем те хӑйне май. Уҫҫӑнах курӑнать хӑйне хӑй ытларах юратни, хӑй ячӗпе киленни, чапшӑн ҫунни (Айхи, Сарби, Юхма...). Сисӗнет самаях тунӑ ӗҫе пысӑклатса кӑтартасси. Кунта кашни хӑй патша. Тен ҫавна пулах ентешлӗхре пӗрлӗх ҫук.

Чӑваш вӑйлӑ пӗрлӗхпе, килӗшӳлӗхпе. Патӑрьелсенчен вӗренер. Анчах вӗсен йӑлисене пурне те тӗслӗх вырӑнне хурар мар. Ыррине – илер, сиенлине – сивлер.

1997

Вӑрҫа хатӗрленекен ӑна пуҫарса ямалли сӑлтавне тупатех.

Иртнӗ вӑрҫа та пуҫлӑхсемех пуҫларӗҫ, нушине тӳсекенӗ вара хура халӑх пулчӗ.

Вӑрҫи вӑл нимӗҫсем пирӗн ҫине тапӑниччӗнех пуҫланнӑччӗ-ха. Анчах хамӑр ертӳҫӗсене пула малтан Гитлера хӑйне пулӑшса пытӑмӑр. Сӑмахпа фашизма хирӗҫле пултӑмӑр, ӗҫпе – ӑна майлах.

Вăрттăн та суя килĕшӳсем туса хамăра хамăр улталаса пурăнтăмăр. Сталин суккăрлăхĕпе коммунистсен чĕмсĕрлĕхне пула халăх юнне юхан шыв пек юхтартăмăр, çын пурнăçне шеллемерĕмĕр. Чи лайăх çынсене пĕтертĕмĕр. Халăх сывлăхĕ те, ăс-тăнĕ те хавшаса юлчĕ. Халĕ те вăй илейместпĕр-ха.

Иртнĕ вăрçăн ахрăмĕ паян та сисĕнет.

1997

Темле майпа ялти акатуйне лекнĕ пĕр Мускав хĕрарăмĕ. Ăна пурте асăрхаççĕ, хисеплеççĕ. Кăмăлне çĕклес тесе ун умĕнче юрлаççĕ, ташлаççĕ. Лешĕ çӳрет сăмсине каçăртса, хăйне патша майри вырăнне хурса.

Акă ăна ман пата чĕнсе пычĕç. Паллашрăмăр. Сăвăласа ăшă сăмах каларăм. Унтан сĕнтĕм пĕрле юрлама вырăсла. Юрлаймарĕ. Ыйтрăм ташласа пама – ташлаймарĕ. Черкке тытса сăмах калама ыйтсан та хăйне кăтартаймарĕ. Сăнĕпе те, ӳчĕ-пĕвĕпе те арçын туйăмне хускатмалăх пахалăхĕ çук.

Анчах... Мускавран-çке. Пултарулăхĕ пĕр пуслăх çук, мăнаçлăхĕ вара вунă лава та вырнаçмасть пуль.

1997

Ухсай Яккăвĕ калашле, чăваш искусстви ют чунпа ӳсме пултараймасть.

Питĕ тĕрĕс сăмахсем. Кам кăна чăвашла юрласа, ташласа кăтартмарĕ пуль. Тава тивĕçлĕ ят илнисем те темĕн чухлех. Анчах вĕсен ӳнерĕнче чăваш чунĕ çук. Ăшши çук, сивĕннĕ

мунча чулĕ пек çеç. Чĕлхепе чун пĕр-пĕринпе килĕшӳллĕ пулмасан ĕç тухмасть, илем те çунатне сараймасть.

Тăван чĕлхе вăйне ĕненмен чăвашсемпе е ют çĕртен килнисемпе малалла каясси пирки ĕмĕтленни кăлăхах. Хамăра хамăр улталани çеç.

1997

Большевиксен "шкулĕ" питĕ ăнăçлă ĕçлерĕ. Вĕренекенĕсем те "пултарулла" пулчĕç. Çын аллинчи пурлăха туртса илесси, çăра çĕмĕрсе кĕресси, суд тумасăрах халăх тăшманĕ тесе персе пăрахасси веçех çавсенчен пуçланчĕ. Çак ирсĕр ĕçе шак та халăх ячĕпе туса пычĕç, ăна çылăха кĕртрĕç.

Калама çук пысăк влаçпа усă курса ял çыннине чура вырăнне хурса ĕçлеттерчĕç. Хула умĕнче ыррăн курăнас тесе кĕлетри тырра вăрлăх юлми тасатса тăчĕç, çĕр ĕçченне выççа хăварчĕç. Лайăхрах вĕреннисем, ăслăраххисем, пултаруллăраххисем хулана тапса сикрĕç. Ял хавшаса юлчĕ. Унпа пĕрле çĕршывăмăр та чакса пычĕ.

Большевиксенчен вĕреннисем паян та чылайăн-ха. Ĕмĕчĕ те вĕсен ĕлĕкхи пекех. Влаç тилхепине ярса тытсан кăтартĕç-ха.

1997

Пĕри ав çухалса кайнă сурăх пекех танкăлтатса çӳрет. Ăçта кăна çитмест пуль. Анчах пур çĕрте те пĕччен. Малтан пĕрле пулнă ырă çынсем унтан пăрăнчĕç, алă пами пулчĕç. (Пĕлсе çитрĕç пулас).

Халĕ ĕнтĕ хăй ятне ӳкме парас мар тесе кампа кăна ыталашмасть пуль. Чăвашлăха сивĕлекенсене те тирĸемест. Унччен хăйне пулăшса пынă çынсене каяш шĕвекĕпе сĕрсе "тав тума" та манмасть. Сутăнчăк. Чăн-чăн сутăнчăк.

Çыравçă пулсан та тăван чĕлхемĕре хӳтĕленĕ çĕрте çук. Митингра та, пикетра та курмарăм. Чăваш чĕлхине суд тунă чухне та сас памарĕ.

Сăмахпа яланах халăхшăн, ĕçĕсем вара – хăйшĕн çеç.

1997

Тапса тăракан çăл шывĕн хăй çулне тупмаллах. Ун чухне вăл çутă, таса, ĕçме те тутлă. Юхма пăрахсанах ун тĕсĕ улшăнать, шурлăх шăрши çапать.

Çын та çавах. Хăй çулне тупаймасан, халăх ĕçне хутшăнаймасан сăн-питне те çухатать.

Çын хăйшĕн çеç пурăнмасть тетпĕр те-ха, анчах пурте ун пек мар çав. Акă пĕри икĕ ĕмĕр пурăнас пек халăх пурлăхне туртать те туртать, ыттисене шалу памалли укçаран та тăпăлтарать, хăй енчĕкне тултарать. Çакна çынсем кураççĕ, куç умĕнчех ылханмасан та иртсе кайсан сураççĕ, ырăпа асăнмаççĕ.

Халăх чунĕ патне çул тупаймасан çынран пăнтăхнă шыв шăрши кĕме пуçлать.

1997

Тĕввик-тĕввик текерлĕк, мĕншĕн тунсăхлăн юрлан?

– Йăва тума вырăн çук, – илтрĕм кайăк сассине.

Пурччĕ улăх, пурччĕ шурлăх, халь курмарăм вĕсене. Тырă акса пуяс пек, тăнсăр пуçлăх хушнипе йăлтах сухаласа пĕтернĕ. Çăрттан ишнĕ çырмара чăх ĕçмелĕх шывĕ çук.

Çут çанталăкра унта пурте хăй вырăнĕнче. Килĕшӳлĕх тупăнать пирĕнтен ыйтмасăрах. Улăхăн улăх пулмалла, шурлăхăн – шурлăх. Шывра пулă вылятăр, вăрман вăйлăн кашлатăр. Ун чух вара кайăксем те юрла пуçлĕç урăхла.

Тĕввик-тĕввик текерлĕк...

1997

Эсир мана ытлашши ан ятлăр-ха. Тен чăнах та чăн-чăн çын пулса çитеймерĕм. Сывлăхăм та чаплах мар, ăс-тăн вăйĕ те хавшак. Пуçăм часах ывăнать.

Вăрçăран эрех ĕçме вĕренсе килнĕ атте мана анне варĕнче выртнă чухнех хĕнеме пуçланă. Çураласса та вăхăтсăр çуралнă. Утма та, калаçма та ытти ачасенчен каярах пуçланă. Тăраниччен апат çимесĕрех çитĕнкеленĕ. Премĕк, канфет мĕннине пĕлмен. Ӳсĕр атте аннепе иксĕмĕре ăшă пӳртрен хăваласа кăларса янипе витере те çĕр каçнă.

Ăçтан вăйлă пулăн-ха, енчен те аттепе анне иккĕшĕ те чухăн пурнăçпа ӳснĕскерсем, тулăх пурнăç тăвайманскерсем пулсан. Ăçтан вăйлă пулăн-ха, енчен те начар вăрлăхран шăтса тухнăскер пулсан. Ăçтан вăйлă пулăн-ха, енчен те ачалăхăм кĕнекесĕр килте иртрĕ пулсан.

Ман вăйлă пулма май та çук. Ăнланăр та каçарăр. Ытлашши ан ятлăр. Хам ĕçлесе илнĕ çăкăрах çиетĕп-ха. Ыттисенчен ыйтса чăрмав кӳрес теместĕп.

1997

Пётём тёнче – театр, тенёччё тахçан Шекспир. Япăх каламан. Тен кăштах мухтарах та пуль.

Апла унта пулмалла куçа илёртекен илемлё сăнарсем, чуна вăй паракан ырă тёслёхсем. Юнашарах вара япăххисем те, çынна усал тăваканнисем, телей патне çывхарма чăрмав кӳрекеннисем. Кунта курма пулать кампа кам тытăçнине, кёрешнине. Шел пулин те пурнăçра вара театрти пек уçăмлăх çукрах çав. Йăлтах пăтрашăнса пётнё. Уйрăмах çакă паллă хальхи вăхăтра, вёреннё çынсен хутшăнăвёсенче, сăмахпа ёç хушшинчи çыхăнусем çирёпех мар чухне. Ёлёкрех тен чăнах та пурнăç уçăмлăрах курăннă.

Тёрёссипе каласан, пурнăç вăл паян хёвёшӳ кăна.

1997

Чёнтём сана тăван яла пёрле кайса килме. Эсё пымарăн. Ёç пирки тёл пулса калаçмалли пур терён.

Ăнланатăп. Ёçлё çыннăн йăли çапла, кирлё çёре çитмелле, тенкё çумне тенкё хушмалла, пурлăх пухмалла. Пуйма пур мая алăран вёçертес килмест.

Анчах манас марччё ыттисене ырă тума, пухнă пурлăхпа хăв ятна çёклеме. Мёнпур укçа-тенке тупăка хурса каяс çук. Илсе кайсан та лере кирлё пулас çук.

Халăхшăн ырă ёçсем туни вара пачах урăхла туйăмсем çуратать, çынлăха упрама пулăшать. Çавна çухатас марччё. Никам та икё ёмёр пурăнмасть. Пурнăçа ырăпах пурăнса иртересчё.

1997

Пёри пёрмаях хăй турăпа калаçни çинчен пакăлтатса çӳрет. Анчах турри унпа калаçма кăмăл тунă-ши?

Турă вăл кампа калаçмаллине хăй суйласа илет. Капан пысăкăш çылăх купиллĕ çынна турă сăмах чĕнес çук. Хăйне мăнна хуракан кĕвĕç чуна, ыттисене улталаса, сутса пуйăнакана турă алă парас çук, калаçма кăмăл тăвас çук.

Апла пулсан турăпа калаçрăм тенине илтсен çынни мĕнлереххине пăхар. Вара вăл турăпа калаçма тивĕç е тивĕç маррине асăрхама та йывăрах мар.

Чĕлхе вăл шăмăсăр. Тем те калĕ. Усалпа калаçнине турăпа калаçни теме те именмĕ. Сăпайлăха çухатнă çынран тем те кĕтме пулать.

1997

Çук, паян Шупашкарта пĕр ирĕклĕ чăваш та çук. Эпĕ те çавах. Шухăшăмпа ирĕклĕн туятăп пулсан та калаçма пуçласанах иккĕленӳ çуралать.

Тухса тăрăттăм кафедра умне, лекци вулăттăм тăван чĕлхемпе. Май çук. Чăваш маррисем чылайăн.

Калаçма пуçларăм кантуртисемпе – ăнланмастпăр терĕç. Пĕри тата, калаçăр йĕркеллĕ чĕлхепе, тесе татса хучĕ.

Ирĕксĕрех çавсен аллине ларма тивет. Ман чĕлхем те пĕр тан чĕлхех пулнине курса пулĕ-ши?

1997

Арçынна килĕшмен хĕрарăм çук. Кашнин валлиех çӳпçи май хупăлчи. Сăлтавĕ паллă ĕнтĕ. Хĕрарăм çумĕнче арçын туйăмне чĕртсе яма пултаракан вырăнсем сахал мар, çӳçрен пуçласа ура тупанĕ таранах.

Пĕри ав киленет ун сăн-питне мала хурса, тути, кулли, калаçăвĕ килĕшнишĕн савăнса. Тепри тупать илĕртӳ кăкăр шайпе пăхса. Виççĕмĕшне ав канăç памаççĕ кăвапаран аяларах вырнаçнă вырăнсем...

Кашни хĕрарăм – хăйне майлă магнит. Вăйлăрах туртакан вырăнĕсем те вĕсен пĕр пек мар. Апла пулин те çӳпçипе хупăлчи пĕр-пĕрне тупаççех.

1997

Çынна ĕç Çын тăвать, туптать, якатать, хăй сăнне парать.

Суту-илӳпе пурăнакансене çи-пуçранах, хăлха çаккисенченех пĕлме пулать. Калаçăвĕ те вĕсен ыттисен пек мар, ытларах сутмалли таварпа тупăш пирки.

Икĕ учитель тĕл пулсан вара... Сăмах кану çуртĕнче те шак шкул çинчен, çамрăк ăру пирки. Учитель тивĕçĕ кашни юн пĕрчине кĕрсе вырнаçнăн туйăнать. Эрне калаççан та, уйăх калаççан та ывăнас çук.

Хăрушсăрлăх комитетĕнчисем вара пачах урăхла. Ыттисемпе питех хутшăнмаççĕ. Ĕç мелĕ вĕсен вăрттăнлăхпа чеелĕх пулни пурнăçра та сисĕнет.

Нумай çул хушши туса пыракан ĕç çынна хăйне май çавăрать, хăй сăнне парнелет.

1997

Ман чăваш хутне кĕрсе ăна кăштах та пулин пулăшу парас килет.

Ытла та хӳтĕлевсĕр халăх вĕт-ха. Ача пекех. Пурне те шанать, ĕненет. Ытти халăх çынни хăйпе кăштах калаçнине те парне вырăнне хурсах хаклать. Сăпайлăхне, çемçе кăмăлне пула хăйĕх йывăрлăха кĕрсе ӳкет. Темшĕн çке-ха уншăн влаç хӳтĕлевĕ питĕ сахал. Суйласа лартнисем те ун валли мар.

Пурăнать вара чăваш шăлне çыртса, ытти халăх çыннине юрама тăрăшни те хăйне хирĕçле çавăрăнса тухнине чăтса. Пурпĕрех вăл тарçă. Ĕçре те, килте те...

1997

Темшĕн çке-ха пĕчĕк савăнăçа хаклама пĕлместпĕр. Шак та пысăккишĕн çеç çунса çӳретпĕр. Лешĕ вара çывхарасшăнах мар, таçта тарса çӳрет.

Кулленхи пурнăç вăл ытларах пĕчĕк савăнăçсенчен тăрать. Пĕчĕкки йышланмасăр пысăкки пулаймасть.

Пĕчĕк савăнăçпа киленме пĕлмен çын пысăккине кĕтсе илеймест.

1997

Пит шăрăх кун антилопăсем шыв хĕрне пыни крокодилсемшĕн калама çук пысăк савăнăç. Тăраниччен чĕрĕ юн, какай...

Шывсăр ăнтăхса çитнĕ чĕр чун вара юнашар тăракан тусне крокодил шăлĕсем çаклатса кайнине курсан та ăна çăласси пирки шутламасть. Пĕртен-пĕр тĕллев – ĕçсе тăранасси.

Чăваш та çавах. Хăйне пĕрерĕн-пĕрерĕн туртса путарнине асăрхамасть. Хуйхă хăй хапхи умне пырса тăриччен чăвашлăхшăн

кар! тăрас ёçе хутшăнасшăн мар. Пĕччен телейлĕ пулас пек тыткалать. Калама çук пысăк йăнăш тăвать.

Тусăмсем, тăванăмсем! Пирĕн паян никам туртса татайми, никам туртса илейми хурçă сăнчăр çыххи пулма тăрăшмалла. Ун чух вара нимĕнле крокодил та чăваша çăтса яраймĕ.

1997

Парти, парти, теeççĕ, вăл мĕннине пĕлмеççĕ.

Хуть те мĕнле парти те вăрттăн тĕллев лартнă çынсен ушкăнĕ. Халăх хăлхине йăпатакан сăмахсемпе витĕнсе влаçа алла илесси, хуçаланса пурăнасси.

Парти вăл – айван çынсен ушкăнĕ кăна. Вăйлă çынна, пултаруллă, талантлă çынна нимле парти те кирлĕ мар.

Тĕрĕссипе каласан, çĕр çинче пурĕ те икĕ парти кăна: хĕрарăмсем тата арçынсем. Çавсем хушшинче килĕшӳлĕх пулсан, пур çĕрте те йĕрке пулĕ. Ытти партисем вĕсем пурте тĕнчене пăтраштарас тĕллевпе тунисем кăна.

Чăвашсем тĕрлĕ партисене пайланса кайнине ырламастăп. Ахаль те сахалăн вĕт-ха эпир. Чăваш пулар та чăвашлăх ячĕпе пĕр ушкăна чăмăртанар. "Чăваш" тени хăех пĕр партире тăнине пĕлтертĕр. Вара тен хамăр çĕршыва та çĕнсе илĕпĕр.

1996

Тăван килтех ытти халăх çыннисен аллине ларассишĕн çунса çӳрер мар-ха. Ытларах хамăр пирки шутлар, чăвашсене пулăшар.

Тем тесен те чăваш тĕнчине тытса пырас ĕçре чăвашсемех шанчăклă.

Чăваш çĕрĕ чăваша юрататъ, тыррине те ытларах паратъ. Хуçа пулма килнисене аплах мар.

Чăваш вăрманĕ чăваша юрататъ, кăмпи-çырлине те ытларах паратъ.

Çакна чăваш ăнланатъ, тавралăха упрама тăрăшатъ. Çавăнпа чăваш шанчăклăрах.

Чăваш министр – вăл ман министр. Ун халăх умĕнчи яваплăхĕ пур. Енчĕкне ылтăн-кĕмĕл тултарса ют çĕре тухса тарас хăрушлăх та çук.

Чăвашшăн чăвашах шанчăклăрах.

1996

Ытарайми Чăваш Енĕм, тӳрленме пĕлми суранăм!

Асаттесен çĕрĕнче пурăнатпăр авалтан. Пирĕн лăпкă пурнăçа сахал мар куç хывакан.

Усал вăйсем хăмсарсан пур-ши пирĕн паттăрсем, Улăп евĕр чăвашсем – çĕр çыртса тупа туса хĕç тытма хатĕррисем? Пур-ши хирĕç тăмалли, тăшман çулне пӳлмелли. Апла пулсан шухăшлар, мĕн çуккине пур тăвар, çитменнине çитерер.

Енчен чăрсăр чунлисем ирсĕр ĕçе тытăнсан, çĕр çинчи мĕн пур чăваш, хамăр чысшăн кар! тăрар! Несĕлсем пин çул хушши тарпа шăварнă çĕре çичĕ юта парар мар, тĕнче кулли пулар мар.

1995

# СĂМАХ ВĔÇЕВĔ

Шупашкар хули. Çуллахи илпеклĕх. Афанасьев урамĕ Мускав проспекчĕпе пĕрлешнĕ çĕрти пĕр çурт тăрринче вăйлă репродуктор янăрать. Акă эфира чăваш кăларăмĕсем тухрĕç, Анатолий Кибечĕн прозăлла сăввисем шăрçаланма тытăнчĕç. Вăрăмах та мар пек хайлавĕсем, анчах вĕсенчен кашнинчех хăйне майлă шухăш, хăйне майлă туйăм пур. Итлетĕн те – кашнин шухăшĕ чуна çывăх, кашнин туйăмĕ пĕлтерĕшлĕ. Янăраса кăна тăрать чăваш эфирĕ...

– Çунатлă пирĕн Кибеч, – тет троллейбус чарăнăвĕнчи пĕр чăваш. – Ав епле сулăмлă ун вĕçевĕ...

– Çук, ман шутпа Кибечĕ хăй вĕçмест, унăн çунатлă сăмахĕ вĕçет, – шӳтлесе илет унăн юлташĕ.

Çапла юратса, сума суса пилĕк каç итлерĕ халăх Анатолий Кибеч сăввисене. Инçете саланчĕ ун сăмахĕн вĕçевĕ.

Чăнах та, Анатолий Кибеч тесенех пирĕн куç умне юлашки çулсенче халăхра анлă сарăлнă чăваш юррисен авторĕ тухса тăрать. Хăйне курнă-и эпир, курман-и, паллатпăр-и ăна, палламастпăр-и, – анчах юрă поэзийĕнче çĕннине шыракан, хăй ятĕнчен, хăй чунĕнчен тем калама тăрăшакан сăвăçа асра тытса юлатпăр, унăн кашни çĕнĕ юрри тухмассерен çак шухăш патне таврăнатпăр...

Чăваш çĕршывне çĕр пин юрă çĕршывĕ теççĕ. Чăнах та, юррисем пурнăç пек аслă та Атăл пек тарăн пулнăран пирĕн юрăсенчен вырăсĕ те, нимĕçĕ те, хамăрпа кӳршĕллĕ тутарĕ-пушкăрчĕ те мĕн ĕлĕкренех тĕлĕннĕ. Тĕрлĕ халăх çыннисем çак шухăша палăртса çырса хăварни сахал мар пулнă. Мĕнле кăна юрăсем пулман чăваш халăхĕн: ĕç юррисем, йăла юррисем, туй юррисем, салтак юррисем, вăйă юррисем, кĕреке юррисем... Хăшĕсем пурнăçа мухтакан мăнаçлăхпа уйрăлса тăнă, теприсем нимери халăх хастарлăхне çĕкленĕ, виççĕмĕшĕсем вара шӳтпе кулăш хĕлхемĕ сапнă, такмак хĕрӳлĕхĕпе чуна тасатнă...

Паллах, çав юрăсен кашниннех авторĕсем пулнă. Халăх юррисене илсен, вĕсене кам çырнине эпир пĕлместпĕр, анчах юрă хăй тĕллĕн çуралманни пуриншĕн те паллă, эппин, кам та

пулин ун пуçламăш çаврине шухăшласа-уйласа тупнă, кайран вара, тинĕс хĕрринчи вак чулсене якатас тесе вăйлă хумсем шурă кăпăк кăларса ĕçленĕ майлах, халăх кулленхи пурнăçра çав юрăсене якатнă, шухăшне аталантарнă, хăй шайĕпе пĕтĕмлетнĕ.

Илер-ха, сăмахран, "Алран кайми аки-сухи" юрра. Халăхăмăрăн мĕн тери пысăк шухăшĕ, мĕн тери аслă туйăмĕ ĕмĕр-ĕмĕрлĕх тĕвĕленнĕ унта! Профессилле поэтсем те, нумай вĕреннĕ музыка тĕпчевçисем те тĕлĕнме пăрахаймаççĕ çак генилле произведенирен. Мĕнле ăста шăрçаланă шухăш картине, мĕнле чаплă вăйăçă йĕркеленĕ унăн кĕвĕ-çемĕ çаврине – эпир пĕлейместпĕр. Анчах юррăн чуна тыткăнлакан хăвачĕ, кăмăла атте-аннелĕх туйăмĕпе ăшăтакан çуначĕ пĕтĕм халăха пĕрлĕхре тытса тăни, кашни итлемессерен куççуль пăчăртаса кăларни пире çав юрра несĕлĕмĕрсен кăмăл-сипет пуянлăхĕ вырăнне, килес ăрусен малашлăх палли вырăнне хурса хисеплеме хистет. Мĕн чухлĕ пирĕн çавăн пек чаплă юрăсем!

Çĕнĕ çырулăх йĕркеленсен, шкулсем уçăлсан, хамăрăн профессилле юрă-кĕвĕ ăстисем килсен чăваш музыкин аталанăвĕ пур енĕпе те çĕнĕ сулăм, çĕнĕ вăй-хал илчĕ. Композиторсемпе пĕрле поэтсем те сасă пачĕç, çепĕç кĕвве çепĕç сăмах çаврипе пуянлатма çĕнĕ майсем шыраса тупрĕç. Паян эпир Федор Павлов, Василий Воробьев, Степан Максимов, Филипп Лукин, Григорий Хирбю, Герман Лебедев композиторсен сăваплă ячĕсемпе юнашар ятарласа юрă анинче ĕçлесе тулли пучахлă тыр-пул ӳстернĕ Микихвер Ваçанкка, Илле Тукташ, Петĕр Хусанкай, Иван Ивник, Нестер Янкас, Александр Кăлкан, Валентин Урташ поэтсене сума суса та пуç тайса асăнатпăр.

Кашни поэт-юрăçăн халăхра чи анлă сарăлнă, нумайлăха палăрнă юрри пур. Георгий Ефимов сăввисемпе çырнă "Шупашкарăм, савнă Шупашкарăм" (кĕвви Г. Хирпӳн), "Такăрлатăп урама" (кĕвви Ф. Лукинăн), "Тулли уйăх тӳперен сăнатчĕ" (кĕвви Ф. Васильевăн) юрăсем пире çак поэтăн тĕнчине, шайне кăтартаççĕ. Александр Галкин поэт ячĕ "Шупашкар каçĕсем", "Кăвак чечексем", "Сурăм вăрмань" юрăсемпе çыхăннă. Юрий Вирьял тесен вара эпир тӳрех "Сенкерленчĕ шуçăм" юрра асилетпĕр, поэта студент çулĕсенчех çакăн пек çепĕç чĕлхеллĕ

те ҫепӗҫ туйӑмлӑ сӑвӑ ҫырма пултарнӑшӑн паян кун та чӗререн тав тӑватпӑр. Юрий Плотникова та, асӑмӑртан кайми Александр Сергеев композиторпа пӗрле "Лар, аннеҫӗм, юнашар" юрӑсӑр пуҫне урӑх нимӗн те ҫырас мар пулсан та эпир халӑхӑмӑр ячӗпе ӗмӗр-ӗмӗр тав сӑмахӗ калӑттӑмӑр.

Ҫӗнӗлле туйӑмпа, ҫӗнӗлле шухӑшлавпа, ҫӗнӗлле пусӑмпа тухрӗ чӑваш тӗнчине Анатолий Кибеч поэтпа Юрий Григорьев композитор ҫырнӑ "Ӗмӗр сакки сарлака" юрӑ. Республикӑмӑрӑн тава тивӗҫлӗ артистки Людмила Семенова эфирта пӗрремӗш хут юрласанах вӑл пурне те тарӑн шухӑша ячӗ:

> Ӗмӗр сакки сарлака тетпӗр эпӗр хӑш чухне,
> Сакки чӑн та сарлака, анчах ӗмӗрӗ кӗске...

Чӑнах та, ҫак сӑмахсене итлесен ирӗксӗрех хӑвӑн пурнӑҫ ҫулӗ ҫине ҫаврӑнса пӑхатӑн: тӗрӗсех утатӑн-и эсӗ, аслине сума сӑватӑн-и, кӗҫӗннине алӑ паратӑн-и, хӑвӑн хыҫҫӑн пыракана умри тумхахран хӑтарма хатӗр тӑратӑн-и... Хӑйӗн шухӑшӗ-кӑмӑлӗпе, хӑйӗн кӗвӗ ҫаврипе пирӗн ҫывӑх тус-юлташ пулса тӑчӗ ҫак ҫурхи шӑнкӑрч кӗвви пек ҫӗнӗ юрӑ. Антив, сӑмах искусствин чи ҫӳлти виҫипе пӑхсан сӑвви те пӗр айӑпсӑрах мар-и унӑн, ятарласах шырасан кӗввинче те ҫитменлӗх тупӑнать-и тен, вӑл енне кайсан, мулла хӗрӗ ҫумӗнче те хурламалли сӑлтав пурах теҫҫӗ, – ҫапах та "Ӗмӗр сакки сарлака" хӑйӗн шыравӗпе, ҫӗнӗлӗх туртӑмӗпе чӑваш халӑхӗн асне кӗрсе юлмалли юрӑ пулчӗ. Вӑл пире калаҫтарчӗ, вӑл пире тавлаштарчӗ, хавхалантарчӗ, ҫунатлантарчӗ, апла-тӑк – хӑйӗн ӗҫне турӗ.

Унтан эфира пӗрин хыҫҫӑн тепри тенӗ пек "Пурнӑҫ ҫулӗ такӑр мар", "Телей, телей", юрӑсем тухрӗҫ. Юрий Жуковпа Анатолий Никитин композиторсем, поэт мӗн калас тенине тӗрӗс ӑнланса илсе, унӑн тӗп шухӑшӗпе килӗшӳллӗн паянхи кун ыйтӑвӗсене тивӗҫтерекен кӗвӗ-ҫемӗ тупрӗҫ. Ку юрӑсем те халӑхра хӑвӑрт сарӑлчӗҫ. Ҫапла пуҫланчӗ Анатолий Кибечӗн юрӑ тӗнчинчи пурнӑҫӗ.

Кашни саманан, кашни вӑхӑтӑн хӑйӗн юррисем пулаҫҫӗ. Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче Илле Тукташпа Герман Лебедев хӑйсен

лирикӑлла туйӑмӗсене "Савниҫӗм" юрӑра туллин палӑртаҫҫӗ. Ваҫлей Давыдов-Анатрипе Филипп Лукинӑн "Телейлӗ туслӑхӗ" – аллӑмӗш ҫулсенчи курӑмлӑ тӗслӗх. Валентин Урташпа Александр Сергеевӑн "Ма хитре-ши Шупашкар урамӗ" тата "Шупашкарӑн лӑпкӑ каҫӗсем", "Юрламасӑр чун чӑтмасть" юррисем – утмӑлмӗш ҫулсенчи ҫамрӑксен шухӑш-кӑмӑлне кӑтартакан паллӑсем. Ҫитмӗлмӗш ҫулсенче Анатолий Цветковпа Иван Аршиновӑн "Куккукӗ" чӑваш кӗвви-ҫеммин ҫаврине хӑйне майлӑ сӑн-сӑпат кӳчӗ. Паянхи юрӑсене илес пулсан, ман шутпа, унта эстрада пусӑмӗ енне сулӑнни сисӗнет, сцена ҫинче юрлакансем те хӑйсен юрлас мелне-меслетне ирӗксӗрех ташӑ хусканӑвӗсемпе ҫыхӑнтараҫҫӗ. Вӑтӑр-хӗрӗх ҫул каялла ялти тата хулари кашни иккӗмӗш-виҫҫӗмӗш каччӑ аллинче хуткупӑс кураттӑмӑр пулсан, паянхи кун магнитлӑ хӑю ҫиеле тухрӗ, халь кашни ҫамрӑк хӑйне килӗшекен кассетӑсене пухса пырать. Ҫак уйрӑмлӑх, паллах, юрӑ валли сӑвӑсем ҫыракансен пулта-рулӑхӗнче те уҫҫӑнах сисӗнет, мӗншӗн тесен кашни автор хӑй вӑхӑчӗн таппине туйса ӗҫлет, хӑйӗн туйӑмӗсене ҫав пусӑмпа ҫыхӑнтарса йӗркелет. Ҫак мехелпе ҫуралнӑ та Анатолий Кибечӗн эпир ҫӳлерех асӑннӑ юррисем.

Ҫапах та мӗнпе ҫыхӑннӑ-ха поэтӑн тӗп туртӑмӗ-ӑнтӑлӑвӗ? Вӑл, ман шутпа, паянхи ҫӑмӑл мар саманан нерв ҫипписемпе ҫыхӑннӑ. Акӑ ача ҫуртӗнчи тӑлӑхсем хӑйсен ашшӗ-амӑшӗ ячӗпе ҫурта ҫутса шӑп лараҫҫӗ. Вилмен пуль-ха, пур пуль-ха таҫта вӗсен ашшӗ-амӑшӗ, анчах пурнӑҫ усалӗн тыткӑнне лексе хӑйӗн самантлӑх киленӗвӗпе канӑҫ тупса, ҫав канӑҫа тӑлӑхсен ҫуртӗнче пурӑнакан ачисенчен те мала хурса, ют йӑвари куккук йӑлипе ӗмӗрлет пулӗ ӗмӗрне. Ачисем вара, айӑпсӑр чунсем, хӑйсен ашшӗ-амӑшне те айӑпсӑр курасшӑн, вӗсен ячӗпе ҫурта ҫутса хӑйсен малашлӑхне сӑвап кӳресшӗн...

Хӑш чухне пурнӑҫра тепӗр майлӑ та пулать: ачисем килтен ҫунат сарса вӗҫсе тухса каяҫҫӗ те тӑван йӑвана урӑхран пырса та пӑхмаҫҫӗ. Мӗнле пурӑнать унта ватӑлнӑ ашшӗ-амӑшӗ, мӗнле ларать тахҫан хӑйӗн хӳтлӗхне, хӑйӗн ӑшшине сана пилленӗ кил-ҫурт, – ҫакӑ ӑна пачах интереслентермест. Анатолий Кибеч ҫак тӳнтерле пулӑма юрӑ поэзийӗн мелӗпе сӑнласа кӑтартма

шут тытнӑ, ун ҫинчен чуна пырса тивмелле юрӑ ҫырнӑ.

Афган ҫӗрӗ ҫинче юн тӑкнӑ салтаксене халалланӑ юрӑра та Кибеч хӑй ҫулӗнчен пӑрӑнмасть. Вӑл ыйтӑва хӑюллӑн та тӳррӗн лартать: мӗн сӑлтавпа асапланса ҫӳретпӗр эпир, чӑваш ачисем, Кабул, Кандагар, Джелалабад хулисен таврашӗнче? Мӗн шыратпӑр эпир унта? Мӗншӗн кӗретпӗр дарисемпе пуштусен, вырӑнти ытти ӗҫлӗ халӑхсен хушшине-хуппине? Мӗне кура ҫӗр те вунпӗр чӑваш ачин чӗри тапма чарӑнчӗ ҫакӑнти хӑйӑрлӑ хирсенче, мӗне кура ӗмӗрлӗх сусӑрланса таврӑнчӗ ҫавӑнти сӑртлӑ-туллӑ таврараи вуншар та ҫӗршер чӑваш каччи? Кам евичӗ те валемӗ лӑплантарӗ пирӗн чунӑмӑра? Юрать-ха, поэтсем пур. Юрать-ха вӗсен шухӑш ҫаври ҫынна канӑҫ паман тӗп ыйтусем таврa явӑнать, халӑха, этемлӗхе, президентсемпе патшасене ҫав ыйтусем пирки пуҫ тавра ҫавӑрса шухӑшлама хистет. Чечен ҫӗрӗ ҫинче сӑлтавсӑр хускалнӑ вӑрҫӑ инкекӗсене сӑнлакан юрӑ пирки те ҫавнах каламалла. Поэт хӑй юрринче уйрӑм политиксен тӳрккеслӗхне пула тухнӑ вӑрҫа сивлет, ӑна кӑларакансене питлет. Ҫапла вара халӑх шухӑш-кӑмӑлне палӑртакан юрӑ тӗрӗсмарлӑха хирӗҫ татӑклӑн кӗрешет, салтак пек ҫапӑҫать, ырӑпа усал тытӑҫӑвӗнче яланах пурнӑҫ пархатарне хӳтӗлет.

Ҫынлӑхпа чунлӑх ыйтӑвӗ – акӑ мӗн тӗпре тӑрать Анатолий Кибеч юррисенче. Кӑмӑл тасалӑхӗ, туслӑх, юрату, тӑван кӗтес илемӗ, ҫамрӑклӑх хӗлхемӗ, чӑваш ҫӗрӗн сипечӗпе ӗҫлӗ пурнӑҫ пехечӗ – ҫак пахалӑхсем тавра чӑмӑртанаҫҫӗ унӑн сӑнарӗсем. Халӑхран вӗренсе, чӑваш поэзийӗн аслӑ ҫулӗнче хӑйӗнчен маларах ҫула тухнисен ӗҫне-хӗлне тишкерсе, самана сассине итлесе хайлать вӑл хӑйӗн кӗвӗллӗ сӑввисене. Ҫырӑннӑ чух юрату юрри ҫырать, екки ярсан мухтав юрри шӑрҫалать, чун ыратса килнӗ вӑхӑтра тунсӑх юрри кӗвӗлет. Кашнинчех хӑй сассине, хӑй эрешне шырать, шухӑш-туйӑма хӑй ӑсталӑхӗпе туптаса хӑй тӗнчекурӑмӗ витӗр кӑларать.

Пӗр ӑс лайӑх, иккӗ тата лайӑхрах, теҫҫӗ ырӑссем. Анатолий Кибеч те, ҫакна асра тытса, час-часах поэзи лаҫҫинчи юлташӗсемпе канашлать. Канашлани вӑл – вӗренни. Поэтӑн вара ӗмӗр тӑршшӗпех вӗренмелле. Хӑй тӗллӗн вӗренмелле, мӗншӗн тесен поэтсем хатӗрлекен шкул ниҫта та ҫук. Ӑсӗпе

виçет самана пулăмĕсене çыравçă, чун хыпанĕпе хыпалать, çичĕ туйăм витĕр кăларать. Пĕрре мар курнă эпĕ Анатолий Кибеч меллĕ вăхăтра Георгий Ефимовпа, Аркадий Лукинпа, Валем Ахунпа калаçса ларнине. Тепĕр чухне пĕр сăмах пирки хускалнă калаçу икĕ-виçĕ сехете тăсăлать. Калăпăр, Илпек Микулайĕ хăй вăхăтĕнче "симĕс" тата "ешĕл" сăмахсем хушшинчи уйрăмлăх пирки кун каçипех ăнлантарма хатĕрччĕ. Çакă пулать те ĕнтĕ вăл сăмах шкулĕ.

Юррисем çинчен калаçатпăр пулсан, юррине юрлатпăр пулсан пирĕн çав юрăсен авторĕн пурнăç çулĕ çинчен те пĕлмеллех. Анатолий Кибеч (Анатолий Ильич Ефимов) Канаш районĕнчи Чулкăмака ялĕнче 1937 çулхи çурла уйăхĕн 10-мĕшĕнче чăваш хресченĕсен кил-йышĕнче çуралнă. Тăван ялти тулли мар вăтам, Ăвăспӳрт Кипечри вăтам шкулсенче пĕлӳ илнĕ, Васильеври вăрман техникумĕнче вĕреннĕ, салтак ячĕ тухсан Тинĕс-çар флотĕнче хăй тивĕçне татнă, унтан таврăнсан чун туртăмĕпе Канашри педагогика училищине вĕренме кĕнĕ, музыка пĕлĕвĕн никĕсне алла илнĕ. Илнĕ пĕлĕве Йĕпреçри интернат-шкулта музыка учителĕнче ĕçлесе çирĕплетнĕ, кăштахран хăй вĕреннĕ училищĕне преподаватель пулса таврăннă. 1968 çулта И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтне пĕтерсе тухнă хыççăн Анатолий Кибеч пĕр хушă Кӳкеçри вăтам шкулта, унтан учительсен пĕлĕвне ӳстерекен институтăн музыка кабинечĕн ертӳçинче ĕçлет. 1976 çулта, Мускаври аспирантура пĕтерсе педагогика наукисен кандидачĕн диссертацине ăнăçлă хӳтĕленĕскер, Анатолий Чăваш патшалăх университечĕн философи кафедринче аслă преподавательте вăй хурать, пысăк шайпа ăслăлăх ĕçне кӳлĕнет, эстетика ыйтăвĕсемпе темиçе кĕнеке çырса кăларать, хаçат-журналта нумай статья пичетлет. 1982 çултанпа унăн пурнăçĕ педагогика институчĕпе çыхăннă. Кунта вăл – педагогика кафедрин доценчĕ, музыка воспитанийĕн методика кафедрин ертӳçи, философи кафедрин доценчĕ. Лекцисене чăваш халăхĕн авалтан килекен тĕнчекурăмĕпе, чăваш литературипе, чăваш искусствипе тачă çыхăнтарнăран ăна студентсем яланах хапăл туса кĕтсе илеççĕ, интересленсе итлеççĕ.

Пĕрлехи ĕç туйăмĕ, чăваш аталанăвĕн малашлăхĕ Анатолий

Кибечшён яланах пурнăç кӳлĕмĕнчи тĕп шăнăр пулнă. Çавăнпа вăл куллен кун тенĕ пек халăх çинче. Тата аякран пăхса-сăнаса тăраканни мар, пĕрлехи ĕçе йĕркелесе ярас тесе тăрăшаканни. Малтанхи çулсенче эпир ăна хулари хор обществине ертсе пыракансем хушшинче кураттăмăр, унтан, çĕршывра демократи юхăмĕ аталанса пынăçем, вăл Чăваш наци конгресне йĕркелес ĕçе хастар хутшăнчĕ, митингсемпе пухусенче хастар калаçрĕ, наци политикин ыйтăвĕсемпе статья хыççăн статья пичетлерĕ. Шупашкар хула канашĕн депутачĕ пулнă май унта культура енĕпе ĕçлекен комиссие пуçаруллăн та ăнăçлăн ертсе пычĕ.

Чăваш тĕп хулинче, чăвашĕсем çитмĕл процента яхăн пурăнаççĕ пулин те, чăвашла йăла-йĕрке калама çук сахалччĕ. Троллейбус-автобусра вырăсла çеç калаçатчĕç, пуху таврашне вырăсла кăна ирттеретчĕç, ача пахчисенче, шкулсенче пĕр вырăс чĕлхи кăна хуçаланатчĕ. Хулан архитектура сăн-сăпатне йĕркелесе пыракансем те чăвашлăх çинчен шухăшламастчĕç. Демократи çилĕ вĕрме тытăнсан тин ленинла наци политикин сăтăрла йĕрки пăрахăçа туха пуçларĕ. "Классăр тата нацисĕр" общество тăвас суя туртăм паян та хăшне-пĕрне илĕртет. Ним те мар имĕш вĕсемшĕн эпир чăваш пулма пăрахни, атте-анне чĕлхине çухатни, этемлĕх историйĕн чи йывăр çулĕсемпе утса тухнă чăтăмлă халăх хăй сăн-сăпатне манăçа кăларни. Чăвашлăх юхăмĕ, турра шĕкĕр, çакна татăклăн хирĕçлерĕ. Çав юхăма пуçарса та ертсе пыракан Атнер Хусанкай, Виталий Станьял, Валери Туркай, Микихвер Наумов, Владимир Иванов, Вячеслав Тимофеев ретĕнче Анатолий Кибеч сасси те çирĕп те татăклă пулчĕ. Ку туртăм унăн депутат ĕçĕнче те, çыравçă мешехинче те уççăн палăрса пычĕ. Этемлĕхе чи йывăр тапхăрта илем туйăмĕ хăтарса хăварасса, халăх чун-чĕринче çав туйăм сӳнмессе шанса куллен кун хăй ĕçне тăвать ырми-канми кĕрешӳçĕ, сăмахпа та, ĕçпе те чăвашлăх юхăмĕн сулăмне ӳстерме тăрăшать.

Эстетика тĕпчевçи. Доцент. Педагог. Паллă политолог. "Канашсем" ентешлĕхе пĕршухăшлăхпа пĕртĕллевлĕх кӳрсе тăраканĕ. Çыравçă. Прозăлла сăвăсен, калавсен, пьесăсен авторĕ. Публицист. Пултаруллă спортсмен: яш чухне Канаш хулин чемпионĕ те пулнă, волейболла выляса чи пысăк ăмăртусене

хутшăннă. Чăваш культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Раççей писателĕсен союзĕн членĕ. Гражданин... Çапла малалла та тăсса кайма пулать Анатолий Кибеч ĕçĕ-хĕлĕпе чун туртăмĕн паллисене. Çав паллăсем витĕр куратпăр та эпир унăн сăн-сăпатне, чун-чĕрине, унăн пурнăç тĕллевне.

Çапах та, кирек мĕн каласан та, Кибеч хавхаланăвĕн пархатарĕ пуринчен те ытларах юрăра палăрчĕ. Саркайăк пек вĕçрĕç çĕнĕ юрăсем унăн чĕринчен тухса, кашни чăваш ялне-хулине, кашни чăваш килне-çуртне çитрĕç. Çав юрăсенче çынсем хăйсен çăмăл мар кун-çулĕн йĕррисене тупаççĕ, хăйсен юратăвĕн хĕлĕхĕсене асăрхаççĕ. Çавăнпа çывăх та вĕсем халăх кăмăлне. Çавăнпа ĕçре те, уявра та яланах пирĕнпе Анатолий Кибеч чăваш композиторĕсемпе алла-аллăн ĕçлесе çунат панă юрăсем.

Тӳрех каламалла: поэтсен хăйсен йышĕнче юрă жанрĕнче ĕçлекенсем ытлашши пысăк хисепрех мар. Сăлтавĕ паллă: юрă сăввинче мĕнле те пулин çĕнĕлĕх тупма питĕ кансĕр, ма тесен юрă сăвви вăл яланах ансат, яка, тĕрĕс, пĕр пек виçеллĕ пулмалла. Чăн-чăн поэзи вара пĕрмаях çĕннине, ыттисем курманнине шырама хистет. Чылай чухне юрă сăвви кĕвĕ илемлĕхне пула сарăлать, халăх асĕнче нумай пурăнать. Калăпăр, Илле Тукташăн “Шурă роза”, Иван Ивникĕн “Кĕсле купăс”, Николай Сандровăн “Çутă ĕмĕт”, Георгий Орловăн “Çĕмĕрт” сăввисем вĕсене Филипп Лукинпа Григорий Хирпӳ композиторсем чаплă кĕвĕпе çунатлантарман пулсан хальхи пекех палăраятчĕç-ши? Темле çав. Петĕр Хусанкая та эпир чи малтан лайăх юрăсен авторĕ пулнăшăн мар, “Савни”, “Хура пĕркенчĕк”, “Тилли юррисем” сăвă ярăмĕсене çырнăшăн пуç таятпăр-çке? Тĕпчевçĕсем шутласа кăларнă тăрăх Михаил Лермонтов сăввисене никĕсе хывса композиторсем 2500 музыка произведенийĕ кĕвĕленĕ. Апла пулин те эпир Лермонтова юрă пултарулăхĕнчи ĕçĕ-хĕлĕшĕн мар, чăн поэзири шухăш-туйăм вĕçĕмсĕрлĕхĕшĕн хисеплесе чыслатпăр. Эппин, юрă сăвви, опера либретти пекех, иккĕмĕш ретре тăрать. Ахальтен мар Ухсай Яккăвĕ мана час-часах: “Юрăсемпе аппаланса çамрăк вăхăтна сая ан яр, çыр пĕр-пĕр сулăмлă япала”,– тетчĕ. Эппин, вăл та юрă ĕçне иккĕмĕш вырăна хунă. Çав хушăрах ăнăçлă юрă поэт

ятне поэмăран та ытларах çĕкленĕ тĕслĕхсем те çук мар. Калăпăр, вырăс поэчĕ Михаил Исаковский темиçе поэма та ăсталанă, анчах ун ятне поэмăсем мар, "Катюша", "Лучше нету того цвету", "И кто его знает", "Ой, цветет калина", "Ой, туманы мои", "Одинокая гармонь", "Враги сожгли родную хату" тата ытти юрăсем вилĕмсĕрлетрĕç. Валентин Урташăн "Пурăнас килет" тата "Йăхран йăха" поэмисем те пĕртте начар произведенисем мар, анчах Урташа эпир чи малтан поэт-юрăç пулнипе асра тытатпăр, вăл ăсталанă "Укăлча умĕнче", "Калаймарăм", "Шупашкара килтĕм", "Тухăçран хăпарсан шурăмпуç" юрăсене çине-çинех шăрантаратпăр. Кун пек тĕслĕхсем сахал мар.

Пĕррехинче эпир сăвăçсемпе юрăçсен ушкăнĕпе аякри районти яла пырса çитрĕмĕр. Халăхĕ кĕтсех тăрать иккен. Паллашрăмăр хайхи.

– Кибече ма илсе килмерĕр? – ыйтать пĕр хĕрарăм.

– Кибеч? Камччĕ-ха вăл? – юриех йĕкĕлтесе ыйтнă пек тăвать пирĕнтен тахăшĕ.

– Ара, "Ĕмĕр сакки сарлака" çыраканĕ! Мĕнле пĕлместĕр вара? Хăвăра поэт тесе калатăр тата... – кăмăлсăр пулчĕ хайхи хĕрарăм.

Мĕн çинчен калать-ха ку тĕслĕх? Халăх поэт-юрăçсене те сума сунине, юратнине, асра тытнине пĕлтерет, ма тесен лайăх юрă çынсемшĕн ырă юлташ е шанчăклă тус пекех хаклă. Поэмăна пĕрре е иккĕ вулатăн, килĕшекен юрра – кашни кунах юрлатăн.

Тата çакна та палăртса хăварар. 1997 çул – Анатолий Кибеч утмăл тултарнă çул. Куртăмăр ĕнтĕ: поэтăн ку таранччен ĕçĕ-хĕлĕ пирки те халăхăмăра пĕлтермелли, пĕтĕмлетсе калаçмалли çук мар, унăн ыран валли йышăнса хунă каçалăкĕ те шутсăр анлă. Пысăк ĕçпе, пысăк шухăшпа пурăнать этем. Эппин, уяв ячĕпе чунтан саламлар ăна, ырлăхпа сывлăх сунар, вăл пирĕн культурăшăн питĕ те кирлĕ çын пулни çинчен тата тепĕр хут пĕлтерер. Çапла пĕрлехи ĕçпе, пĕрлехи ăнтăлупа ӳсĕмленсе пытăр сумлă халăхăмăр сăмахĕн сулăмлă та çулăмлă ӳнерĕ. Ан иксĕлтĕр талантлă юлташăмăрăн сăмах вĕçевĕ!

**Юрий СЕМЕНТЕР**

## АНАТОЛИЙ КИБЕЧ КĔНЕКИСЕМ:

1. Эстетическое воспитание детей по месту жительства. Чебоксары, 1972.

2. Формирование мировоззрения школьников в процессе художественной деятельности. Чебоксары, 1974.

3. Искусство песенного края. Чебоксары, 1974.

4. Сакăр çул вĕренмелли чăваш шкулĕн программи. Музыка. I – III классем валли. Шупашкар, 1976.

5. Программы чувашской восьмилетней школы. Музыка. 4 – 7 классы. Чебоксары, 1976.

6. Праздники песни Чувашии. Чебоксары, 1977.

7. Народность эстетического воспитания в педагогической мысли России XVIII – XIX вв. Горький, 1988.

8. Некоторые проблемы подготовки учителя музыки в современных условиях. Чебоксары, 1989.

9. Пурнăç кĕнеки. Шупашкар, 1991.

10. Народность эстетического воспитания в наследии передовых русских педагогов второй половины XIX века и просветителей народов России. Чебоксары, 1992.

11. Пурнăç çулĕ такăр мар. Шупашкар, 1995.

12. Юратнă юрăсем. Шупашкар, 1995.

13. Чăваш пулма çăмăл мар. Шупашкар, 1996.

# ТУПМАЛЛИ
## ТЕЛЕЙ АЛĂ ÇУПСА ТĂНĂ ЧУХ ЮРЛАМА, ТАШЛАМА ПИТ АВАН


Шурă Шупашкар . . . . 4
Ĕмĕр сакки сарлака . . . . 5
Телей, телей . . . . 6
Пурнăç çулĕ такăр мар . . . . 7
Тăван ялăм . . . . 8
Кăвик кăвакарчăн . . . . 9
Пирĕн мĕншĕн кулянас? . . . . 10
Чечняри чăваш каччи . . . . 11
Уяр, уяр . . . . 12
Çумра тăван пулмарĕ . . . . 13
Амазонка . . . . 14
Чи хакли . . . . 15
Ача çуртĕнче . . . . 16
Тăван хуламăр . . . . 17
Эпĕ – роза чечекĕ . . . . 18
Кĕсменсĕр кимĕ . . . . 19
Юрату вальсĕ . . . . 20
Афган юрри . . . . 21
Юратусăр телей çук . . . . 22
Çитмĕл икĕ сехет . . . . 23
Ватлăхра пĕрле пуласчĕ . . . . 24
Ман çăлтăрăм . . . . 25
Ўкĕнў . . . . 26
Савăнса пурнас килет . . . . 27
Сар хĕвел шевли . . . . 28
Куриччен курас килет . . . . 30
Тунсăх юрă . . . . 31
Туртса илнĕ юрату . . . . 32
Туй юрри . . . . 33
Ан шăт, курăк, çул çине . . . . 35
Ман юрату . . . . 36
Тĕрĕк çамрăкĕсен юрри . . . . 37
Улăп евĕр çĕкленер . . . . 38

## КĔВĔЛЕМЕН ЮРĂСЕМ

Виçĕ вăйпа виç хăват . . . . . . . . . . 40
Мухтав юрри . . . . . . . . . . 43
Умра пурнăç çиçет . . . . . . . . . . 44
Наркăмăшлă мăкăнь . . . . . . . . . . 45
Ăмăрткайăк пулса эп çĕклентĕм . . . . . . . . . . 46
Аллăмри çыру . . . . . . . . . . 47
Вĕссе килчĕ шăнкăрч çуркунне . . . . . . . . . . 48
Пурăннинчен пахи çук . . . . . . . . . . 49
Ăста эсир, юратнă ывăлсем . . . . . . . . . . 50
Шурăмпуç ташласа çывхарсан . . . . . . . . . . 51
Кулса тăтăр уйăх . . . . . . . . . . 52
Сармантейĕн сар чăххи . . . . . . . . . . 53
Хĕллехи юрату . . . . . . . . . . 54
Италирен килнĕ хăна юрри . . . . . . . . . . 55
Юрату хăвачĕ . . . . . . . . . . 57
Чăваш çулĕ . . . . . . . . . . 58
Ватăлма та вăхăт çук . . . . . . . . . . 59
Йăл кулса илем те . . . . . . . . . . 60
Хĕрарăм, эрех тата юрату . . . . . . . . . . 61
Мана темшĕн сивĕ . . . . . . . . . . 62
Мăшăр тени мĕн тени . . . . . . . . . . 63
Хамăр кил асран тухмарĕ . . . . . . . . . . 64
Кăвар çинчи ташă . . . . . . . . . . 65
Сисеймерĕм ĕмĕр иртнине . . . . . . . . . . 66

## ПРОЗĂЛЛА СĂВĂСЕМ

Юратуран вăйли çук . . . . . . . . . . 68
Чыса упрама пĕлмелле . . . . . . . . . . 79
Куç илеме килĕштерет . . . . . . . . . . 91
Тĕнче тилхепи – этем аллинче . . . . . . . . . . 108
Чăвашшăн чăвашах шанчăклăрах . . . . . . . . . . 130
Юрий Сементер. Сăмах вĕçевĕ . . . . . . . . . . 155
Анатолий Кибеч кĕнекисем . . . . . . . . . . 164

Çак кĕнекене кăларма пулăшакансене:
Чăвашкредитпромбанка (пуçлăхĕ **В. В. Гурьев**);
Чăваш республикин перекет банкне (пуçлăхĕ **В. Н. Александров**);
“Клинкер” фирмăна (пуçлăхĕ **В. Г. Петрушов**);
“Меркурий” фирмăна (пуçлăхĕ **Ю. А. Алексеев**);
“Модуль” фирмăна (пуçлăхĕ **А. Н. Львов**);
“Приватсервис” фирмăна (пуçлăхĕ **В. А. Игнатьев**);
**Ю. А. Тарасов** предпринимателе чунтан-чĕререн тав тăватăп, ырлăх-сывлăх сунатăп.

АВТОР

**Анатолий Ильич**
**КИБЕЧ**

**Хĕç тумалли хурçă**
**Булатная сталь**

Редактор **Ю. С. Семендер**
Худ. редактор **И. П. Михайлова**
Тех. редактор **Г. Р. Евлампьева**

**ЛР 21217 от 07.05.97 г.**

Подписано в печать 27.06.97. Фор. изд-ия 70 × 108 / 32. Бумага офсетная. Печать офсетная. Усл. п. л. 7,35. Уч.-изд. л. 7,75. Тир. 5000 экз. Заказ № 1117.

428019, г. Чебоксары, типография № 1,
пр. И. Яковлева, 15.

8000=

Ытанпа танлаштарнине ырламастӑп.
Ман хӗҫ тумалли хурҫӑ пулас килет.